*Кибеч*

# ЦИВИЛЬСКИНЧИ ЦИРЮЛЬНИК

## Повесть

Ҫакӑ вӑл тахҫанах пулса иртнӗ. Унтанпа икҫӗр ҫул та ҫитрӗ пуль... Пурпӗрех сӑмах-юмахӗ паянхи кун та лӑпланмасть, асаттесем аса илтерсех тӑраççӗ, меллӗ вӑхӑт тупӑнсанах ҫамрӑксене каласа параççӗ. Эпӗ те ҫак халапа пӗрре ҫеҫ илтмен. Кашниех хӑй курнӑ пекех каласа паратчӗ. Хӑйсем вара аслашшӗсенчен илтсе юлнӑ.

Те чӑнах пулнӑ, те пулман та – калама пултараймастӑп. Хам курман. Мӗн илтнине каласа парасшӑн эпӗ те сире. Пӗчӗк чухне юмах вырӑнне хурса кӑна итлеттӗмччӗ. Халӗ вара ун пек мар. Вунсаккӑрмӗш ӗмӗр вӗҫӗнчи Раççейре пурӑнӑҫ мӗнлерех майлашӑнса пыни ҫинчен вулакаласа пӗлнӗ хыççӑн асаттесен халапӗнче те чӑнлӑх пур пек туйӑнать. Ҫавӑнпа сӗнсе пӑхас терӗм те ӗнтӗ сире ҫак хайлава. Вуласа пӑхӑр эппин.

* * *

Паян кӗпӗрне хули кӗрлесе кӑна тӑрать. Ҫулталӑк хушши кӗтнӗ ярмӑркка пуҫланнӑ-ҫке. Ӑҫтан кӑна килсе ҫитмен пулӗ ҫынсем. Тӗрлӗ халӑх тумӗпе ҫӳрекенсем те туллиех, вырӑссем те, тутарсем те, чӑвашсем те, ҫармӑссем те...

Лавккисем те речӗ-речӗпех, алӑ вӗççӗн сутакансем пирки калаҫмӑпӑр та. Мӗн кӑна сӗнмеççӗ пуль. Ҫапла вара пӗрре пӑхсан, сутакансен йышӗ туянаканнисенчен те ытларах пек туйӑнать. Карусельсем те темиҫе. Каччӑсем хӗрӗсене ярӑнтараççӗ, ачи-пӑчи те савӑнать. Акӑ инҫех мар яка та вӑрӑм шалча ҫине хӑпаракансем ӑмӑртаççӗ. Пӗрин, ав, вӗҫне ҫитме нумай та юлманччӗ, тытӑнса тӑраймарӗ, хуллен аялалла шуса анчӗ. Акӑ тепри малтан кӗпине, пушмакне хывса хучӗ, шӑлавар пӗççине тавӑрчӗ, вара тин ал тупанне сурса йӗпетсе шалча ҫине хӑпарма тытӑнчӗ. Сӑлтавӗ пурах ҫав. Шалча вӗҫне парне ҫакнӑ. Ҫавна ҫитсе илмелле...

Юнашарах тата тепӗр пысӑк ушкӑн пухӑнса тӑнӑ. Кулаççӗ, савӑнаççӗ, камит кӑтартакансене шӑтарас пек пӑхаççӗ. Кӑшкӑрашса илекенсем те пур, вылякансене пулӑшасшӑн паллах..

Акӑ, пӗри чаршав хыҫӗнчен хӑмаран ҫапса тунӑ ҫӳллӗ вырӑна тухрӗ те хӑй калаҫӑвне пуҫларӗ:

– Паян пирĕн пата инçетре пурăнакан улпут килмелле-ха. Курманни нумай пулать. Пĕрмаях ют çĕршыв тăрăх ярăнса çӳрет. Темле кăмăлпа килет ĕнтĕ, те ырăпа, те усалпа. Ирпе вăрансан малтан хăш ури çине пусрĕ-ши?

Çав самантра чаршав хыçĕнче шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ.

– Акă, çитрĕ те пулмалла, – тесе айккинерех кайса тăчĕ хресчен рольне выляканни.

Чăнах та, чаршав хыçĕнчен улпут тухса тăчĕ. Ют çĕршыв тумĕпе, уринче шурă чăлхапа пушмак, пуçĕнче кăтралатнă парик, те француз, те нимĕç – пĕлме çук.

– Ви вонен зи, мужики! – кăшкăрса ячĕ улпут.

– Тархасшăн вон! тесе ан хăвала-ха, ырă улпутăмăр. Ун пек калама, тен, айăпăмăр та çук.

– Болван, мĕн эсĕ мана пачах та ăнланмастăн-им. Ялта мĕнле пурăнкалатăр тесе ыйтатăп эпĕ.

– Пурăнасси ĕнтĕ... Сывах-ха, аванах-ха: пĕр урараn тепĕр ура çине сиккелесе, çичĕ киле пĕр  пуртă пур, пилĕк кил валли – пĕр кĕреçе.

– Мĕн пакăлтататăн эсĕ, ниепле те ăнланса илмелле мар сана.

Хресчен куракансем патнелле пăрăнчĕ те:

– Ку пирĕн улпут пачах катăлса кайнă пулмалла, вырăсла та мана пуçланă, – терĕ. Лешсем ахăлтатсах кулса илчĕç

– Тыр-пул мĕнлерех тата кăçал? – ыйтрĕ улпут.

– Питĕ аван, ваше благороди: йăранпа йăран хушши пĕр кун каймалăх, пучахпа пучах хушши – кăшкăрсан та илтĕнмест, кĕлтепе кĕлте хушши – пĕр çухрăм.

– Апла эппин тырă аванах ӳснĕ, сутсан укçа та пулĕ-ха.

Çак сăмахсене илтсен куракансем татах та хытăрах кулса ячĕç. Хуçапа хресчен хушшинче ăнлану çуккишĕн улпутнех айăпларĕç. Сăмахпа мар ĕнтĕ, кулăшпа. Шăпах çакăншăн ĕçлеççĕ те ĕнтĕ камит кăтартакансем, шăпах çакă илĕртет те ĕнтĕ куракансене. Тăрăхласа кулни вăл тепĕр чухне сăмахпа сивĕленинчен те вăйлăрах иккен. Пурнăç йывăррине пăхма-сăрах хавхалану туйăмĕ çуратать. Тен, çавна пулах хура халăх чунĕ яланах чĕрĕ; шӳтпе, кулăшпа туслăранах мар-ши?

«Эй,  халăх! Итле мана!» – кăшкăрса ячĕ пĕри сасартăк. Полицмейстер иккен. Вăл килсе çитнĕ. Пĕччен мар. Унпа пĕрле тата темиçе çын. Пурте йăлтăркка тӳмеллĕ тумпа, хĕçпе. «Итлĕр! Сире чаплăран та чаплă хыпар пĕлтеретĕп... Камит кăтартакансем, чарăнăр-ха эсир! Итлĕр хăлхăрсене тăратса. Кĕçех кунта Его Величество Император килсе çитмелле!»

Çак сăмахсене илтсен пурте шăпланчĕç, пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç.

– Пулма пултараймасть. Вăл питĕ инçе вĕт, Петербургра пурăнать. Ан ĕненĕр ăна, суять вăл! – кăшкăрчĕ пĕри.

– Çук, тĕрĕссине калатăп. Пирĕн патша кĕпĕрнесем тăрăх çӳреме тухнă. Паян вара пире те чыс турĕ. Атьăр-ха ăна тивĕçлипе кĕтсе илер, хамăр кĕпĕрне ятне ӳкерер мар.

Акă пĕр япăх тумланнă арçын мала тухса тăчĕ. Çарранах, йĕмми те çурăк. Чалăшшăн пăхкаласа илчĕ те хăй сăмахне пуçларĕ:

– Чăннипе кала-ха эсĕ, пирĕн патша кам вара? Кама пуççапмалла? Халăхра темле сăмах та çӳрет, хăшне ĕненмелле-ши?

– Пирĕн патша – Пĕрремĕш Павел.

– Чим-ха, леш Кĕтерне патшана хирĕç пăлхав пуçараканни шăпах çавăн ашшĕ марччĕ пуль. Улпутсене тустараканни, хресченсене ирĕке кăлараканни, Виççĕмĕш Петĕр ятли.

– Мĕн кирлĕ мара перкелешсе тăратăн эсĕ, ниме тăман тунката. Эсĕ калаканни вăл нимĕнле патша та пулман. Пугачев пулнă вăл, хăйне Петĕр патша тесе суйса çӳрекенскер.

– Эсĕ тата ăçтан пĕлетĕн? Тен, чăн-чăн патшах пулнă?

– Ахальтен пуçне касман ĕнтĕ унне... Ну çитĕ. Мĕн санпа пакăлтатса тăмалла çак, çĕтĕк ыйткалаканпа. Кайса тăр хыçала. Патша куçне ан курăннă пул.

Пĕр хуралçи хăвăрттăн утса пычĕ те çĕтĕк тумлă арçынна çавăтса кайрĕ.

– Ан чарăр-ха, манăн та патшана курас килет, – илтĕнчĕ пăшăрхануллă сасă.

Полицмейстер сулланса тăракан ӳсĕрсене те асăрхарĕ, айккинелле илсе кайма хушрĕ. Унтан вара йĕрке тума тытăнчĕ, çăпаталлисене хыçалти рете тăма хушрĕ, чи мала хулари паллă çынсене, купцасене тăратса тухрĕ. Енчен те патша: «Мĕнле пурăнатăр?» – тесе ыйтсан, пурин те пĕр харăс: «Питĕ лайăх!» – тесе кăшкăрмалла терĕ. – «Турă сыхлатăр! Енчен те патшана çиллентерсен вара, пĕтрĕмĕр. Петербургран ыррине кĕтмелли çук. Астăвăр! Патша килнине курсанах чĕркуççи çине ларăр та пуçа чикĕр».

Акă инçетрен шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ. Çынсем икĕ енне тăрса тухрĕç. Полицейскисем тата нумайăн пырса çитрĕç, çынсем хушшине тăчĕç те йĕри-тавралла тимлĕн пăхкаласа илчĕç. Акă хăй çыннисемпе пĕрле архиепископ курăнса кайрĕ. Икĕ полицейски трон йăтса тухрĕç, умне вăрăм кавир сарчĕç. Шăнкăрав сасси çывхарса пынăçемĕн чиркӳ чанĕсем янăрама пуçларĕç. Пурте патшана кĕтсе пĕр еннелле пăхаççĕ.

Ҫӑнах та, Пӗрремӗш Павел курӑнса кайрӗ. Пурте чӗркуҫленсе ларчӗҫ. Архиепископ кӑна ура ҫинче. Патша трон патне пырса тӑрать. Ун хыҫӗнче канцлерпа губернатор тата темиҫе чиновник. Ҫынсем пуҫне чикнӗ пулсан та патша ҫине пӑхма пикенеҫҫӗ. Пӗрремӗш хут кураҫҫӗ вӗт.

Раҫҫейре «патша» сӑмахран пысӑкрах пӗлтерӗшли урӑх ҫук та пулӗ. Ҫакна илтсенех ахаль ҫын пуҫӗнче темле питӗ вӑйлӑ та ӑслӑ ҫын сӑнарӗ ҫуралать. Патша вӗт-ха. Пӗтӗм ҫӗршыва алӑра тытакан хӑват.

Халӗ ӗнтӗ Раҫҫей патши куҫ умӗнчех: лутраскер, пысӑк та ҫаврака куҫлӑ, каҫӑр сӑмсаллӑ, тӗксӗм сӑнлӑ, пачах та славян ҫынни евӗрлӗ мар, тӗттӗм симӗс мундирпе, ылтӑн пек йӑлтӑртататакан тӳмисем икӗ ретпе ларса тухнӑ, кӑнтарса тӑракан ҫухавийӗ хӗрлӗ сукнаран, пуҫӗнче виҫӗ кӗтеслӗ хура шлепке.

Архиепископ самай пысӑк турӑша икӗ аллипе тытса хӑй сӑмахне каларӗ те виҫӗ хутчен хӗрес хыврӗ. Лешӗ шлепкине хыврӗ те турӑша чуптуса илчӗ. Ак тамаша, патшан ҫӳҫӗ ҫукпа пӗрех. Шакла пуҫлӑранах-и тен, ҫамки те питӗ пысӑккӑн курӑнать. Пӗрремӗш Павел ҫынсем патнелле ҫавӑрӑнса тӑчӗ те аллипе кӑтартса ура ҫине тӑма хушрӗ. Дворянсем, купцасем, офицерсем: «Турӑ! Патшана упра!» – тесе юрласа ячӗҫ. Унтан ҫак паллӑ юрра ҫунат панӑ ҫӗре ыттисем те хутшӑнчӗҫ. Мӑнаҫлӑ янӑракан кӗвӗ пӗтӗм тавралӑха сарӑлчӗ, чылай ҫыннӑн чӗрине ҫӳҫентерсе илчӗ. Юрӑ вӗҫленсен патша умне губернатор пырса тӑчӗ.

– О, аслӑ та чыслӑ Патшамӑр! Эсир пирӗн кӗпӗрнене килсе курма кӑмӑл тунишӗн эпир пурте чунтан-чӗререн савӑнатпӑр. Сире ҫакӑнта курма май пурри пирӗншӗн калама ҫук пысӑк чыс тесе шутлатпӑр. Пирӗн патӑрта хӑнара пулнӑ вӑхӑтра Сирӗн кӑмӑла никам та хуҫмӗ, лӑпкӑлӑхпа канӑҫа пӑсма хӑяймӗ. Пуҫ кӑшӑлӗ илемлетсе тӑракан хӑватлӑ Патшамӑр, Эсир пирӗншӗн яланлӑхах атте вырӑнне пулӑр!

– Ҫак сӑмахсене тӳрӗ кӑмӑлпа калани пирки манӑн иккӗленӳ ҫук. Ҫапла калаҫнине кашни дворянинранах илтетӗп. Ырӑ кӑмӑлне кӑтартма ӳркенмеҫҫӗ. Анчах та паян тӳрӗ кӑмӑллӑ пулни ҫеҫ ҫителӗксӗр. Паян Раҫҫее парӑнса ӗҫлени, эпӗ хушнине йӗркеллӗ туса пыни кирлӗ. Ҫавна пысӑка хурса хаклатӑп, – терӗ хӑйӑлтатса тухакан сасӑпа император. Сӑмахсене тӑсарах калаҫать. «Р» сасса вара пачах та калаймасть. Ҫавӑнпах-и, тен, вӑл каланине итлеме пит кӑмӑллах та мар. Хӑш-пӗр сӑмахсем вара кулӑшларах та илтӗнеҫҫӗ. Апла пулин те патша сӑмахӗ вӗт. Вӑл хаклӑ. Вӑл калани яланах тӗрӗс.

Акă, Павел патша хăй умĕнче тăракан çынсем çинелле пăхса илчĕ. Ун пысăк куçĕсем пĕр çынна асăрхарĕç пулмалла. Чăнах та, инçех мар питĕ капăр тумлă вельможа тăрать. Ют çĕршывран килнĕскер пулас.

– Ку господин кам пулать вара? – ыйтрĕ патша губернатортан паçăр камит кăтартакан çамрăк арçын çине тĕллесе кăтартса. Çынсем те çавăнталла пăхса илчĕç.

– Паллаймарăм-ха. Тен, вăл пĕлет? – терĕ губернатор полицмейстер çине пăхса.

– Ваше высокоблагородие, палламастăп эпĕ ăна. Таçтан килнĕскер вăл. Чим-ха, халĕ тата унччен курнă çын пекех туйăна пуçларĕ.

– Кунта килме хушăр-ха ăна, – сĕнчĕ патша трон çине вырнаçса ларса.

Полицмейстер арçын патне чупса пычĕ те император хушнине пĕлтерчĕ. Лешĕ Павел патша патне çывхарчĕ те чĕркуçленсе ларчĕ.

– Аслă Патшамăр, мĕне пула айăпа кĕтĕм-ши? – пуçларĕ сăмахне çамрăк арçын.

– Çук, çук, айăпа пула мар... Ура çине тăрăр та калăр. Кун пек тумтире ăçтан тупрăр вара? Парикĕ те питĕ пахаскер.

– Парикне ăна хамах майлаштарнă-ха. Мундирне те хамах çĕленĕ.

– Кам пулатăн вара эсĕ, ăçтан?

– Çӳç касакан тата çĕвĕç эпĕ. Иван Айдаров теççĕ.

– Ăçтан вара эсĕ? – хутшăнчĕ калаçăва губернатор. – Мĕншĕн пĕлместĕп?

– Кунтан мар эпĕ, Çĕрпӳрен, урăхла каласан, Цивильскинчен.

– Ак тамаша, унта та çакăн пек тумпа çӳреççĕ-и вара? Ятарласах çĕлемерĕн пуль те, – ыйтрĕ губернатор.

– Çапла, çапла, Аслă Патшамăр килнĕ ятпа çĕлерĕм, – тавçăрса илчĕ Иван Айдаров.

– Ав мĕнле тĕлĕнтермĕш! Миçе кун хушши ĕнтĕ кĕпĕрнесем тăрăх çӳретĕп, кун пеккине пĕрремĕш хут куртăм. Ман указа пурнăçлакан çын кунта та пур иккен. Пăхăр-ха эсир, чăн-чăн Европа çынни тăрать. Ăçта вара вăл çав хула? Ячĕ мĕнле терĕр-ха?

– Пур ун пек пĕчĕк хула, Цивильск ятлăскер, – пĕлтерчĕ губернатор.

– Апла эппин эсĕ Цивильск цирюльникĕ пулатăн.

– Ваше благородие, эсир каланине ăнланаймарăм-ха. Цирюльник тени...

– Çавна та пӗлместӗн, – чарчӗ Айдарова губернатор. – Патшапа калаçса намăс курса ан тăр-ха... Çӳç касакан тени пулать вăл. Европăра çапла калаççӗ.

– Каçарăр мана, инçе тухса çӳремен çынна. Цивильскинче апла каламаççӗ те...

– Çак çын мана темшӗн Гатчинăри сухал хыракана аса илтерет,– терӗ патша. – Сăнран та каснă-лартнă çавăн пекех. Канцлер, пăх-ха эсӗ ун çине, тӗрӗссинех калатăп пуль тетӗп.

Ют çӗршыв тумӗ тăхăннă канцлер авăрлă куçлăх тытрӗ те Айдаров çине тимлӗн пăхса илчӗ. Унтан патша енне çаврăнса тăчӗ те: «Ваше Величество, питӗ тӗрӗс калатăр, сирӗн куçăр суймасть», – терӗ.

– Апла пулсан ман указа итлӗр. Паянтан Иван Айдарова Атăл тăрăхӗнчи аслă цирюльнике лартатăп. Малашне чиркӳ çыннисемпе хресченсемсӗр пуçне пурин те урăхла тумпа çӳремелле. Мундирсем французсен пек, çӳççем пруссаксен пек пулмалла. Çак ӗçе йӗркелесе пыма сана шанса паратăп. Енчен те чăрмав кӳрекенсем пулсан, тӳрех губернатора пӗлтер, – хушрӗ император.

– Пулăшма яланах хатӗр! – аларӗ кăшкăрсах губернатор.

Цирюльник пăрăнса утма тăчӗ. Çав хушăра ун патне губернатор пычӗ те хăлхаран тем пăшăлтатса пӗлтерчӗ. Айдаров тепӗр хут çаврăнса тăчӗ.

– Çавăнпа пӗрлех тата сана çӗр ят, урăхла каласан, çӗр хресчен парнелетӗп, – хушса хучӗ Пӗрремӗш Павел.

Çакна вара ыттисемшӗн калама çук пысăк тӗлӗнтермӗш тесен те юрать. Патша ырă кăмăллă çын иккенне хăй куçӗпех курчӗç. Лешӗ те тӗрӗс турӗ. Раççейри йӗркесене тӗпрен улăштарас тӗллевпе патша указ та кăларнăччӗ. Анчах салтаксене, чиновниксене, дворянсене урăхла тумпа çӳретесси пурнăçа кӗрсе пымасть-ха. Патша указне пăхăнни Петербургпа Мускавра кăна палăрать. Урăх çӗрте вара унчченхи йӗркесемех хуçаланаççӗ.

– О, ырă та тараватлă Патшамăр! Сире тав тума сăмахăм та çитес çук. Ирӗк парсамăр мана аллăра чуптума, – ыйтрӗ чӗркуçленсе ларса аслă цирюльник. Патша аллине тăсрӗ. Лешӗ ăна чуптуса илчӗ те тăчӗ. Юрать-ха, патша умӗнче мӗн тумаллине губернатор аса илтерчӗ. Атту тӳрех тăрса утнă пулсан... Çак самантра губернатор та кăмăллă пулни сисӗнчӗ. Вăл Айдарова аллипе кăтартса çакăнтах юлма хушрӗ. Лешӗ вара кăшт айккинерех кайса тăчӗ. Губернатор хăй сăмахне пуçларӗ:

– Аслă Патшамăр! Эпир паян чăннипех те телейлĕ çынсем. Енчен те Эсир пирĕн парнесене илме кăмăл тусан, телейĕмĕр пирĕн татах та пысăкрах пулĕччĕ.

Çав хушăра икĕ арçын патша умне шурă тĕслĕ ăйăр пырса тăратрĕç. Çакна курсан лешĕ ура çине тăчĕ те питĕ тимлĕн пăхма тытăнчĕ. Лаши вара, чăнах та, калама çук тĕреклĕ те илемлĕскер. Пуçне ухса тăрать.

– Çакă ăйăр ăмăртусенче яланах пĕрремĕш вырăна тухнă. Халĕ вăл Сире пулать. Вăйлă та чăхăмсăр лаша вырăс патшине яланах ырă çĕре кăна илсе çитертĕр, пулăшса пытăр, – терĕ губернатор.

– Лаша мĕнлине эпĕ те кăштах чухлатăп. Ку вара пăхма чăнах та питĕ лайăхскер. Ыранах тĕрĕслесе пăхăп. Хĕвел тухнă-тухманах утланса ларăп та... Салтаксене парада илсе тухма ан манăр тата. Ăна эпĕ çак лаша çинче йышăнăп.

Ăйăра айккинелле илсе кайнă хыççăн губернатор хăй сăмахне малалла тăсрĕ:

– Халĕ вара Раççей хыснине вăй парса тăракан купцасем сăмах илеççĕ. Мĕнпе тĕлĕнтерĕç-ши вĕсем хамăра сыхлакан Патшамăра.

Мала вырăс купци тухса тăчĕ. Аллинче сăсар тирĕнчен çĕленĕ кĕрĕк.

– Пурне те парăнтаракан хăватлă Патшамăр! – пуçларĕ сăмахне вырăс купци. – Йышăнсамăр çак парнене хĕвел сăнлă арăму валли. Çак кĕрĕк уншăн яланах ăшă кăмака вырăнне пултăр, хĕллехи сивĕ кунсенче те тухса çӳреме май туса патăр. Тата ăна виçĕ ывăл çуратса панăшăн пирĕнтен тав сăмахĕ калăр. Александр, Константин, Николай – виççĕшĕ те чаплă, виççĕшĕ те Раççей хăватне, Раççей чысне çĕклекенсем пулччăр.

Павел патша чаплă кĕрĕке илет те канцлера тыттарать. Лешĕ хыçалалла парать. Патша аллине тăсать. Купца хăвăрт чĕркуçленсе ларать те Павел аллине чуптуса илет. Ура çине тăрсан айккинелле пăрăнать.

Патша умне тутар купци тухса тăрать. Аллинче ылтăн çиппе тĕрлесе илемлетнĕ халат.

– О, Аслă Патшамăр! Çакă парне Сире Раççейре тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсем пуррине аса илтертĕр. Пулсамччĕ эсир çавсемшĕн пуриншĕн те ашшĕ вырăнне. Вара Раççейре кăмăлсăр çынсем сахалрах пулĕç...

Чăваш купци те кунтах. Вăл питĕ илемлĕ алшăлли илсе килнĕ.

– Шанчăклă Патшамăр! Йышăнсамăр çак пĕчĕкçĕ парнене.

Ирпеле çакăнпа шăлăнсан Сирĕн хĕвел пек çиçсе тăракан сăн-питĕр яланах паянхи пекех пулĕ, сывлăх та нумайлăха пырĕ. Авалхи пăлхарсен йăлипе хулпуççи урлă çыхса яма ирĕк парсамăр...

Купцасем черетпех тăрса тухнă. Кашнин аллинче паха парне. Çармăс купци патшана акăш тĕкĕнчен тунă минтер пачĕ. Вăл пуç ыратнине чарать, çывăрнă чух ырă тĕлĕксем кăна кăтартать иккен.

Ирçе купци вара тăшман пенĕ сăнăпа ухă йĕппинчен сыхлакан лаша ашăкĕ парнелерĕ. Пушкăрт купци йĕнер пачĕ, вотяк купци – сунара çӳремелли пăшал.

Губернатор тимлĕн пăхса тăчĕ, патша кăмăлĕ мĕнлереххине пĕлме тăрăшрĕ. Лешĕ кăштах кулкаласа илнĕ чухне кĕпĕрне пуçлăхĕ те савăнăçне пытараймарĕ. Купцасем аптрамарĕç. Парнисем япăх мар. Акă патша пăшалне пеме хатĕрленнĕ пек тытса çынсем çинелле тĕллерĕ. Хăранипе пĕрисем çĕр çине выртрĕç, теприсем чупса тарма пикенчĕç. Император ахăлтатсах кулса ячĕ. Ун хыççăн ыттисем те пĕрпĕрин çине пăхса кулкаласа илчĕç.

– Кунти купцасем те чăн-чăн Раççей купцисемех иккен. Пурсăра та сывлăх сунатăп, ĕçĕрсем ăнса пыччăр. Раççей хыснин шăпи пĕтĕмпех сирĕнтен килет. Халĕ вара ман хам халăхăм мĕнле пурăннине пĕлес килет. Мĕнле пурăнатăр? – ыйтрĕ Пĕрремĕш Павел.

Никам та сас памарĕ. Губернатор полицмейстер çине пăхса илчĕ те: «Мĕн шыв сыпнă пек тăратăр? Калăр!» – терĕ.

– Аванах-ха! – кăшкăрчĕç пĕр темиçе çын.

– Улпутсем кӳрентермеççĕ-и, иртĕхмеççĕ-и? – пĕлме тăрăшрĕ патша.

– Çу-ук!

– Апла пулин те...

Павел аллине сулса илчĕ. Çав самантра пĕр полицейски пысăках мар ещĕк йăтса пычĕ.

– Акă, курăр! Эпир ăна çак лаптăкри хӳме çумне çакатпăр. Эсир вара хăвăр мĕн шутланине, мĕн ыйтнине çырса пĕлтерме пултаратăр. Аслă шухăшсем, ырă сĕнӳсем пулсан тата та лайăхрахчĕ, – сĕнчĕ император.

Ку сăмах вара чăннипех те тĕлĕнтерсех ячĕ. Нихăçан пулман япала. Кунта, кĕпĕрнере, пĕр-пĕр улпута е чиновнике хирĕçлесе сăмах каласан... Чăт вара. Паян акă çырса пĕлтерме те май пур.

Пĕр тĕлĕнтермĕш çын чавсипе тĕрткелешсех мала тухрĕ те: «Эсĕ чăн-чăн патшах-и вара? Пĕртте ĕненес килмест. Каллех хăвна

хăв патша тесе çӳрекенскер мар-ши эсĕ? Улпутсем пирки те...»

Каласа пĕтерме памарĕç. Иккĕн чупса пычĕç те силлесе тăратрĕç, айккинелле сĕтĕре пуçларĕç.

– Ан тивĕр ăна, – терĕ патша. – Хăй сăмахне каласа пĕтертĕр. Мĕн каламаллине кала, ан хăра. Сан патшу тискер çын мар.

– Чăн-чăн патша пулсан пăхăр укçа та пулин параймăн-ши?

– Мĕншĕн пăхăр, кĕмĕлне те хĕрхенмĕп, – терĕ те арçын умне çутă укçа пăрахрĕ. Лешĕ ăна хăвăрт аллине илчĕ те шăлĕпе çырта-çырта тĕрĕслесе пăхрĕ. – Ман парне ку çеç пулмĕ-ха. Паянтан барщинăна виçĕ куна кăна хăваратăп. Хресченсене çĕрсĕрех сутассине те чаратăп. Указ ман çавăн пек.

Хыçаларах тăракансем патша мĕн каланине тавçăрса та илеймерĕç пулас. Ним чĕнмесĕр тăчĕç. Унтан чылайăшĕ чĕркуçленсе ларчĕç те тав тума тытăнчĕç.

– Тавах сана, ырă патшамăр. Хресчен хутне кĕнĕшĕн сана Турă сыхлатăр!

Леш тĕлĕнтермĕш çын ташлама тытăнчĕ. Малта тăракан улпутсем патне пырса витлесе илчĕ, кукиш кăтартма та хăрамарĕ. Юрать-ха полицейски чарчĕ, айккинелле хăваларĕ. Анчах вăл мĕн каланине патша илтрĕ ĕнтĕ.

– Ырă çыннăм, сан ырлăху хресченшĕн хуйхă кăна пулса тухĕ. Турă та, Патша та пирĕнтен инçе. Улпут чăпăркки вара яланах юнашар. Аттемĕр Патша, сан хăвăн та пурнăçу ырăпа вĕçленессĕн туйăнмасть. Хăвна япăх тăвакансем те...

– Кăшкăртăр ĕнтĕ. Ухмахсемшĕн саккун çук. Эпĕ вара Раççейре йĕрке тăватăпах. Енчен те хам сăмахăма пурнăçлаймасан манăн ӳтĕм урапа айĕнче пултăр. Урапа йĕрĕсем чăпăркка вырăнне пулччăр! – вĕçлерĕ сăмахне хĕрсе кайнă Павел патша.

– Хаклă хăнасем, çулăр вăрăм пулчĕ. Ывăнтăр та пуль. Кăштах канса илмелле мар-ши сирĕн? – сĕнчĕ губернатор юрлакансене аллипе паллă парса. Лешсем тӳрех: «Нумай çул пурăнăр! Нумай çул пурăнăр!», – тесе юрласа ячĕç. Патша свити вырăнтан тапранчĕ...

* * *

Тĕттĕм каç. Сан вăрттăнлăхна пĕлсе пĕтерме çук, нумай куратăн, нумай пĕлетĕн. Çавна шута илсен çутă кун вăл нимех те мар, вăрттăнлăхпа пуян тĕттĕм каçа хатĕрленнĕ вăхăт кăна.

Паянхи каç та çаплах: пĕриншĕн – савăнăç, тепришĕн – куляну. Аслă цирюльникшĕн мĕнле-ши? Ăна паян калама çук пысăк ĕç шанса панă. Ун император умĕнче кĕпĕрне чысне упраса хăвармалла. Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ. Патша килнĕ ятпа губернатор ыран бал ирттерет. Пурин те çĕнĕлле тăхăнса пымалла. Костюмсем те, париксем те Европăри пек пулмалла. Вăхăчĕ вара питĕ сахал юлнă. Пĕр талăкран та чакнă. Заказсем нумай. Çавна шута илсех-и, тен, Айдарова пулăшас ĕçе губернатор полицмейстера хушнă. Унăн цирюльник ыйтнине пурне те тупса памалла. Пулать вĕт-ха çавăн пекки, тепĕр чух тата пысăк начальникĕн те ахаль çынна пăхăнма тивет. Çӳç касакан е çĕвĕçĕ ахаль чух никамах та мар. Паян вара вĕсем чи кирлĕ çынсем. Çак хулана император килнине никам та астумасть. Çитменнине тата ку пуçлăх пачах урăхласкер: кивĕ йăласене сивĕлет. Кĕпĕрне пуçлăхĕсем çакăн пирки унчченех илтнĕ-ха, анчах пит çинех тăман. Чылайăшĕн париксем те çук, мундирсем те çĕнĕ фасонпа мар. Халĕ вара кунта ĕç вĕллери пек вĕресе тăрать. Пĕрисем кăтралатнă париксем тăваççĕ, теприсем тумтир çĕлеççĕ. Кĕпĕрнери ăстасене пурне те пĕр çĕре пухнă. Икĕ енче икĕ пӳлĕм, Айдаровпа полицмейстер вара варринчи пӳлĕмре, ĕçлекенсене кăтартусем, сĕнӳсем параççĕ. Аслă цирюльник хăй те пӳлĕмсене кĕре-кĕре тухать.

Акă полицейски васкаса кĕчĕ те рапорт пачĕ:

– Господин полицмейстер! Пĕлтерме ирĕк парсамăр.

– Часрах кала.

– Император чарăнса тăнă çуртра çуртасене сӳнтерчĕç. Его Величество çывăрма выртрĕ.

– Апла-тăк, хулан та çывăрма выртмалла. Квартальнăйсене калăр, пур çĕрте те йĕрке пултăр. Кам та кам шăплăха пăсать – чĕрĕ хулăпа çунтарăр. Хулара мĕн пулса иртнине пĕлтерсех тăрăр.

– Так точно! – терĕ те полицейски тухса кайрĕ.

Акă, пĕр пӳлĕмĕнчен çĕвĕçĕ симĕс тĕслĕ мундир илсе тухрĕ те пӳлĕм варринчи пысăк сĕтел çине сарса хучĕ. Айдаров çĕввисене тĕрĕслесе пăхрĕ.

– Ку кам валли вара? – ыйтрĕ полицмейстер.

– Соболев графăн вăл, – хуравларĕ çĕвĕçĕ. – Эполетсене çĕлемелли кăна юлчĕ. Анчах вĕсене илсе килсе паман вĕт-ха.

– Вĕсене ыран та лартма пулĕ-ха. Халĕ тепĕр мундир çĕлеме тытăн, – хушрĕ Айдаров. – Кăна вара çавăнта вешалка çине çак.

Çав хушăра пӳртумĕнче шăв-шав çĕкленчĕ. Алăк хыттăн

уçӑлса кайрӗ. Полицейскисем çӳçӗсене сапаласа янӑ хӗрачасене вӑйпах тӗке-тӗке кӗртсе тӑратрӗç, хӑшне-пӗрне чышкаласа та илчӗç. Макӑракансем те пур. Уйрӑмах чӑваш кӗпи тӑхӑннӑ хуп-хура çӳçлӗскер куçне пӗр вӗçӗмсӗр шӑла-шӑла илет.

– Шӑпланӑр! – кӑшкӑрса тӑратрӗ полицмейстер. – Император çывӑрать! Шӑплӑха пӑсма юрамасть. Çавӑрӑнса тӑрӑр стена патнелле!

– Мӗн тӑватӑр вара эсир пирӗнпе? – ыйтрӗ пӗри чӗтрекен сасӑпа. – Анне, анне... Мӗн тӑватӑр-ха эсир?

– Чарӑнӑр! Ыйтусем пама ан хӑйнӑ пулӑр. Макӑрма та кирлӗ мар. Çӳçӗрсене кӑна касса илетпӗр.

Çак сӑмахсем хыççӑн хӗрсем тата хытӑрах макӑрма тытӑнчӗç. Алӑк патнелле туртӑнакансем те пулчӗç. Анчах вӗсене ним хӗрхенмесӗр нухайккапа çунтарса илчӗç.

– Мӗнле-ха капла? Çӳссӗр пире кам юратӗ? Каччӑсем мӗн калӗç? – илтӗнчӗç сасӑсем.

Аслӑ цирюльник хӗрсен çӳçне пӑхса тухрӗ. Хура çӳçли патӗнче чарӑнса тӑчӗ те:

– Каланӑ вӗт сире сарӑ çӳçлисене илсе килмелле тесе. Кун пек хури кирлӗ мар, – терӗ.

– Тӗттӗм чух кушаксем вӗсем пурте пӗр тӗслӗн курӑнаççӗ,– терӗ пӗр полицейски.

– Çутӑрах тӗслисенне пуринне те касӑр, – хушрӗ Айдаров.

Вара парик тӑвакансем кашниех хӑйне валли вӑрӑм çӳç касса илчӗç. Хӗрсем тата хытӑрах макӑрма тытӑнчӗç.

– Ну, çитӗ сире. Çӳç касни пуç касни мар. Татах ӳсет, – терӗ полицмейстер.

– Халӗ кусемпе мӗн тумалла? – ыйтрӗ пӗри.

– Кусемпе-и?.. Патша салтакӗсем патне илсе кайӑр та... Вӗсене пирӗнтен хаклӑ парне пултӑр. Савӑнччӑр вӗсем.

Çак самантра полицейски чупса кӗчӗ. Аран сывлать.

– Мӗн пулнӑ? Кала часрах! – хушрӗ полицмейстер.

– Ваше благороди! Скворцов купца хупахӗнче арçынсем çапӑçса кайнӑ. Ниепле те чарма çук. Халӗ вара пӗрне-пӗри урамра кӳпкеççӗ. Сире чӗнме ячӗç. Карета кунтах.

– Вӗсене-и... Атя! Кайрӑмӑр. Кӑтартӑпӑр-ха вӗсене, – тесе тухса кайрӗç.

– Хӗвелпи! – васкаса пычӗ леш хӗрача патне Айдаров, çепӗççӗн ыталаса илчӗ.

– Ванькка, эсӗ мӗнле майпа кунта лекнӗ вара? Сассунтан кӑна палларӑм. Тумна пӑхсан... Ниепле те тавçӑрса илейместӗп, мӗне пӗлтерет вара ку?

– Хӑв пирки кала-ха эсӗ. Мӗнле кӗтмен çӗртен çакланнӑ

вара эсӗ çаксем аллине? Пирӗн ял кунтан самай инçе вӗт-ха.

– Сана пулах ӗнтӗ, Ванькка, сана пулах. Яланхи пекех вырсарникун яла пырасса кӗтрӗм. Пымарӑн. Вара эпӗ Çӗрпӗве кайсан тӑванусенчен ыйтса пӗлтӗм. Камит кӑтартса çӳрекенсемпе тухса кайнӑ терӗç. Шалт тӗлӗнтӗм, нихӑçан курман-илтмен япала.

– Хам та шутламанччӗ. Пӗррехинче скоморохсем пырса урамрах камит кӑтартрӗç. Çӑвара карсах пӑхса тӑтӑм.

– Камсем тетӗн?

– Скоморохсем. Хӑйсене çапла калаççӗ вӗсем. Тепӗр кунне çавсем пирӗн пата пычӗç те арçын парикӗпе кивелнӗ тумтирне тӳрлетсе пама ыйтрӗç. Атте тыткаласа пӑхрӗ те: «Тен, çакӑнпа аппаланса лариччен çӗнӗрен çӗлемелле мар-и?» – терӗ. Лешсем килӗшрӗç. Вара эпир аттепе иксӗмӗр çакна çӗлесе патӑмӑр, парикне те юсарӑмӑр, – пӑхса илчӗ Ванькка хӑй тӑхӑннӑ мундир çине.

– Мӗншӗн кун пек шупӑрпа вара эсӗ?

– Шупӑр мар вӑл, мундир теççӗ. Çӗлесе пӗтерсен хам та тӑхӑнса пӑхрӑм. «Ку тумпа эсӗ патша ывӑлӗ пекех», – терӗ мана атте. Кӗтмен çӗртенех лешсен пуçлӑхӗ аттене ывӑлна пирӗнпе яр-ха тесе тархаслама пуçларӗ. Пире шӑпах çакӑн пек çын кирлӗ тет. Атте аптраса ӳкрӗ, ман çине пӑха-пӑха илет, вырӑсла та ӑстах мар вӗт-ха вӑл тет.

– Хӑв вара мӗскер? – чӑтса тӑраймарӗ Хӗвелпи.

– Малтан кӑмӑл та пурччӗ пек. Анчах хам чӑваш пулнине аса илсен лӑплантӑм. Лешӗ хӑйӗннех перет, пире шӑпах вырӑсла япӑхрах пӗлекен çын кирлӗ, мӗн каламаллине хамӑр вӗрентетпӗр, улпут пек калаçтарӑпӑр тет. Çак сӑмахсем хыççӑн атте килӗшрӗ: «Кӑштах тӗнче курса çӳресе куçне уçтӑр эппин», – терӗ.

– Ав мӗнле иккен. Эпӗ вара ухмах пуçӑмпа пачах урӑхла шутланӑ, тепӗр хӗре юратса пӑрахрӗ пуль тенӗ.

– Мӗскер эсӗ, Хӗвелпи, – тесе Ванькка пикене çепӗççӗн ыталаса илчӗ. – Мӗнле майпа кунта-ха эсӗ ман чӗкеçӗм, ӗненес те килмест.

Вара Хӗвелпи йӗркипех каласа пачӗ. Юратнӑ каччи камит кӑтартакансемпе тухса кайнине пӗлсен шалт аптраса ӳкет, пуçра темле шухӑш та явӑçма тытӑнать. Канӑç паманни, пал-лах, унчченхиех, Ванькка ялтан тухса кайнӑ хыççӑн çурални. Таврари паллӑ çӗвӗç ывӑлӗ кӗске вӑхӑтрах хула каччи пулса тӑрать, тумӗпе те, калаçӑвӗпе те. Хӗвелпи вара çаплипех ял хӗрӗ кӑна. Апла пулин те юрату вӑл питӗ тӗлӗнтермӗш япала, чӗрене те ыраттарать, пуçа та çавӑрать, хӑюллӑх та çуратать.

Ашшӗ кӗпӗрне ярмӑрккине кайма хатӗрленнине курсан Хӗвелпи хӑйне илме йӑлӑнать, Ванькка на курма май килмӗши тесех ӗнтӗ. Ярмӑрккара камит кӑтартаҫҫӗ тенине унччен те илтнӗччӗ-ха вӑл. Ашшӗ килӗшет.

– Каҫа хирӗҫ хула хӗррине ҫитнӗччӗ, кӗртмерӗҫ патша килнӗ тесе. Вара ҫӗр каҫма пӗр киле вырнаҫрӑмӑр. Ҫывӑрма тесе майлашӑнса выртнӑччӗ кӑна, полицинчен персе ҫитрӗҫ. Кил хуҫин те хӗр пурччӗ, ҫавӑн вырӑнне илсе килчӗҫ. Атте хирӗҫ тӑма хӑтланчӗ, анчах ӗҫ тухмарӗ, хӗнесе хӑварчӗҫ ӑна. Халӗ вара кунта тӑратӑп. Юрать-ха, эсӗ тупӑнтӑн, – вӗҫлерӗ сӑмахне Хӗвелпи Ваньк ка мундирне аллипе шӑла-шӑла илсе. – Сассуна илтсен тимлӗнрех пӑхрӑм та чутах кӑшкӑрса ярат тӑм. Кун пек тумпа курасса шутламанччӗ.

– Камит кӑтартнӑ чухне тӑхӑннӑччӗ те... Патша свити килсе ҫитрӗ те хывма та ӗлкӗреймерӗм. Тен, ҫакӑ вырӑнлӑ та пулчӗ. Мана патша асӑрхарӗ те хӑй патне чӗнсе илчӗ. Халӗ вара эпӗ кӗпӗрнери тӗп цирюльник шутланатӑп.

– Мӗн шутланатӑп тетӗн?

– Цирюльник. Ҫӳҫ касакана, париксем тӑвакана ҫапла калаҫҫӗ.

– Ав мӗнле иккен.

– Кунта халӗ пурте эпӗ хушнине кӑна тӑваҫҫӗ.

– Нивушлӗ патшана куртӑн вара?

– Халӗ сана курнӑ пекех ҫывӑх тӑтӑм. Ун аллине те чуптурӑм. Йӗрки ҫапла. Юрать-ха, губернатор вӑхӑтра систерчӗ. Халӗ вара... Ӗҫ мӗнле вӗресе тӑнине хӑвах куратӑн, парик тумалла, мундир ҫӗлемелле.

Сӑмах ҫине тенӗ пекех пӗр ӑсти Айдаров патне хӑй тунӑ парике илсе пычӗ. Лешӗ ҫавӑркаласа пӑхрӗ те ун ӗҫне ырларӗ, йывӑҫ ҫупа сӗрсе пудра сапма хушрӗ. Маҫтӑр парикне йӑтса юнашар пӳлӗме кӗрсе ҫухалчӗ.

– Чим-ха... Ман шутпа ҫак ӗҫре эсӗ те пулӑшу парассӑн туйӑнать. Тӗрлеме ӑста вӗт-ха эсӗ.

– Тӗрлемен мар ӗнтӗ.

– Питӗ лайӑх. Ман мундире пӑх-ха. Хӗрлӗ ҫуха ҫинче тӗрӗ пулсан аванрах мар-и?

– Паллах, илемлӗрех курӑнатчӗ.

– Апла-тӑк сан халех ӗҫе пуҫӑнмалла.

– Пушӑ алӑпах мар ӗнтӗ, ҫиппипе йӗппи кирлӗ. Кунта сарӑ тӗс вырӑнлӑ. Ылтӑн ҫип пулсан тата та лайӑхрахчӗ.

Алӑк яри уҫӑлчӗ те полицмейстер кӗрсе тӑчӗ. Ҫиллине чарайманнипе вӑрҫа-вӑрҫа илчӗ. Сӑнран та улшӑннӑ, тарӑннӑн сывлать.

– Ҫак каҫа яланах аса илӗҫ-ха вӗсем. Мӗн ыррине кӗтмелли пур ҫав сыснасенчен. Ӗҫсе лартаҫҫӗ те ҫапӑҫма пуҫлаҫҫӗ. Пӗрне-пӗри паллаканскерсемех вӗт-ха. Ыран вара каҫарттарма чупаҫҫӗ. Вообщем, кӑтартрӑм вӗсене сабантуй. Лайӑх тӑна кӗртрӗм-ха. Кунта мӗнле тата?

– Аванах. Анчах халех ылтӑн ҫип кирлӗ.

– Ку тата мӗн тума?

– Мундир ҫухине тӗрлесе илемлетме.

– Эй, хӑшӗ пур унта? – аллине ҫупса илчӗ полицмейстер. Пӗр полицейски кӗрсе тӑчӗ. – Халех Скворцов купца патне вӗҫтер. Ылтӑн ҫип тупса патӑр. Унсӑрӑн ыранах хупахне хупса лартатпӑр, – терӗ.

Лешӗ васкаса тухса кайрӗ. Полицмейстер кӑштах лӑпланчӗ те Хӗвелпи ҫине пӑхса илчӗ.

– Ку мӗн ятлӑ-ха тата?

– Хӗвелпи теҫҫӗ ӑна, – хуравларӗ Иван Айдаров.

– Мӗнле ят вара вӑл? Мӗне пӗлтерет?

– Чӑвашла хӗвел пике тени пулать.

– Ав мӗнле иккен. Ятне тӗрӗсех панӑ курӑнать.

Полицмейстер татах темскер каласшӑнччӗ, аслӑ повар кӗрсе тӑни чарчӗ. Лешӗ тӳрех полицмейстер патне пычӗ те хут листи тыттарчӗ.

– Ку мӗн япала тата?

– Ыранхи апат валли кирлисене ҫыртӑм.

– Ак тамаша, ӑҫтан тупса пӗтермелле вара кусене? Акӑлчан сӑри, шурӑ эрехӗ Францирен... Хамӑр эрех мӗнрен япӑх вара?

– Канцлер ҫапла хушать.

– Ӗне какайӗ, пӑру ашӗ, така пусмалла... Окорок, грудинка, кӑркка, кӑвакал, чӑх, чӑх чӗппи, хир чӑххи, пӑчӑр, ӑсан, сазан, ҫӗкӗ, пылӗ тата: шурри, сарри, хӑмӑрри, карасли... Нивушлӗ хатӗрлемен вара эсир?

– Пурте ҫук ҫав. Малтанах мӗнле пӗлсе тӑрас-ха ман. Уйрӑмах кайӑк ашӗ пирки. Тытмалла вӗт-ха вӗсене. Ку ман ӗҫ-и вара? Эпӗ пӗҫерекенни кӑна.

– Ну юрӗ. Пурне те ура ҫине тӑратӑп. Патшана мӗнле кӗтсе илмеллине пӗлччӗр.

– Астӑвӑр, кӑнтӑрлахи апата тӑваттӑ валли хатӗрлемелле. Васкӑр,– тесе повар тухса кайрӗ.Каллех васкаса татса памалли ыйтусем. Губернаторӗ ав шак та патшапа пӗрле ҫӳрет. Полицмейстерӗн вара тар юхтарма тивет. Паян пушшех йывӑр. Ахальтен каламан пуль ҫав: «Патша ҫумӗнче мухтавпа вилӗм юнашарах», – тесе. Тухма тесе тӑнӑччӗ, анчах алӑк уҫӑлчӗ те канцлер кӗрсе тӑчӗ. Унпа пӗрле сыхлаканӗ. «Мӗн шыраса ҫӳрет-

ши ёнтӗ ҫӗр хута? Лӑпланса ҫывӑрасчӗ. Ҫук вӗт, пур ҫӗре те сӑмсине чикмелле», – вӑрҫса илчӗ ӑшра полицмейстер повар панӑ хута алӑк патӗнче тӑракан полицейскине тыттарса. Лешӗ хӑвӑрт тухса кайрӗ.

– Ваше высокоблагородие! Ёҫсем йӗркеллех пыраҫҫӗ, – пӗлтерчӗ полицмейстер честь парса. – Ҫӗвӗҫсем те, цирюльниксем те канма пӗлмесӗр тӑрӑшаҫҫӗ.

– Кунта мӗн тӑваҫҫӗ вара? Калаҫу мӗн пирки пырать?

– Ыранхи бала хатӗрленетпӗр, мундирсем ҫӗлетпӗр, париксем тӑватпӑр. Пруссири пек пултӑр тетпӗр.

– Ав мӗнле иккен. Тӑрӑшӑр, тӑрӑшӑр. Прусси йӗрки – лайӑх йӗрке. Эпӗ кунта пикесем суйлаҫҫӗ тесе.

– Сирӗн кӑмӑлӑр пирӗншӗн саккун. Ак кӗҫех тепӗр ушкӑн илсе килмелле. Ун чух вара хӑшӗ килӗшӗ, ҫавӑ сирӗн пулӗ. Нимле чару та ҫук.

– Кунти хӗрсене тутанса пӑхманччӗ-ха.

Алӑкран михӗ йӑтнӑ полицейски кӗрсе тӑчӗ те ҫамка ҫинчи тарне аллипе шӑлса илчӗ. Васкавлӑ ӗҫ вӗт.

– Хӗрсем ӑҫта вара? – ыйтрӗ полицмейстер.

– Вӗсемпе ҫапӑҫса ҫӳресе ывӑнтӑмӑр ёнтӗ. Макӑраҫҫӗ, чӑрмалаҫҫӗ. Тарса пытанас текенсем те пур. Вообщем, ҫӳҫӗсене хамӑрах касрӑмӑр. Акӑ, пӗр михӗ. Кунпа ҫитет пуль ёнтӗ, – терӗ те миххе Айдаров умне пырса лартрӗ. Лешӗ савӑннипе аллисене сӑтӑркаласа илчӗ те миххе йӑтса тепӗр пӳлӗме васкарӗ. Полицейски пуҫлӑхӗнчен ирӗк ыйтса тухрӗ.

– Ӑҫта-ха сан хӗрӳсем? – ыйтрӗ канцлер полицмейстер ҫине шӑтарас пек пӑхса.

– Ӑнӑҫсӑр пулчӗ курӑнать. Ҫивӗтсене кӑна тултарса килнӗ. Хӗрсене вара килех хӑварнӑ.

– Мана ҫивӗт мар, хӗр кирлӗ. Халех тупса парӑр! Ҫакӑ та юрать, – тӗллесе кӑтартрӗ аллипе Хӗвелпи еннелле ҫавӑрӑнса. – Пӑхма аптрамасть. Ҫуса тасатӑр та – ман пата...

Полицмейстер Хӗвелпи патне пычӗ те аллинчен ярса тытрӗ, ҫавӑтса кайма пикенчӗ.

– Ваня! Тух-ха часрах! – кӑшкӑрса ячӗ хӑраса ӳкнӗ Хӗвелпи.

Лешӗ сиксе тухрӗ те полицмейстер умне пырса тӑчӗ. Мӗн пулса иртнине тӳрех тавҫӑрса илчӗ: «Ӑна ан тӗкӗнӗр! Вӑл ман савни, ҫураҫнӑ хӗр», – терӗ.

Ҫакна илтсен канцлер пушшех хӑпартланса кайрӗ. Айдаров ҫине йӗрӗнчӗклӗн пӑхса илчӗ те:

– Сан тутусем тутлӑ ҫимӗҫе чухлаҫҫӗ курӑнать, ҫураҫнӑ хӗр эппин. Апла-тӑк, пӗрремӗш каҫ прави мана пултӑр. Илсе кайӑр ӑна.

– Çук! Ирĕк памастăп, – терĕ Айдаров Хĕвелпипе полицмейстер хушшине кĕрсе тăрса.

– Эс мĕскер, ухмаха ермерĕн пуль те? Кама хирĕç тăнине те тавçăрса илейместĕн. Пăх-ха куçна лайăххрах чарса. Кам умĕнче тăратăн эсĕ? Çакă чураçă хĕршĕн хăв пуçна ан çи ĕнтĕ, – вăрçса илчĕ полицмейстер.

– Вăл манăн. Вырăс патши çапла хушрĕ. Енчен те ăна тĕкĕнсен ыранах патшана пĕлтерĕп,– çине тăчĕ Айдаров Иван.

– Ха-ха-ха! – кулса ячĕ канцлер. – Мĕнле айван çын иккен эсĕ цирюльник. Енчен те патша Раççей пусĕ шутлансан, эпĕ вара – мăйĕ. Ăçталла пăрас тетĕп, çавăнталла çавăратăп. Пуççăр пуçлăх вăл сирĕн.

– Намăссăр нимĕç, мĕнле çапла калаçма хăятăн. Патшапа пĕрле çӳретĕн, ун çăкăрне çиетĕн, çав хушăрах япăх сăмах саратăн, – терĕ цирюльник.

Айдаров хăйне çапла хăюллăн тытасса полицмейстер пачах та кĕтмен. Калаçу ытла чĕрре ан кĕрсе кайтăр тесе цирюльнике вăрçса тăратрĕ, чарăнма хушрĕ. Канцлер вара пӳлĕм варрине пырса тăчĕ те вĕрентме пуçларĕ:

– Айванккасем эсир. Йытă çури пек суккăрсем. Раççей хуçисем хăвăр тесе шутлатăр-ши. Патшасем те тилхепене хăй тĕллĕн тытса пыракансем мар. Юрать-ха, нимĕççем пур. Çавсене тав тăвăр. Вĕсем пулмасан пачах пĕтсе ларатăр ак. Ку патша та çавах. Суккăр вăл. Раççей аран сывланине сисмест. Флота пĕтерчĕ, арми те вăйлах мар.

– Пăхăр-ха, мĕнле калаçать вăл. Пире эсĕ хĕрхенни кирлĕ мар. Патшана килĕштерместĕн пулсан, мĕншĕн-ха ун çумĕнче çӳретĕн? Чимĕр-ха, юриех сиен тăвас шухăшпа çыпçăнман-и-ха вăл? Арестлемелле ăна! – терĕ Айдаров.

Ним тума аптраса тăракан полицмейстер пĕрре канцлер çине, тепре цирюльник çине пăхса илчĕ те: «Пусăм çавăрăнса кайрĕ», – терĕ.

Канцлер вара хăйĕннех перет:

– Эпĕ сирĕншĕн тăшман мар. Çак кунсенче нумай куртăм. Иккĕленӳ ман кунран-кун ӳссе пырать. Ку патшапа пĕтетĕр эсир. Ĕмĕчĕ пысăк, ĕçĕ – çук. Айăпли вара пачах та эпĕ мар. Ман умра халь икĕ Раççей. Пĕри Петербургра, тепри кунта. Патша указĕсем кунта çитмен те иккен. Йĕрке тăвакансем веçех улпутсем. Чурасен çĕршывĕнче пурăнатăр эсир. Çакна курса тăма мана та çăмăл мар. Пĕртен-пĕр савăнăçăм та эрехпе хĕрарăм кăна. Чиперкке, атя, кайрăмăр.

Айдаров кĕтмен çĕртен полицмейстер хĕçне туртса кăларчĕ

те: Хӗвелпи патне ан ҫывхарнӑ пул! – терӗ.

– Ах, апла эппин. Мана та хӗҫ парӑр!

Канцлера сыхлакан полицейски хӑй хӗҫне пачӗ. Иккӗшӗ те мундирсене хывса печӗҫ те ҫапӑҫма пуҫларӗҫ. Ячӗшӗн кӑна мар ӗнтӗ, тарӑхсах. Илемпи ниҫта кайса кӗреймест. Сӑлтавӗ те паллӑ. Канцлерӗн ӑсталӑхӗ пысӑкраххи куҫкӗретех. Тен, вӑл унччен темиҫе хут та тытӑҫса курнӑ. Айдаровшӑн вара ҫакӑ пӗрремӗш хут. Ҫитменнине тата канцлер кулкаласа кӑна ҫапӑҫать. Хӑй вӑйне шанать ӗнтӗ. Ҫакӑ Ивана пушшех тарӑхтарса ячӗ. Хӗҫне шӑл ҫыртса хыттӑн сулма пуҫларӗ. Анчах ӗҫ ӑнмарӗ. Ун хӗҫҫи сирпӗнсе кайрӗ. Канцлер вара ҫӗнтерӳҫӗ йӑлипе хӗҫне Айдаров чӗри патне тӗллесе тытрӗ.

– Тархасшӑн, ан вӗлер-ха! – кӑшкӑрса ячӗ Илемпи. – Килӗшетӗп. Илсе кай мана!

– Мӗн калать вӑл? – ыйтрӗ канцлер хӗҫҫине Иван кӑкӑрне хыттӑнрах тӗксе.

– Сана ӗнтӗ вӑл... Нимӗҫ йыттине, – хушса хучӗ чӑвашла Айдаров.

– Эсӗ вара, цирюльник, мундир тӑхӑннӑ пулсан та шпага тытма вӗренсе ҫитеймен-ха. Атя, кайрӑмӑр. Ҫуллахи каҫ ытла та кӗске.

Полицейски Хӗвелпие ҫавӑтса алӑк патнелле илсе пычӗ.

– Каҫар мана тусӑм, каҫар. Эпӗ пачах та айӑплӑ мар, – илтӗнчӗ хурлӑхлӑ хӗрача сасси.

Канцлер та тухса кайрӗ. Айдаров ним тума аптранипе чӗркуҫленсе ларчӗ те чышкисемпе урайне ҫапса илчӗ.

– Мӗнле чӑтса ирттерес-ха ман ҫак мӑшкӑла... Тӗрӗслӗх яланах вӑйли енче. Ҫитменнине тата ют ҫӗршыв ҫынни вӗтха. Кулать вӑл пирӗнтен.

Ҫакӑнти шӑв-шава сиксе тухнӑ маҫтӑрсем веҫех курса тӑнӑ иккен. Полицмейстер вӗсене хӑваласа ячӗ, ӗҫлеме хушрӗ. Ун чунӗ кӑштах ҫемӗҫрӗ пулас, Айдарова лӑплантарма пикенчӗ.

– Тӑр-ха эсӗ, ытлашши ан хуҫӑл. Таврара хӗр сахал-им? Пӗлӗтри ҫӑлтӑрсем пекех йышлӑ. Суйла та суйла. Ку та ниҫтах та каймӗ, сан патнах килӗ.

– Ют ҫын мӑшкӑлӗ чӗрене кӑшлать.

– Тен, ӗҫ ҫапла сиксе тухни япӑхах та мар. Канцлертан унтан тем те кӗтме пулать. Губернатора элеклесе каласа парсан?

Полицейски каялла чупса кӗчӗ. Питӗ хӑраса ӳкнӗскер аран калаҫать.

– Тарчӗ вӑл.

– Кам тарчӗ? – ыйтрӗ полицмейстер.

– Леш хӗрача. Тӗттӗм ҫӗрте асӑрхаса ӗлкӗреймерӗм. Канц-

лер халь ниçта кайса кĕрейми вăрçать, тупса кил тет. Мĕн тăвас-ха ман, ваше благороди?

– Вăт сана, кукамай, Юрьев кунĕ. Инçе кайма пултарайман вăл. Тревога пар та ыттисене çĕкле. Шырăр! Пĕтĕм квартала хупăрласа илĕр. Тупаймасан – персе пăрахатăп!

Лешĕ хăвăрт тухса кайрĕ. Полицмейстер каллех ятлаçма пуçларĕ:

– Веçех сана пула. Тупнă кампа тытăçмаллине. Лешĕ вара император çемйи çумне сухăр пекех çыпçăнса ларнă курăнать. Иккĕленетĕп эпĕ. Патша тăванĕ мар-ши вăл? Калаçура та хăюллă. Тĕрĕс сăмахсем те пур пек.

– Ăçтан пĕлсе пĕтерĕн ĕнтĕ вĕсене? Патша амăшĕ нимĕç хĕрарăмĕ тенине илтнĕччĕ-ха.

– Вăт, вăт... Пăхсах паллă, патша пирĕн пĕртте вырăс çынни пек мар.

– Кăмăлĕ вара аптрамасть. Хресченсене çăмăллăх парасшăн, – терĕ Айдаров.

– Темле çав, вăл хушнине пурнăçлакансем тупăнĕç-ши? Улпут вăл хăйне кирлине тăватех, – терĕ кунти йĕркесне лайăх пĕлекен полицмейстер.

Йăпшăнса кăна кĕрсе тăнă полицейски тем чухлĕ шырасан та таркăна тытайманнине пĕлтерчĕ.

– Мĕшĕлти! Хăвăртрах карета çине лар та Скворцов купца патне вĕçтер, ун хĕрне Маняна лартса кил. Ашшĕ турткалашма пуçласан, патша хушнипе те. Вĕçтер!

Полицейски чупсах тухса кайрĕ. Юнашар пӳлĕмрен пĕри тин çеç çĕлесе пĕтернĕ мундир йăтса тухрĕ те Айдарова тыттарчĕ. Лешĕ çавăркаласа пăхрĕ те:

– Ку кам валличчĕ-ха? – терĕ.

– Полицмейстер господинăн вăл. Тăхăнтарса пăхсан аванччĕ, – терĕ çĕвĕçĕ.

Полицмейстер кивĕ мундирне хыврĕ те çĕннине тăхăнчĕ, тĕкĕр патне пырса тăчĕ. Айдаров хыçалтан пăхса илчĕ, çанăсене турткаласа тĕрĕслерĕ те:

– Ну, мĕн калăр ĕнтĕ, япăх мар вĕт. Эполетсене вырнаçтарсан патшаран та кая мар, – терĕ.

– Кӳлепине пăхсан патшаран та ирттерет пуль, – хушса хучĕ çĕвĕç.

– Çитĕ, çитĕ. Калаçура сыхланулларах пулмалла. Тĕттĕм каç вăл хăлхаллă. Турă пулăштăрах çак кунсене йĕркеллĕ чăтса ирттерме, – мăкăртатса илчĕ çĕнĕ мундир хуçи тумĕпе киленсе.

– Эх, çав канцлер килсе кĕмен пулсан. Мундир çухине

тĕрĕпе илемлетес тенĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ Хĕвелпи те çук, – пăшăрханса илчĕ Айдаров.

– Ухмах эсĕ. Тĕрĕ мĕн вăл? Канцлер аллине лармасан хамăра мĕн кĕтнине чухлатăн-ши эсĕ?

Шăп çак калаçу вăхăтĕнче капăр тумлă Маня Скворцова кĕрсе тăчĕ, пĕр самантлăха шăп тăрсан полицмейстера палласа илчĕ, тĕлĕннипе чăтса тăраймарĕ:

– О-о! Кама куратăп эпĕ! Сергей Лукич, нивушлĕ эсех вара ку? Ниепле те тавçăрса илейместĕп, мĕне пĕлтерет вара ку, ăçта кайма тумланнă? Çитменнине тата çывăрма та памастăр, тутлă ыйхăран вăрататăр... Тунсăхласа та çитрĕним, виçĕмкун кăна курнăччĕ-çке... Ку тата кам? Патша çынни мар пуль те? – ыйтрĕ сасартăк купца хĕрĕ Айдаров çине илĕртӳллĕн пăхса.

– Çук, çук, – сăмах хушма васкарĕ полицмейстер. – Кунти аслă цирюльник вăл.

– Мана Маня Скворцова теççĕ, – тăсрĕ аллине купца хĕрĕ. Цирюльник унăн аллине чуп туса илчĕ те хăй ятне каларĕ. Полицмейстерăн çакна пăхса тăма чăтăмлăх çитмерĕ, васкать вăл. Ыттисене кунтан кайма ыйтрĕ. Лешсем тухсанах Маня Сергей Лукич патне çывхарчĕ те пуçне ун кăкри çине хучĕ.

– Мĕншĕн тунсăх вара эсĕ? Мана та ыталаса чуптумастăн.

– Маня, пĕтĕм шанчăк санра. Маншăн халĕ питĕ йывăр самант сиксе тухрĕ. Эсĕ кăна çăлма пултаратăн.

– Мĕн пирки эсĕ, уçăмлăрах кала-ха?

– Ăнлан мана. Эпĕ сана унчченхи пекех юрататăп. Халĕ сан патшапа пĕрле килнĕ канцлер патне каймалла.

– Мĕн тума вара çĕр хутах?

– Ăна вырăн çинче ачашласа савăнтармалла.

Маня Скворцова тĕлĕннипе куçне чарса пăрахрĕ, пичĕ те сасартăках хĕрелсе кайрĕ.

– Сергей Лукич, мĕн калаçатăр эсир. Е ман хăлхасем урăхла илтрĕç-ши?

– Çук, çук. Тĕрĕсех илтрĕн.

– Апла-тăк çакна мĕнле ăнланмалла тата. Кам вырăнне хуратăр вара эсир мана? Хăвăра парăннă çын тесе ыттисене те хурса пама юрать тетĕр-им? Çук, кĕтсе илеймĕр, – терĕ те Маня алăк патнелле васкарĕ. Сергей Лукич чупса пырса ун çулне пӳлчĕ.

– Тăхта-ха эсĕ, ытлашши хĕрсе ан кай. Калаçу кунта хамăршăн усăллă ĕç пирки пырать. Канцлер питĕ кăмăлсăр çӳрет. Ыран мана мĕн кĕтнине те пĕлме çук. Паян эпĕ полицмейстер, ыран вара... Кăштах шухăшласа пăх-ха эсĕ. Çамрăк

арçынна чипер хĕрарăм ачашлани ытлашши мар ĕнтĕ. Хăй те систерчĕ.

– Çук, эпĕ сансăр пуçне никам ытамĕнче те пулман. Пач палламан çынна юраттарасшăн. Атте пĕлсен пĕтерет вĕт.

– Унтан хăрама кирлĕ мар. Вăл халь пĕтĕмпех ман алăра,– кăтартса илчĕ чышкине Сергей Лукич.

– Мĕне пула вара?

– Паян та чылай пысăк çылăха кĕчĕ вăл. Хупахĕнче патша килнĕ кун та йĕрке çук. Ĕçсе кӳпнисем каллех çапăçса кайнă, урамра шăв-шав пуçланнă. Патша çывăрнă чухне хулара шăплăх пулмалла. Канцлер çапла хушнă. Анчах эпĕ харкашу пуçарса ярас темерĕм, губернатора пĕлтермерĕм. Тен, каламаллаччĕ...

– Мĕскер эсĕ? Çук, кирлĕ мар. Ĕçсем чăнах та чаплах мар иккен. Итле-ха, – икĕ аллипе мундиртен тытса силлесе илчĕ Маня, – кайран мĕн сиксе тухĕ-ха, сивĕнсе каймăпăр-ши?

– Ан хăра, манран ӳпкелешӳ пулмĕ.

– Апла-тăк сăмах парса чупту мана.

Шăпах çаксем ыталашнă вăхăтра юнашар пӳлĕмрен Айдаров тухрĕ те кăшт пăхса тăрсан ытахальтен ӳсĕрсе илчĕ. Маня карт! туртăнса айккинелле пăрăнчĕ.

– Эсĕ-çке ку, аслă цирюльник, – терĕ Сергей Лукич. – Акă кур, пирĕн çăлăнăç çакă ĕнтĕ. Пĕтĕмпех унран килет. Атя, Маняша, ăсатса ярам сана.

– Мундире ылмаштарса тăхăнмалла мар-ши, эполетсăр аплах мар, – терĕ цирюльник.

– А-а... Мансах кайнă, пуçăм та çаврăна пуçланă курăнать.

Полицмейстер мундирне хывнă вăхăтра Маня тĕкĕр патне пырса тăчĕ те çӳçне тӳрлеткелесе илчĕ. Кăмăлсăрри куçĕнченех паллă.

– Каснă лартнă катемпи. Кун пек çӳçпе... Духи те çук.

– Халех майлаштаратпăр, – çапла каласа Айдаров ăна парик хатĕрлекен пӳлĕме илсе кайрĕ. Сергей Лукич çĕнĕ мундире çĕвĕç патне кĕртсе пачĕ те шухăша кайса алăкăнтĕпелĕн уткаласа çӳрерĕ, хăйне хăй ӳпкелешсе илчĕ. Суккăр пулнă вăл, паянччен çӳç мĕнле пысăк пĕлтерĕшлĕ япала иккенне те пĕлмен. Патша килниех куçа уçрĕ. Хĕрарăмшăн паллă-ха, çӳçне кăтралатса майлаштарсан хăй те илемлĕн курăнать. Маня Скворцова та çавах. Сергей Лукич çакна пĕрремĕш хут курнă чухнех асăрханăччĕ. Сăнĕ те мĕне тăрать, хăйĕнчен чылай аслă арăмĕпе танлаштарсан Маня çумĕнче куç тулли илем. Курас килнĕренех полицмейстер сăлтав тупса Скворцовсем патне кĕркелесе тухатчĕ, арăмĕ йывăр чире

кайсан – пушшех. Çакна Маня та сиснĕ ĕнтĕ, каярах арăм пуласса та ĕмĕтленнĕ. Ахальтен мар вăрттăн тĕлпулусене те килĕштернĕ, чĕннĕ çĕре çӳренĕ, савăшу пылакне те тутанса курнă.

Полицмейстер урăххине те сахал мар тĕл пулнă. Вăрăм çӳç вăл теприншĕн куляну тесен те юрать. Ӳсĕр упăшки çивĕтрен ярса тытать те алли ывăниччен ватать. Лешĕн вара ниепле те тарса ӳкме çук.

Çӳç хĕрарăм илемĕ тейĕпĕр, арçыншăн вара? Патша çумĕнчисем пурте тенĕ пекех парикпе. Халĕ тата кунтисен те çи-пуçа улăштармалла.

– Ваше благороди! Сире канцлер хăй патне чĕнет, – илтĕнчĕ пӳлĕме кĕрсе тăнă полицейски сасси. Тарăн шухăша путнă Сергей Лукич ăна асăрхаман та.

– Юрать, халех пырăп. Пĕччен мар. Пĕлтер ăна.

Айдаровпа Маня пӳлĕмрен тухрĕç. Çӳçĕ вара... Мĕнле пысăк ăсталăхпа кăтралатса илемлетнине сăмахпа та каласа параяс çук. Маня пит-куçран та пачах улшăннă. Çак илеме курсан Сергей Лукичĕн чĕри хытах чĕпĕтсе илчĕ, ним хускалмасăр пăхса ларнă пулĕччĕ вăл, анчах васкамалла. Вĕсене канцлер кĕтет. Çавăн аллине ларма тăрăшмалла.

– Ну, Цивильскинчи цирюльник, пултаратăн иккен. Маня, ку çӳçпе ыранхи балра санран илемлĕ хĕрарăм та пулас çук, – пытараймарĕ тĕлĕннине Сергей Лукич.

– Кун пек ăста маçтăра пĕрремĕш хут куратăп, – терĕ Маня. – Пӳрнисенче темле асамлă вăй пурри сисĕнет. Ыран килме юрать-и?

– Манран чару çук, – терĕ цирюльник.

– Апла-тăк аннене те илсе килетĕп.

– Вăт, мĕнле пысăк хак параççĕ сан ĕçе. Кирлĕ çынах эсĕ кунта. Кĕçех сан пата хулари чи чаплă майрасем киле-киле ларĕç. Пурăнма пĕл. Вĕсен аллине ларсан тем тума та пултарăн. Эпир вара кайрăмăр. Кунти ĕçсем аванах-ха. Урăх килмĕп. Ман кăшт çутăлсанах йĕркене тĕрĕслесе тухмалла. Патша та ирех тăрать теççĕ.

Лешсем тухса кайсанах Айдаров хутпа чернил илчĕ те çыру çырма ларчĕ.

* * *

О, вăхăт, вăхăт! Яланах малалла виркĕнетĕн. Сана тытса чаракан вăй çук. Юрать-ха, каçпа ир пур. Кашни кун çĕнĕрен çуралать. Унпа пĕрлех – пирĕн ĕмĕтсем те. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр-пĕрне тĕл пулсан ырă кун сунатпăр, ăнăçлă иртессе

шанатпăр. Хаклă вăхăт вĕт. Иртсе кайнă кун нихăçан та çавăрăнса килмест. Майĕпен йĕрĕ те çухалса пырать. Çĕнни киввине хыçалалла хăвалать.

Кун пахалăхĕ, паллах, çынсенчен хăйсенчен килет, уйрăмах, мĕнле пурăннинчен. Кун йĕркине те çынсемех палăртаççĕ: тавлашаççĕ, мирлешеççĕ, ĕç тăваççĕ. Кашни кунăн хăй шăпи. Вăхăчĕ пирĕнтен килмесен те кун шăпи пирĕн алăра.

Паян губернатор керменĕнче Павел патша паллă çынсене йышăнать. Губернаторпа прокурор та кунтах. Алăк патĕнче çĕнĕ мундир тăхăннă жандарм тăрать. Акă, канцлер умне ĕнер урама çакнă ещĕке пырса лартрĕç. Вара пуçланчĕ. Алăк уçăлчĕ. Тахăшĕ: «Кривцов статски советник!» – тесе кăшкăрчĕ. Шалта тăракан жандарм та çак сăмахсенех каларĕ. Çĕнĕ мундир тăхăннă Кривцов кĕрсе тăчĕ те пуçне тайрĕ.

– Ырă кун пултăр Сире, Ваше Величество! Çирĕп сывлăх сунатăп Сире. Пирĕн кĕпĕрнере çӳреме çулăр такăр пултăр Сире, – терĕ.

– Ырă сăмахшăн тавах. Итлетĕп сире. Ыйтăвăр мĕнлескер?

– Ыйтма килмен эпĕ. Сĕнӳпе килтĕм.

– Кун пекки вара сайра пулать. Ытларах хăйне валли ыйтаççĕ.

– Çук, мана нимех те кирлĕ мар. Раççейри йĕркесем кăна канăç памаççĕ. Çавăншăн пуçăм ыратать. Унта та кунта пăлхав сике-сике тухать. Хресченсем алла сенĕк тытаççĕ, Пугачев пеккисем хыççăн каяççĕ. Нивушлĕ пурнăç йĕркине улăштармалли майсем çуккă вара?

– Мĕншĕн çук пултăр? Анчах кивĕ йăласем такăнтараççĕ. Майра патша та асăрхайман пулас. Ытла савăнăçлă пурăннă вăл. Раççей хысни халь пушах. Улăштармалли, çĕнетмелли паян темĕн чухлех. Тахăшĕнчен тытăнмалла. Мужик те çынах вĕт. Ăна валли те кăштах правасем кирлĕ.

– Тӳрех калатăп, мана тархасшăн элекçĕ вырăнне ан хурăр. Улпутсем сирĕн указа сивĕлеççĕ. Вĕсен хаярлăхĕ вара пĕтĕмпех хресчен çине ӳкет.

– Куратăп-ха йĕрке çуккине, – сассине хытарса каларĕ патша, – пур çĕрте те тирпейсĕрлĕх. Тĕттĕм халăха та пулăшу кирлĕ. Пĕр-пĕр парти интересĕшĕн мар эпĕ, патшалăх пирки шутлатăп. Тĕрĕс мар ĕçпе ыттисем юратнă çын пуличчен, ырă ĕçпе курайман çын пулам. Кĕпĕрнесем тăрăх çӳрени маншăн халĕ питĕ усăллă. Куртăм ĕнтĕ: пурте айăплă, пурте çылăхлă. Япăх халăхпа урăхла пурăнма май та çук иккен. Чăпăрккана алăрах тытмалла. Çарта та йĕрке çук. Офицерсем вырăнта

мар. Килте ларсах вăхăта ирттereççĕ.Салтаксем те тарса çӳреççĕ.

– Питĕ тĕрĕс калатăр Эсир. Çавна пулах икĕ ывăлăма илсе килтĕм. Гатчинăри полка парасшăн вĕсене. Çавăн пирки сирĕнтен ирĕк ыйтасшăн эпĕ. Тивĕçтерме тăрăшăр, ырă Патшамăр, – тархасласах каларĕ Кривцов.

– Ывăлусем миçере вара сан? Пĕчĕкскерсем мар пуль те?

– Çук, çук. Ӳссе çитнĕ вĕсем, тĕреклĕ те вăйлă каччăсем. Вулама-çырма та ăста, йĕнер çинче те çирĕп ларaççĕ.

– Ку вара питĕ лайăх. Теприсем ав пĕчĕклех çара çырăнаççĕ те ашшĕпе пĕрле пурăнсах офицер чинĕ илеççĕ. Çакна паянтан пăрахăçлатăп. Дворянсен те çар службинче тăмалла. Сирĕн ĕçе ырлатăп.

– Кун пеккисем пирĕн татах та пур,– чăтса тăраймарĕ губернатор.– Вĕсем пулăшмасан кунти йĕркене тытса пыма питĕ хĕн. Пăлхавçăсем, вырăс мар халăхсем Раççей сăнне пăсаççĕ.

Прокурор та хăй ĕçне кăтартма тăрăшрĕ.

– Çавсене çăварлăхлама тăрăшатпăр та ĕнтĕ. Çĕпĕрелле ăсататпăр. Сăнчăр сасси лăпланмасть. Апла пулин те вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.

– Пăлхавлă кăмăла ăна тимĕр хулăпа çунтармалла, – сĕнчĕ Павел патша.

– Хута кĕрекенсем те тупăнсах тăраççĕ çав, сăмахран, Радищев йышшисем, – терĕ прокурор.

– Радищевран текех хăрама кирлĕ мар. Тĕрмере ларса кăштах ăсланчĕ пуль.

Çакăн пек калаçу итлекенсене тĕлĕнтерсех ячĕ. Император пуçĕнче темĕн тĕрлĕ шухăш та хĕвĕшет иккен. Ырри те, усалли те пĕрлех. Пĕр сăмахне итлесен вăл çак пăтрашуллă тапхăрта мĕнле те пулин уçăмлăх тупасшăн тăрăшни сисĕнет, çĕнĕ йĕрке çынни пек курăнать. Çав хушăрах унта-кунта сиксе тухакан пăлхавсемшĕн хура халăха айăплать. Япăх халăх валли тимĕр хулă хатĕр тытмалли çинчен пуплет.

Патша ыттисемпе калаçнă чухне Кривцов кунтах тăнине асăрхаман та пулас. Тепĕр хут ун çине пăхса илчĕ те:

– Эсир халĕ те кунтах-çке. Калаçу мĕн пиркиччĕ-ха?–тесе ыйтрĕ.

– Икĕ ывăлне салтака парасси пирки,–аса илтерчĕ канцлер.

– А-а... Юрать, питĕ аван. Çакăншăн сана çĕр çын парнелетĕп.

Кривцов питĕ хĕпĕртенипе хăй мĕнле хăвăрт чĕркуçленсе ларнине те асăрхамарĕ. Урайне çити пуç çапса патшана тав тума тытăнчĕ, ырă сăмахсем каларĕ. Анчах пуçне çĕклемерĕ. Патша çакна хăйне май ăнланчĕ курăнать.

– Сахал тетĕн-им? Апла-тăк икçĕр çын!

Кривцов çаплипех тăмасть. Ыттисем те пĕр-пĕрин çине пăха-пăха илчĕç.

– Сахал тетĕн-ши? Апла пулсан виççĕр çын! – пĕлтерчĕ Павел патша.

Кривцов ура çине тăма васкамасть, çамкине урайне перĕнтерсех пуç çапать.

– Сахал тетĕн-им? – ыйтрĕ император. – Апла-тăк пĕр хресчен те памастăп!

Кривцов хăвăрт сиксе тăчĕ те ним тума аптранипе аллисемпе сулкалашса илчĕ. Питĕнче темле ăнланмалла мар кулă сисĕнчĕ. «Тавах, сана Патша, тавах», – тесе тухса кайрĕ.

– Ухмах! Мĕн чухлĕ панипе çырлахма пĕлмерĕ. Пин çын çинчен шутларĕ-ши? Пурте нумая хапсăнаççĕ, пурте аслă пуласшăн. Раççейре эпĕ кампа калаçатăп, çавă кăна аслă. Паллах, манпа калаçнă вăхăтра кăна. Халĕ теприне чĕнĕр.

– Беловодова мещанка хăйĕн хĕрĕпе! – пĕлтерчĕ алăк патĕнчи жандарм.

Капăр тумлăскерсем иккĕн кĕчĕç те пуç тайрĕç. Амăшĕ сĕтел хушшинче çырса ларакан çине пăхса сăмахне пуçларĕ:

– Ваше величество...

Тавçăруллă нимĕç: «Çук, çук, эпĕ мар», – тесе Пĕрремĕш Павел çине тĕллесе кăтартрĕ.

– Каçарăр, тӳрех паллаймарăм,– терĕ Беловодова.

– Ниепле те аса илеймерĕм-ха, ăçтан вара эсир? – ыйтрĕ губернатор.

– Улатăртан эпĕ. Сăр шывĕ хĕрринчен.

– Юнашар кĕпĕрнерен эппин. Çавăнпа паллаймарăм. Мĕнле ыйтупа вара эсир, Беловодова госпожа.?

– Хамăр патша патне ун йăмăкне илсе килтĕм. Акă вăл, – тĕллесе кăтартрĕ хĕрĕ çине.

– Ку тата мĕне пĕлтерет? – ыйтрĕ тĕлĕнсе Павел патша. Ыттисем те Беловодова çине шăтарас пек пăхса илчĕç.

– Мĕн лăпăртатса çӳретĕр кунта! – Кăшкăрса пăрахрĕ губернатор. – Патша йăмăкĕ ăçтан Улатăра лектĕр?

– Пирĕн патшана Павел Петрович теççĕ мар-и-ха. Апла ун ашшĕ Петĕр ятлă. Çакă тĕрĕсех пулсан...

– Кун пирки нимĕнле иккĕленӳ те çук, – хĕрарăма пӳлсех каласа хучĕ Павел.

– Вăт, вăт. Апла-тăк пурте тĕрĕсех. Шăп та çирĕм тăватă çул каялла паянхи пек çуллахи кун пирĕн килте пĕр паттăр арçын чарăнса тăчĕ. Хăйне Петĕр патша терĕ. Ай! Мĕнлескерччĕ! Ун пекки халь таврара та çук. Шăпах çав Петĕр патша

хӗрӗ тӑрать те ӗнтӗ сирӗн умӑрта. Кӗтерне ятлӑ, – пӑхса илчӗ хӗрӗ ҫине. – Павел Петрович, Сирӗн йӑмӑкӑр пулать ӗнтӗ вӑл.

– Эсир хӑвӑр мӗн каланине кӑштах чухлатӑр-и? Петӗр патша Улатӑра мӗн тума пытӑр-ха? – тӗлӗннине пытараймарӗ губернатор.

– Салтаксемпеччӗ вӑл. Мускава каятпӑр патша тронне ҫӗнсе илме тетчӗ. Ай, мӗнле хӗрӳллӗ арҫынччӗ! Пӑхӑр-ха эсир, мӗнле хӗр парнелесе хӑварчӗ вӑл мана.

Канцлер ним шарламасӑр ларать, Кӗтерне ҫинчен куҫне илмест. Пӗрре ураран пуҫласа вӑрӑм ҫӳҫӗ патне ҫити пӑхса илет, унтан каллех ҫӳлтен аялалла...

– Ку хӗрарӑмӑн ӑс-тӑнӗ пӑтрашӑнса кайман пулӗ те. Илсе кайӑр-ха ӑна кунтан! – хушрӗ губернатор.

– Чимӗр-ха, – терӗ Беловодова, – каласа пӗтерме ирӗк парӑр-ха. Эсир лайӑхрах пӑхса илӗр-ха вӗсем ҫине. Пиччӗшӗпе йӑмӑкӗ пулни сӑнранах паллӑ. Иккӗшӗ те илемлӗ...

– Илем енчен илсен... Чӑнах та, пӗрпеклӗх пур пек, – сасӑ пачӗ прокурор.

– Калатӑп вӗт сире вӗсен ашшӗ Петӗр патша тесе. Эсир вара ӗненместӗр.

– Ҫапах та мӗн ыйтасшӑн вара эсир манран? – терӗ патша.

– Ман шутпа Кӗтернен патша керменӗнче пурӑнмалла. Унпа пӗрле манӑн та, – каласа хучӗ Беловодова пуҫне каҫӑртса. – Улатӑр вӑл патша йӑмӑкӗ пурӑнмалли хула мар ӗнтӗ. Ҫапла мар-и, хӗрӗм?

– Тӗрӗс калатӑн эсӗ, анне. Мана ахаль те Улатӑрта пурте патша хӗрӗ теҫҫӗ. Халӗ вара ҫакна хам та туйса илтӗм. Пиччем, ман халӗ мӗн тӑвас вара: чӗркуҫленсе ларас е юнашар пырса тӑрас? Эсӗ патша пулсан, эпӗ вара кам?

– Паллах юнашар, хӗрӗм; юнашар пырса тӑр!

Пурте патша ҫине пӑхса илчӗҫ. Ытла та тӗлӗнмелле самант, нимӗн калама аптрамалла. Канцлер та нимех те шарламасть, губернатор та хӑяймасть. Лӑпкӑ ларакан император сасартӑк сиксе тӑчӗ те:

– Итлӗр-ха! Пирӗн умра кам тӑрать тетӗр эсир! Хӑйне Петӗр патша тесе ҫӳрекен арҫын вӑл Пугачев пулнӑ. Пӑлхавҫӑ хӗрӗ вӑл! – тӗллерӗ аллипе Катерина ҫинелле хӗрсе кайнӑ Павел.

– Чӗркуҫленӗр халех! – кӑшкӑрса ячӗ прокурор. – Ваше Величество! Ирӗк парсамӑр ҫаксене арестлеме. Ҫӗпӗре ӑсатмалла вӗсене. Эй! Алӑк патӗнчисем! Ӑҫта эсир?!

– Анне! Нивушлӗ ҫапла вара? Мӗншӗн улталаса пурӑннӑ

эсӗ мана? – илтӗнчӗ макӑракан Катерина сасси. Иккӗн чупса пычӗҫ те хӗрарӑмсене алӑран тытса алӑк патнелле кӑтартрӗҫ.

– Хупса лартӑр та сыхлӑр, – хушрӗ прокурор.

Канцлер патшана ют чӗлхепе темскер каларӗ. Кӑштах калаҫса та илчӗҫ.

– Тӑхтӑр-ха, – терӗ Раҫҫей пуҫлӑхӗ, – каҫаратӑп вӗсене. Паҫӑрах каларӑм вӗт тӗттӗм халӑх тем те кӑтартӗ тесе. Сирӗн патшӑр ҫав тери усал ҫын мар ӗнтӗ. Улталаннӑ вӗсем, суккӑрсем.

– Эй, Аслӑ Патшамӑр, тавах Сире, – чӗркуҫленсе ларчӗ Беловодова, ун хыҫҫӑн хӗрӗ те. – Ырӑ кӑмӑлна нихӑҫан та манмӑпӑр.

– Канцлер, эсӗ ячӗсене ҫырса хур-ха. Айванккасем. Шел, кун пек йӑмӑкӑм ҫук ҫав манӑн. Тӑрӑр ӗнтӗ.

– Апла-тӑк туслашӑр эсир, – хӑйӗннех перет Беловодова. – Петербург майрисенчен мӗнрен япӑх вара вӑл?

– Лӑпланӑр. Акӑ кунта губернатор тӑрать. Вӑл сирӗн пурнӑҫа асӑрхасах тӑрӗ. Ыранхи бала чӗнсен те ытлашши мар. Кун пек чиперккене асӑрхаҫҫех ӗнтӗ. Тен, хӑй телейне ҫавӑнта тупӗ.

– Эсир каланӑ пек пултӑр, Павел Петрович, – терӗ кӗпӗрне пуҫлӑхӗ.

– Тавах Сире, ырӑ Патшамӑр. Эпир каяр эппин.

– Ытлашши инҫе мар, тен, калаҫмалли татах тупӑнӗ, – асӑрхаттарчӗ канцлер Кӗтерне ҫине вылявлӑ куҫпа пӑхса илсе.

Ҫакӑнта пулса иртни Пӗрремӗш Павела самаях шухӑша ячӗ. Ура ҫине тӑчӗ те ҫӳллӗ кӗллипе таклаттарса унталла-кунталла уткаласа ҫӳрерӗ. Вӑл мӗн пирки шутланине пӗлме ҫук. Екатерина Беловодова?.. Улатӑртан?..

– Ӗҫсем мӗнлереххине куртӑр пуль, – терӗ патша хӑй вырӑнне кӗрсе ларса. – Тепӗр чух тата Пугачев вилмен пек те туйӑнса каять. Ҫав чӑрсӑр пӑлхавҫӑ пурӑнать вӑл. Хӑй ҫинчен аса илтерсех тӑрать. Мӗнле пике парнелесе хӑварнӑ вӑл? Тен, ывӑлӗсем те темӗн чухлех? Ҫавӑнпа калатӑп та ӗнтӗ армире ҫирӗп йӗрке пулмалла тесе. Ҫӗршыври йӗрке армирен пуҫланать. Салтаксен тумне те улӑштармалла. Илемлӗ мундир салтака хавхалантарать, ун чухнӗнче ҫӗкленӳ туйӑмӗ ҫуратать.

Губернатор калаҫу ӑҫталла пӑрӑннине хӑвӑрт туйса илчӗ. Патша сӑмахӗнче ӳпкелешӳ пурах ҫав. Хӑй указӗ пурнӑҫа кӗменнишӗн пӑшӑрханни те сисӗнет. Сӑмах чӗрре кӗрсе ан кайтӑр тесе губернатор хӑй пуҫларӗ сӑмах:

– Каҫарӑр пире. Чӑнах та айӑплӑ эпир. Тепӗр тесен,

офицерсем хăйсем те васкамаççĕ, генералĕсем те çавах. Паянтан пуçласа вĕсенчен çирĕп ыйтма пуçлăп, – терĕ.

– Ку çеç мар çав. Тумтир çĕлетме ăстасем сахалрах тейĕпĕр. Апатне мĕншĕн япăх çитеретĕр тата? Çакна мĕнле ăнланмалла? Салтаксен шутне чакартăн ĕнтĕ. Чиновниксен, улпутсен шучĕ çавах вĕт. Ĕçĕ курăнмасть. Кĕпĕрне çывăрма юрататъ. Куртăм ĕнтĕ хула мĕнле вăраннине. Малашне сакăр сехет тĕлне пурин те ĕçре пулмалла, шалу хакне кăлармалла.

– Веçех эсир каланă пек пулĕ, Ваше Величество. Тилхепене хытăрах тытма тăрăшăп, – терĕ губернатор.

– Ещĕкре çырусем пур-и унта сан? – ыйтрĕ патша канцлер çине пăхса. Лешĕ пĕр хутне илчĕ те вулама тытăнчĕ: «Патшамăр-атте, сирĕнтен хӳтлĕх кĕтетпĕр. Хута кĕрĕр, тархасшăн. Кунти улпут майри картран тухса кайрĕ. Ним сăлтавсăрах хресченсене хĕнет. Уйрăмах хĕрарăмсене кураймасть. Нумаях пулмасть пĕринне çӳçне сĕвсе илчĕ. Лешĕ вара ухмаха тухса кайрĕ. Ун хутне кĕрекен никам та çук. Прокурорĕ те, сучĕ те ăна хирĕç. Хресченшĕн ниçта та тĕрĕслĕх çук. Хӳтĕлĕр пире, тархасшăн».

– Ăçтан çырни паллă-и вара? – ыйтрĕ Павел.

– Иваново ятлă ялтан, – хуравларĕ канцлер.

– Господа хорошие, кун пирки пĕлетĕр-и эсир? – пăхса илчĕ патша прокурор çине.

– Пĕлетпĕр.

– Апла вара?..

– Хĕрарăмĕ хăй айăплă вăл, улпут майрине хирĕçле сăмахсем каланă, – пĕлтерчĕ прокурор.

– Апла пулсан та тискер ĕçшĕн каçарма юрамасть, явап тыттармалла.

– Вĕсене айăпламалли саккунĕ те çук вĕт-ха.

– Саккун çук тетĕр-и? Паянтан пулĕ, – терĕ патша. – Канцлер, çырса хур-ха. Ун пек ухмахланакансенчен пысăк штраф илмелле. Çĕршыв хыснине усă пултăр. Лешĕ вара çӳççĕр тăрса юлнă хĕрарăма хăй укçипе тытса тăтăр, çемйине пулăштăр.

– Пĕтĕмпех эсир каланă пек пулĕ, Ваше Величество, – хуравларĕ хăйне айăпа кĕнĕ çын пек тыткалакан прокурор.

– Тата мĕн çыраççĕ-ха унта?

Канцлер тепĕр çырăва вуласа пачĕ: «Патша-аттемĕр, пирĕн хӳтĕлевçĕ. Сирĕн пата Куропаткино ялĕнчи хресченсем çыраççĕ. Пирĕншĕн калама çук пысăк хуйхă сиксе тухрĕ. Нумаях пулмасть пирĕн пата кĕпĕрнерен сунарçăсем килсе çитрĕç. Пурте улпутсем, господасем. Кунĕпех мулкачсене, тилĕсене

хăваларĕç. Пирĕн уйсене лашапа таптаса пĕтерчĕç. Çăкăрсăр тăрса юлас хăрушлăх пысăк. Мĕн тумаллине пĕлместпĕр. Воевода патĕнче те пултăмăр – усси çуккă. Кĕпĕрнене те çырса янăччĕ. Нимĕнле хурав та памарĕç. Çав сунарçăсем аркатса тăкнă тырра курсанах куççуль капланса килет. Мĕн тумаллаши пирĕн? Хута кĕрсемĕр, тĕрĕслĕхе тытса пыракан Патшамăр».

– Ку вара пĕтĕмпех сирĕн ĕç, Иосиф Янович, – терĕ Павел губернатора пĕрремĕш хут ятпа чĕнсе. – Ман кунсăр пуçне те йĕрке тумалли çителĕклĕ.

– Çак сунарçăсене ыранах явап тыттарăпăр. Сиен курнă хресченсемпе укçапа татăлччăр, тыррине паччăр.

– Вăт, ку питĕ тĕрĕс сăмах. Мĕнле йăласем?.. Мĕскĕн Руç, Европăран ытла та инçетре тăратăн-çке. Тырă акса ӳстерекенсене те хаклама вĕренсе çитеймерĕмĕр. Чухăнлăх мар, тĕттĕмлĕх, тӳрккеслĕх пĕтерет пире. Вĕрентӳ ĕçĕ мĕнлерех тата?

– Аванах темелле,– рапортлама тытăнчĕ Иосиф Янович,– тăрăшатпăр. Пур хулара та шкулсем пур. Ялсенче вара япăхрах. Халăх вĕренесшĕн мар. Уйрăмах вырăс мар халăх çыннисем, ютйăхсем. Ачисем шкултан туха-туха тараççĕ. Вĕренеймеççĕ, ăс-тăнран та катăк.

Губернатор шухăшне прокурор çирĕплетме тăрăшрĕ.

– Мĕн тума кирлĕ вĕсем, çав ютйăх çыннисем? Хутла пĕлмесĕр те пурăнса ирттерĕç. Тăрăшнин те усси çук, укçатенкĕрен тăкакланни çеç.

– Ну юрĕ. Малалла мĕскер унта?

Канцлер тепĕр çырăвне патшана тыттарчĕ. Лешĕ ним шарламасăр вуласа тухрĕ те: «Ку сире валли иккен», – тесе прокурора пачĕ, сасăпа вулама хушрĕ. Лешĕ вара чĕтрекен сасăпа çапла вуласа пачĕ: «Ваше Величество! Сирĕн пата ниçта кайса кĕрейменнипе çыратăп ĕнтĕ. Кĕпĕрне прокурорĕ манран кивçен тесе вуникĕ пин тенкĕ укçа илчĕ. Унтанпа икĕ çул та иртрĕ ĕнтĕ. Çаплипех тавăрса памасть. Манран çеç мар, ытти купцасенчен те илнĕ теççĕ. Суда парсан та усси пулас çук. Тен, сире итлĕ. Скворцов купца».

Прокурор пиççе çитнĕ улма пек хĕрелсе кайрĕ, пырĕ типсе ларнипе юлашки сăмахĕсене аран вуласа пĕтерчĕ. Губернаторăн та сăмах тупăнмарĕ. Самантлăха çухалсах кайрĕ. Патша ун çине пăхса илчĕ те:

– Çакăн çинчен эсир пĕлнĕ-и? – тесе ыйтрĕ.

– Çук. Пĕрремĕш хут илтетĕп.

– Хăвăр тата мĕн калана пулăттăр? – ыйтрĕ прокурортан

император. – Тен, Скворцов купцана хăйне чĕнсе килмелле мар-и?

– Çук, çук,– тата хытăрах хăраса ӳкрĕ прокурор,– паянах парса тататăп.

– Иосиф Янович, кун пек прокурорпа мĕнле йĕрке тытса пыратăр вара эсир кунта? Взятка илекен прокурора шанма пулать-и? Мĕнле тĕслĕх кăтартать-ха вăл ыттисене? Ăнланмастăп сире, губернатор господин.

– Çылăхсем унччен те пулкаланă-ха ун. Анчах кун пеккине кĕтменччĕ...

Император пысăк куçĕсемпе хаяррăн пăхса илчĕ те ура çине тăчĕ. Унпа пĕрле ыттисем те сиксе тăчĕç.

– Паянтан сире прокурор ĕçĕнчен хăтаратăп! Эсир халĕ ирĕклĕ, кайма пултаратăр! – терĕ хыттăн Раççей хуçи.

– Каçарăр мана, çылăхлă çынна, – терĕ те лешĕ алăк патнелле уттарчĕ.

– Каялла килĕр! – кăшкăрчĕ канцлер. – Патшана пуççапăр! Çĕпĕре ăсатманшăн тав тăвăр!

Лешĕ çавăрăнса тăчĕ те пуçне пĕшкĕртсе:

– Ваше Величество, тавах сире. Эсир йышăннине тĕрĕслĕх вырăнне хуратăп, – терĕ.

– То-то. Халĕ кайма пултаратăр. Парăмсене парса татма ан манăр. Купцасем ярса тытсан ак... Текех прокурор мар вĕт, – терĕ патша.

Темиçе çул хушши кĕпĕрне прокурорĕ пулнă çын нимĕн шарламасăр пуçне чиксе тухса кайрĕ.

– Шаннă вĕт-ха эпĕ ăна. Вăл вара... Вăрçма та сăмахăм çитес çук, – терĕ губернатор.

– Ун пекки вăл кунта çеç мар. Шанчăклă çынсем патша керменĕнче те çукпа пĕрех. Йăпăлтисем нумай, парăнса ĕçлекенсем питĕ сахал. Патша çумĕнче кашниех мĕн те пулин хăйне усăллине шырать. Раççей пуласлăхĕшĕн хыпса çунакансем çук.

– Халĕ вара прокурорсăр мĕнле-ха?

– Ку вăл нимех те мар-ха. Акă тытатпăр та çĕннине суйлатпăр. Халех висĕ çын ятне калăр-ха. Паллах, чи тивĕçлисене, пултаруллисене. Ыттине хăвăрах куратăр ак.

Губернатор шухăша кайрĕ. Çакă пĕтĕмпех кĕтмен çĕртен вĕт. Кам шутланă-ха çапла сиксе тухасса. Веçех çав патша хушнипе урама çакнă ещĕке пула сиксе тухрĕ. Ăшра Скворцов купцана та ятласа илчĕ: «Мĕншĕн-ха тӳрех патша патне çырмалла. Малтан хама пĕлтернĕ пулсан...» Халĕ вара тӳрех висĕ ят тăратмалла.

– Дворянсен пухăвĕнчен – Востриков Федор Петрович, аслă судья Волков Игнатий Романович, тата...

– Тата полицмейстера кĕртĕр, – сĕнчĕ канцлер.

– Юрать, юрать, тата Андронов Сергей Лукич.

Павел патша канцлера кашни ята уйрăм çырса хутне чĕркесе ещĕке пăрахма хушрĕ. Лешĕ çакна тусан пĕр хутне туртса кăларма губернатора хушрĕ.

– Халĕ ĕнтĕ кама прокурора лартасси веçех хăвăртан килет.

Губернатор пĕр хутне туртса кăларчĕ те саркаласа пăхрĕ:

– Андронов Сергей Лукич, – терĕ.

– Пулчĕ те. Халĕ çĕнĕ прокурора саламлар. Чĕнсе кĕртĕр ăна, – хушрĕ патша.

Чĕнсе кĕртекенни алăка уçрĕ те:

– Андронов полицмейстера император патне! – тесе кăшкăрчĕ.

Инçетелле: Полицмейстера! Полицмейстера! – тени сарăлчĕ. Кĕçех хăй те кĕрсе тăчĕ.

– Ваше Величество! Андронов полицмейстер эсир чĕннипе килчĕ. Хулара пурте йĕркеллĕ...

– Çитĕ, çитĕ. Халĕ ĕнтĕ эсир полицмейстер мар,– терĕ патша.

– Мĕне пула айăпа кĕтĕм-ши? Ĕçе яланах йĕркеллĕ туса пыма тăрăшрăм-çке.

– Апла калама нимĕнле сăлтав та çук. Паянтан сире кĕпĕрне прокурорне лартатăп.

Андронов, паллах, çакăн пирки ĕмĕтленме те пултарайман. Халĕ вара... Анчах мĕн каламаллине çапах та тавçăрса илчĕ.

– Мухтавлă самодержец, тавах Сире çакăншăн. Эсир шаннине тӳрре кăларма сăмах паратăп, Раççейри патшалăх тытăмне хӳтĕлеме Турăпа Патша умĕнче тупа тăватăп.

– Тӳрех калатăп, – асăрхаттарчĕ Павел, – власть вăл йĕрке тума кирлĕ вăй. Çакна манас марччĕ. Ĕçре çирĕплĕх пултăр. Халĕ вара саламлатăп сире.

Император аллине тăсрĕ. Андронов чĕркуçленсе ларчĕ те ун аллине чуптурĕ. Унтан ăна губернаторпа канцлер саламларĕç. Патша çĕнĕ прокурора губернаторпа юнашар тăма хушрĕ.

Акă патша патне Варсонофий архиепископ кĕчĕ. Чылай ватăскер. Сухалĕ те, тумĕ те вăрăм. Ăна курсан патша ура çине тăчĕ. Паллах, унпа пĕрле – канцлер та.

– Ваше высокопревосходительство, хисеплĕрен те хисеплĕ Павел Петрович! Раççее ертсе пырас ĕçе ăнăçлă туса пыма сире Турă пулăшса тăтăр, çирĕп сывлăх патăр, сирĕн пурнăçа сыхласа пырса нумай çул пурăнмалăх вăй-хăват кӳтĕр. Христос вĕрентĕвне пăхăнса пырсан пуриншĕн те çăмăллăх пулĕ.

Çак сăмахсене ура çине тăрса итленĕ хыççăн Павел Петрович Варсонофий патне пырса тăчĕ. Лешĕ ун çине виçĕ хутчен хĕрес хыврĕ. Вара патша архиепископ аллине чуп турĕ. Ун хыççăн ыттисем те çавнах туса илчĕç. Варсонофий пурне те пил пачĕ.

– Владыка, сире паçăртанпах кĕтетпĕр. Иртсе ларăр кунтарах, – терĕ губернатор.

– Ваше Величество, Эсир килнĕ ятпа ятарлă кĕлĕ ирттертĕм. Пурте питĕ савăнаççĕ, Сире çирĕп сывлăх тата вăрăм ĕмĕр сунаççĕ, – терĕ вырнаçса ларса архиепископ.

– Тавах сире ырă сăмахăршăн. Хăвăр мĕнле тата? Ĕçсем аванах пыраççĕ-и?

– Мĕнле калас... Тĕшмĕше ĕненекен язычниксем канăç памаççĕ. Кăнтăртан тата ислам сăрхăнса кĕрет. Çапла пурăнатпăр ĕнтĕ. Чиркӳ çулĕ пит такăрах мар. Петербургпа е Мускавпа танлаштарма çук. Чулхуларах кунти пек мар. Унта Христос тĕнĕ хуçаланать.

– Варсонофий владыка питĕ тĕрĕс калать, – хутшăнчĕ калаçăва губернатор. – Кунта кашни халăхăн хăйне майлă тĕн йĕрки. Чылайăшĕ чиркӳсĕрех кĕлĕ тăваççĕ, çутçанталăк йĕркине мала хураççĕ.

– Тĕне кĕртес ĕç япăх пырать иккен.

– Христос тĕнне йышăнасшăнах мар çав: вăрмансене таратара пытанаççĕ, ялĕ-ялĕпе куçа-куçа каяççĕ, – пĕлтерчĕ Варсонофий атте.

– Пĕр сăмахпа каласан – ютйăх ĕнтĕ. Туррисем те вĕсен пирĕнни пек мар. Йышĕпе те нумай, – терĕ кĕпĕрне пуçлăхĕ. Иосиф Янович. – Тутарсемпе пушкăртсем ав ислам тĕнне йышăннă.

– Эсир мана пĕр-пĕр ютйăх çыннине, инородеца, кăтартăр-ха. Мĕнлерехскерсем вара вĕсем? – ыйтрĕ Павел патша.

– Ăнланма çук вĕсене, вырăсла япăх пĕлеççĕ, турă юррине те юрлаймаççĕ, – терĕ Варсонофий.

Ютйăх çынни тесенех Сергей Лукич Айдаров Ивана аса илчĕ: «Аслă цирюльник çавсенчен пулас», – терĕ...

Айдарова курсан патша тĕлĕнсех кайрĕ. Ун шучĕпе ку таврари вырăс мар çын сăнран пачах урăхла курăнмалла пек. Ку вара илемлĕскерех.

– Цирюльник, кала-ха, сана вырăс çынни мар теççĕ, хăш йăхран вара эсĕ?

– Чăваш эпĕ. Цивильскинчен.

– А-а, аса илтĕм. Цивильскинчи цирюльник вĕт-ха эсĕ. Мĕн ятлăччĕ-ха?

– Иван Айдаров.

– Иван, кала-ха, мӗнле тӗнпе пурӑнакан ҫын вара эсӗ? Мӗнле турра пуҫ ҫапатӑн?

– Тӗне кӗртнӗ чӑваш эпӗ. Иван тесе ҫавӑн чухне ят хунӑ.

– Апла-тӑк сан турру Христос.

– Хӑҫан мӗнле: чиркӗве ҫӳренӗ чухне Христоса пуҫ ҫапатпӑр, ҫумӑр ҫутӑр е тырӑ ӑнса пултӑр тесе ыйтнӑ чухне – хамӑр турра.

– Ав мӗнле иккен. Темле анкӑ-минкӗллӗ япала.

– Турра мар вӗсем, темле тӑмран йӑваласа е йывӑҫран касса тунӑ кӗлеткесене пуҫ ҫапаҫҫӗ. Ҫав илемсӗр пуканесене лавӗ-лавӗпе пухса ҫунтаратпӑр. Вӗсем вара каллех ҫӗнӗрен тӑваҫҫӗ, – хутшӑнчӗ калаҫӑва архиепископ.

Айдарова ун сӑмахӗ чӗрене каснӑ пекех туйӑнчӗ. Ма тесен, темле сивӗлӗх, чӑвашсене хисеплеменни сисӗнет. Чӑтса тӑраймарӗ вӑл, хӑй сӑмахне каларӗ:

– Турӑ кӗлеткине ҫунтарсан та этем чунне ҫунтараяс ҫук. Вӑл ҫаплипех юлать.

– Ав мӗнлерех калаҫать вӑл чӑрсӑр инородец! Патша умӗнче намӑса пӗлесчӗ! – кӑшкӑрсах ячӗ Варсонофий.

– Камсем вара вӗсем чӑвашсем? Ӑҫтан килсе лекнӗ? – пӗлме тӑрӑшрӗ канцлер.

– Пӑлхарсем теҫҫӗ вӗсем хӑйсене, – хуравларӗ губернатор, – кунта тахҫантанпах пурӑнаҫҫӗ, самай йышлӑн. Тутарсенчен те нумайрах пулас. Атӑл тӑршшӗпех чӑвашсем, Дон шывӗ патӗнчен пуҫласах теҫҫӗ хӑш-пӗр ҫулҫӳревҫӗсем.

Варсонофий хӑйӗннех перет, патша умӗнче питӗ ӗҫлӗ ҫын пек курӑнасшӑн тӑрӑшать. Каллех чӑвашсем хӗвеле, уйӑха, ҫӗре, йывӑҫсене пуҫ ҫапнине сивӗлерӗ, ҫакна тӗшмӗш тӗнчи терӗ.

– Тӗне кӗрсен те тӗшмӗшрен тасалса пӗтеймен иккен эсӗ. Аслӑ цирюльникӗн ун пек вылявлӑ пулмалла мар, – асӑрхаттарчӗ император.

– Ваше Величество, ман шутпа ҫирӗп ӗненӳ патне иккӗленӳсене ҫӗнсе илнӗ майпа кӑна ҫывхарма пулать. Шӑпах ҫав ҫул ҫинче тӑратӑп та ӗнтӗ эпӗ.

– Христос тӗнне ӗненме мӗнле иккӗленӳ чӑрмав кӳрет вара?

– Эпӗ хам кӗске ӑсӑмпа ҫапла шутлатӑп. Хӗвелпе ун ӑшшине ҫын кашни кунах туйса тӑрать. Ҫӗр вӑйӗ – вӑл парнеленӗ ҫимӗҫре. Христос-и? Вӑл ҫын вӗт-ха. Ҫын турӑ пулма пултарать-и вара? Ҫын ҫынран вӑйлӑрах пулассӑн туйӑнмасть. Турӑ вӑл – Турӑ. Христосра эпӗ чи малтан лайӑх ҫынна куратӑп.

Ун кăмăлĕ, ун юратăвĕ мана чăнах та хавхалантарать. Ман хамăн та ун пек пулас килет. Ыттисене те çавнах сĕнĕттĕм.

– Вăт, яланах çапла вĕсем. Чиркӳсем те çителĕклех лартрăмăр, çӳрекен сахал, – ӳпкелешсе илчĕ архиепископ.

– Раççейре пĕр тĕн çеç пулмалла,– татса каларĕ патша.– Пурне те Христос тĕнне йышăнтармалла: кама пушăпа, кама премĕкпе; оброкне сахалрах илмелле, çĕр ытларах памалла. Майне пĕлсе ĕçлемелле.

– Кун пек йĕрке чылайăшне хăй патнелле туртĕ. Çĕр вăл – пурăнăç. Чăвашшăн уйрăмах. Çĕрпе çăкăр тĕнрен те хаклăрах шутланать. Хырăм выçă чух чиркӳре те кăмăллах мар, – терĕ Айдаров.

Пурте пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç. Чăваш каччи çапла калаçасса кĕтмен вĕсем. Варсонофий те нимех те калаймарĕ. Калаçăва каллех Павел патша хăех тăсрĕ:

– Мĕнле тĕлĕнмелле çын пултăн эсĕ? Çамрăклах ват çын пекех калаçатăн.

– Манăн урăххи пирки пĕлес килет. Çав ещĕкре ман çыру та пулмаллаччĕ. Хам шухăша пĕлтернĕччĕ, – терĕ Айдаров.

– Эсĕ апла çырма та пĕлетĕн иккен, – тĕлĕнчĕ император.

– Атте çине тăчĕ. Малтан вулама вĕрентрĕ, унтан пачăшкă патне ячĕ. Вулама, çырма кахаллансан атте хăлхаран пăратчĕ. Халь кăна тавçăрса илтĕм: тĕрĕс тунă вăл. Хут пĕлмен çынна ухмах выраннех хураççĕ, унтан кулаççĕ, улталаççĕ ăна.

– Акă ун çырăвĕ... Çăхав тесен те юрать, – терĕ канцлер.

– Вуласа парăр-ха, – хушрĕ патша.

– Сасăпа вулама пит кăмăллах мар çав. Губернатор пирки çырнă.

Айдаров, паллах, çак сăмахсене кĕтменччĕ. Хĕрелсе кайрĕ. Губернатор ун çине шăтарас пек пăхса илсен хăраса ӳкрĕ.

– Пулма пултараймасть. Тен, вăл эпĕ çырнă хут мар?

– Акă пăхăр, аялта Айдаров Иван тесе çырнă, – тĕллесе кăтартрĕ пӳрнипе канцлер.

– Кӳр-ха кунта, мĕн çырнă вара вăл, – ыйтрĕ Павел патша.

Канцлер панă хута пăхса тухрĕ те:

– Ав мĕнле иккен, – терĕ.

– Аслă государь, чĕрempe туятăп, эпĕ çырнă хут мар вăл. Тархасласа ыйтатăп, пăхса илме ирĕк парсамăр. Йăнăш япала пулассăн туйăнать.

Патша çав хута канцлера тавăрса пачĕ, лешĕ вара Айдаров патне пычĕ те тĕллесе кăтартрĕ:

– Пăркаланса тăма кирлĕ мар, – терĕ.

– Çук! Ку эпĕ çырнă хут мар. Алли те урăхласкер. Турă умĕнче калатăп, кусем пачах та эпĕ çырнă сăмахсем мар. Эпĕ шкулсем пирки çырнăччĕ.

– Ну юрĕ. Тен, кунта Иосиф Янович тусĕсем шӳтлеме шут тытнă? Айккинерех илсе хур-ха эсĕ ăна, – хушрĕ канцлера патша. – Шкул пирки мĕн каласшăн вара эсĕ?

– Вырăс мар халăхсене те шкул кирлĕ. Вĕсем те Раççей çыннисемех вĕт, – терĕ Айдаров.

– Тупнă камшăн ыйтса çӳреме,– персе ячĕ архиепископ.– Вĕренеймеççĕ вĕсем, ăсран кая юлнă тăм писменсем.

– Тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесем пичетленсе тухсан пачах урăхла пулĕ. Вĕрентекенсен хăйсен те чăвашла пĕлмелле. Вара веçех майлашăнса пырĕ, çĕнĕ тĕне йышăнтарасси те çăмăлланĕ.

– Курăр-ха ăна... Кама вĕрентме шут тытнă вăл? Императора хăйне ăс парать. Сансăр пĕлмеççĕ тетĕн-им? – тарăхнине пытараймарĕ канцлер.

– Апла-тăк çав ещĕке мĕншĕн çакса панă вара? – ыйтрĕ цирюльник.

– Тен, тĕрĕсех калаçать вăл, – хутшăнчĕ губернатор. – Чиркӳпе шкулăн пĕр шухăшлă пулса Турăпа Патшашăн ĕçлемелле.

– Кунпа килĕшетĕп, – терĕ Павел. – Эсир вара, владыка, ютйăх çыннисенчен ан пăрăнăр, çывхарма тăрăшăр. Вара тĕне кĕртес ĕç те майлашăнса кайĕ.

– Уйрăмах чăвашла пĕлекен пачăшкăсем ытларах пулсан,– хушса хучĕ Айдаров патшапа пĕр шухăшлине палăртса.

– Çак ĕçе хăвах пуçарса яр эппин. Владыка, вĕрентсе хатĕрлĕр ăна. Православишĕн ĕçлетĕр, хăвăра пулăшса пытăр,– хушрĕ государь.

– Вĕрентме пулĕ-ха. Авланнă çынах-и вара эсĕ?

– Авланман-ха.

– Юратнă хĕрӳ пур пуль-ха? – ыйтрĕ йĕкĕлтесе калаçнă сасăпа канцлер.

– Пур ĕнтĕ, Хĕвелпи ятлă.

– Мĕнле халиччен илтмен ят вара ку? – пăхса илчĕ патша архиепископ çине. Лешĕ ăнлантарма пикенчĕ:

– Тĕне кĕмен чăвашсен ячĕсем те урăхла вĕсен, – терĕ.

– Çук, ун тĕне кĕнĕ хĕрпех пĕрлешмелле,– сĕнчĕ губернатор.

– Халех авлантармалла ăна,– хавхалансах каларĕ патша.– Хĕрĕ те пур вĕт. Ăçта-ха лешĕ, мана хăй пиччĕшĕ текенни. Мĕн ятлăччĕ-ха?

– Катерина Беловодова, – аса илтерчĕ канцлер.

– Çапла. Екатерина... Анчах виççĕмĕшĕ мар. Чĕнĕр-ха вĕсене.

Алăк патĕнчи жандарм Беловодова ятне кăшкăрчĕ. Теприсем те чĕнчĕç. Кунтах пулнă иккен. Патша патне кĕрсе тухнă хыççăн çынсем Улатăртан килнĕ мещанкăпа паллашма тăрăшрĕç, хĕрне мухтаса калаçакансем те тупăнчĕç. Патша умĕнче тăни питĕ хаклă япала иккен. Халĕ вара каллех ун патне кĕмелле...

– Государь, мĕнле чыса пула тепĕр хут кĕме ирĕк патăр пире? – ыйтрĕ тӳрех амăшĕ.

– Катерина, ирт маларах, – хушрĕ патша. – Иван, эсĕ унпа юнашар пырса тăр.

Айдаров хушнине итлерĕ.

– Пăхăр-ха эсир, мĕнле илемлĕ мăшăр! Варсонофий владыка, пил парăр вĕсене. Паянтан упăшкипе арăмĕ пулччăр.

– Ывăлăм, кала-ха, мĕнле тĕнпе пурăнакан çын вара эсĕ? – ыйтрĕ архиепископ Иванран.

– Православипе.

– Эсĕ вара, хĕрĕм?

– Эпĕ те православипе.

– Апла пулсан пĕрне-пĕри аларан тытăр та эпĕ каланине чĕрене илсе йышăнăр. Çак сăмахсене хамран çеç мар, Турă хушнипе калатăп. Эсир иксĕр те Турă тарçисем. Паянтан сире çураçнă хĕрпе кĕрӳ каччă тесе пĕлтеретĕп.

Варсонофий хăй кăкри çинче çакăнса тăракан пысăк хĕресе илчĕ те унпа çамрăксем çине хĕрес хыврĕ. Унтан Иванпа Катерина çав хĕресе чуптурĕç.

– Халĕ вара çураçнă ятпа пĕрне-пĕри чуптуса илĕр, – терĕ архиепископ.

Айдаров пĕр самантлăха нимĕн тума аптраса тăчĕ. Çак тĕлĕкри пек япала пачах та кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕ вĕт. Хĕвелпи çинчен шутлани те уссăрах. Пĕтĕмпех патша хушнă пек майлашăнса пырать. Унтан иртме кам хăйтăр-ха. Иван Кĕтерне патне çавăрăнса ăна пĕрремĕш хут тимлĕн пăхса илнĕ самантра хĕрача пулас упăшкине чăп! чуптуса илчĕ. Пурте алă çупса ячĕç.

– Саламлатăп сире, юрату тата килĕшӳ сунатăп. Телейлĕ пулăр! – терĕ патша.

– О, Государь! Сирĕн ырлăхăн вĕçĕ-хĕрри те çуккă иккен. Хăвăра питĕ пысăк тав. Сирĕн сывлăхăршăн паянах чиркĕве кайса çурта çутăп, – терĕ Беловодова мещанка. – Ачасем, халĕ каяр пуль, туя хатĕрленме тытăнар.

Лешсем тухса кайсан император кăштах канса илмелли çинчен систерчĕ. Губернатор кăнтăр апачĕ пирки асăрхаттарчĕ.

* * *

Çĕвĕçсен çуртĕнчен тухсан малта канцлер утса пычĕ, ун хыçĕнчен – Хĕвелпи, кайра – полицейски. Кăштах кайсан Хĕвелпи уттине чакарчĕ. Канцлер çаплипех малалла уттарчĕ. Хĕрача чарăнса тăчĕ те çул хĕррине лартса тухнă тĕмĕсем çинелле тĕллесе кăтартса çăмăллипе тула тухас килнине пĕлтерчĕ. Полицейски хирĕçлемерĕ, Хĕвелпи тĕм хыçне кайсан кăшт пăрăнарах тăчĕ. Çав самантпа усă курса Хĕвелпи айккинерех ларакан тĕмĕсем патнелле пĕшкĕнсе чупса кайрĕ. Те ура сассине илтнĕрен полицейски леш тĕм патне пырса пăхрĕ. Илемпи çуккине курсан йĕри-тавра чупкаласа тĕмĕсем хушшине пыра-пыра пăхрĕ. Тата айккинерех кайма ĕлкĕрнĕ хĕре асăрхаймарĕ.

– Господин канцлер! – кăшкăрса ячĕ вăл. – Тарчĕ, лешĕ тарчĕ! Каçарăр мана! Улталарĕ вăл, куçран темĕскер сапрĕ, нимĕн те курмастăп.

Канцлер куçне сăтăркаласа тăракан арçын патне пычĕ те кăкăрĕнчен тытса силлерĕ.

– Тăмсай! Халех шыраса тупнă пул! Унсăрăн кĕçĕрех мăйна мăйкăч пулĕ, – терĕ те хăйне уйăрса панă çурт патнелле уттарчĕ. Полицейски ним тума аптранипе пĕр самантлăха юпа пек хытса тăчĕ те полицмейстер патне чупса кĕрсе кайрĕ...

Илемпи çак самантпа усă курса Айдаров ĕçлекен çуртăн тепĕр енне чупса кайрĕ те кантăк умĕнчи çăра тĕм варрине кĕрсе тăчĕ. Кĕçех шăв-шав çĕкленчĕ, Хĕвелпие шыраса айккинелле чупа-чупа кайрĕç. Хăйне майлă хирĕçӳллĕ самант. Шыракансен шучĕпе таракан çын, паллах, аяккарах пăрăнма тăрăшмалла. Йăли çапла. Хĕвелпи вара урăхла шутларĕ. Пач пĕлмен хулара ăçталла кайтăр-ха вăл? Хусан вăл Çĕрпӳ мар вĕт. Мĕнле урампа тармаллине те пĕлес çук. Чĕри ун юратнă каччи патнеллех туртăнчĕ. Акă вăл тĕмĕ хушшинче ним сывламасăр тенĕ пекех тăрать. Пит умĕнчи турата хуллен сирчĕ те кантăкран пăхрĕ. Шалта мĕн пулса иртни аванах курăнать. Чылайччен сăнаса тăчĕ. Килкартинчи шăв-шав леш пӳлĕме Скворцова Маня килсе кĕрсен тин лăпланчĕ. Ун çӳçне кăтралатса илемлетнине курсан вара тавçăрса илчĕ: канцлер патне илсе кайма хатĕрлеççĕ ĕнтĕ. Айдаров хăй пӳлĕмĕнче пĕччен чухне Хĕвелпин ун патне кĕрес шухăш та çуралчĕ.

Тĕм хушшинчен тухса кушак пек çăмăллăн çуртăн тепĕр енне пырса тăчĕ. Унта полицейски уткаласа çӳренине курсан пăрăнчĕ те тĕттĕм каç хӳттине пытанчĕ. Кăшт çутăлсан урама тухрĕ те çуртран çурт патне куçса çак вырăнтан айккинелле çул тытрĕ. Унăн халь пĕртен-пĕр тĕллев – ашшĕ юлнă киле шыраса тупасси. Анчах ăçталла каймалла-ха?

Акă умра вăрăм шăпăр йăтнă арçын пырать, урам шăлакан ĕнтĕ. Чарăнса тăчĕ те ĕçе тытăнчĕ. Хĕвелпи ун патне пычĕ те Çĕрпӳ çулĕ хăш еннеллине ыйтрĕ. Лешĕ Çĕрпӳ сăмаха ăнланмарĕ пулас. Хĕвелпи хăвăрт тавçăрса илчĕ те тепĕр хут: «Цивильск... дорога», – терĕ.

Арçын пачах та тепĕр еннелле тĕллесе кăтартрĕ. Хĕрача васкаса утрĕ. Леш çурта тупмалла. Çĕрпӳ çулĕпе пырса кĕрсен тупма пулĕ-ха ăна. Анчах хули самай пысăк вĕт, Çĕрпӳ пек мар. Хĕвелпи тата темиçе çынран ыйтса пăхрĕ. Çапла çынсем пулăшнипе хула хĕррине тухрĕ те Çĕрпӳ çулĕ çине ӳкрĕ. Çав çулпа кĕрсе çĕр каçма чарăннă çурта шырама тытăнчĕ. Анчах хăш килте чарăннине ниепле те аса илеймерĕ. Каçа хирĕç килнĕрен-ши? Тепĕр тесен, асра тытма тĕллевĕ те пулман. Ашшĕпе урапа çинче ларса пынă чухне вăл ытларах юратнă каччи пирки кăна шутлани паллă ĕнтĕ. Сăнарĕ те темиçе хутчен куç умне туха-туха тăчĕ. Ярмăрккара мĕн илесси те самаях кăсăклантарчĕ. Ытти хĕрсенчен шукăльрех çӳрес килет вĕт. Укçасăр çын хĕрĕ мар. Каччи пирки вара каламалли те çук. Айдаровсене таврара пурте пĕлеççĕ. Ĕçчен те пултаруллă çĕвĕ ăстисем.

Кунти йывăç çуртсем пĕри теприччен илемлĕ. Кантăкĕсем пысăк, чĕнтĕрлесе хитрелетнĕ, сăрланă. Хапхисем те капăр. «Вăт мĕнле пурăнаççĕ çынсем», – шутласа илчĕ Хĕвелпи. Чылайччен пăхкаласа çӳрерĕ, анчах пĕрин патне те кĕмерĕ. Пĕлнĕ-пĕлмен çĕре епле пырса кĕрĕн-ха. Вара вăл урăхла шухăш тытрĕ: «Ярмăрккана каймалла. Тен, аттене çавăнта тĕлпулăп».

Илемпи çитнĕ çĕре ярмăрккa хăй сăнне иле пуçланă: суту-илӳ, шăв-шав, карусель патĕнчи параппан сасси... Хĕрача çине тăрсах ашшĕне шырарĕ. Анчах усси пулмарĕ. Çитменнине тата пĕр пус укçа та çук. Çименни те чылай пулать. Мĕн тумалла-ха? Ăна пулăшма пултараканни хулипе те пĕр çын çеç – Айдаров Ваня. Ăна та шыраса тупаяс çук. Вара вăл çакă кăткă йăви пек кĕшĕлтетекен вырăнта чăвашсене шырама пуçларĕ. Сăнран, тумтиртен асăрхама тăрăшрĕ, калаçăвне тăнларĕ. Çапах та тĕл пулчĕ. Анчах ку чăвашсем Çĕрпӳ енчисем пулмарĕç, Чĕмпĕр тăрăхĕнчен килнĕскерсем иккен. Хăй хуйхи-

не каласа парсан пĕр ватăрах чăваш çăкăр чĕлли тыттарчĕ те ăс пачĕ:

– Эсĕ хĕрĕм, хăвăр паталла илсе каякан çул çине тух та хула хĕрринче кĕтсе тăр. Çĕрпӳ еннелле каякан тупăнатех ĕнтĕ. Инçе çула пĕччен ан тух, – терĕ.

Çапла турĕ те Хĕвелпи. Чăнах та, кахал апачĕ тĕлнелле хуларан икĕ лав тухни курăнчĕ. Илемпи те хуллен утма пуçларĕ, хăваласа çитчĕр-ха тесе васкамарĕ.

– Хĕрĕм, ăçталла çул тытатăн? – илтĕнчĕ хыçалтан арçын сасси. Чăвашсемех иккен. Илемпи çаврăнса пăхрĕ. Малти лавĕ тăрантас иккен. Унта иккĕн ларса пыраççĕ. Иккĕмĕшĕ – темле михĕсем, ещĕксем тиенĕскер. Ун çинче пĕр арçын пĕчченех. Лешсем иккĕшĕ самай капăр тумланнăскерсем, ку вара лавçă ĕнтĕ.

– Çĕрпӳ еннелле каймалла ман, – терĕ Хĕвелпи.

– Мĕншĕн пĕчченех вара? – ыйтрĕ тăрантас çинче ларса пыраканни, çулĕпе чылай аслăраххи.

«Мĕнлерех каласан лайăхрах-ши?» – шухăшласа илчĕ хĕрача.

– Ярмăрккара аттене çухатрăм, – терĕ.

– Кун пек хăçан киле çитĕн-ха? Лар урапа çине, – сĕнчĕ асли.– Чуптарар малалла. Тĕттĕмлениччен Атăл хĕрне çитесчĕ,– терĕ тилхепе тытса пыракан çамрăка. Лешĕ тилхепене карт! туртса илчĕ те тăрантас урапisем хăвăртрах çаврăнма тытăнчĕç. Хыçалти лавĕ те юласшăн пулмарĕ.

– Лар часрах,– тĕллесе кăтартрĕ лавçă. Илемпи тапранса кайнă урапа çине чупса пырсах улăхса ларчĕ. Чылайччен ним шарламасăр пычĕç. Калаçăва Илемпи пуçларĕ:

– Ăçта çитиччен каятăр вара эсир?

– Çĕрпӳ хулине.

– Ыр та эсир пултăр, шĕкĕр турра. Киле çитейместĕп пуль тесе питĕ хăранăччĕ. Кусем камсем вара? – пăхса илчĕ Хĕвелпи тăрантас çинелле.

– Çавна та пĕлместĕн-и вара? Каюров купца вăл.

– Ăçтан пĕлес-ха ман купца таврашне.

– Çĕрпӳре ăна палламан çын та çук.

– Çĕрпӳрен мар эпĕ, Йĕкĕрварта пурăнатăп.

– Хула хĕрĕ марри сисĕнет çав.

– Сан хуçа чăвашла та чухлать иккен.

– Хăй чăвашах вăл. Ачисем вара...

– Вĕсем тата камсем?

– Майри вырăс пулсан ачисем те вырăс ĕнтĕ. Чăвашла пĕлмеççĕ. Акă ку та вырăсла кăна калаçать, – тĕллесе кăтартрĕ пушă аврипе тилхепе тытса пыракан çамрăк çине.

– Ывăлĕ пуль-çке?
– Юлашки вăхăтра яланах хăйпе илсе çӳрет. Купца ĕçне хăнăхтарасшăн тăрăшать. Йĕкĕрварсем эппин. Кам хĕрĕ пулатăн вара эсĕ унта?
– Ман аттене Шăрт Михали теççĕ.
– Пĕлмесĕр.
– Ăçтан пĕлетĕн вара? Пирĕн ял çынни мар вĕт-ха.
– Мăнçутран эпĕ, сирĕн ялтан инçех те мар. Сан аçуна эпĕ çеç мар, хĕрарăмсем те лайăх пĕлеççĕ. Сӳс якатмалли шăрт туса сутакан таврара та вăл çеç. Тепле ĕлкĕрет?
– Пурте ĕçлетпĕр ĕнтĕ. Унсăрăн мĕнле-ха?
– Ĕçлемесĕр нимĕн те пулмасть çав.
Çапла калаçкаласа пынă май Атăл хĕрне çитни сисĕнмерĕ те. Чарăнчĕç. Купца тăрантас çинчен анчĕ те хăй шухăшне пĕлтерчĕ:
– Каçа хирĕç каçар мар. Лашасене лайăхрах кантарар та ыран çăмăлрах пулĕ, – терĕ.
Лашисене тăварчĕç те тилхепепе кăкарса туртаран çыхрĕç. Лешсем курăка шатăрт тутарсах çиме пуçларĕç. Лавçă михĕ айĕнчен çава илчĕ те аври çине майлаштарса лартрĕ.
– Атя, лашасем валли курăк çулса килер-ха, – терĕ те пăяв тыттарчĕ.
Каюровпа ывăлĕ лав çинчи япаласене урапа айне антарса лартрĕç те пысăках мар шăналăкпа витрĕç. Çимеллисене урапа çине кăларса хурса çырткаласа илчĕç. Унтан ашшĕ тăрантас çине кайса выртрĕ. Ывăлĕ урапа çине темле кивĕ тумтир пăрахрĕ те Атăл еннелле çавăрăнса чылайччен пăхса тăчĕ. Икĕ лав тĕттĕмленнине пăхмасăрах тепĕр енне каçаракан сулă çине тиеннине курсан, мĕншĕн питĕ васкаççĕ-ши вара кусем тесе шутласа илчĕ.
Акă лавçăпа Хĕвелпи курăк йăтса килчĕç те пĕр купа туса хучĕç. Лашасем хăйсемех тавçăрса илчĕç, çулса килнĕ курăк патне пычĕç те çăвар туллин чăмлама тытăнчĕç.
– Сергей, Хĕвелпипе иксĕр шыв ăсса килеймĕр-ши? – сĕнчĕ лавçă.
Сергей урапа айĕнче ларакан пушă витрене илчĕ те:
– Атя, кайрăмăр, – терĕ.
Атăл паян лăпкă. Шывĕ те тăрă. Пĕчĕк хумсем çинче хĕвеланăç енчен сăрхăнса килекен çутта пула тĕксĕмрех шевле чупкаласа иртет. Сасартăк шывра чăмпăл! туни илтĕнсе кайрĕ.
– Çăрттан вылять, – терĕ Сергей.
– Санăн шыва кĕрес килмест-и? – ыйтрĕ вăл хĕртен. – Каçхи шыв кăнтăрлахинчен ăшăрах вăл.

Хӗвелпи пушмакне хыврӗ те урине шыва чиксе пӑхрӗ. Чӑнах та, пачах сивӗ мар иккен. Апла пулин те шыва кӗме шутламарӗ. Ют ҫын умӗнче вӗт-ха. Атӑлӗ те хӑрушӑ, ытла сарлака. Халиччен кӗрсе курман шыв вӗт-ха. Сергей айккинерех кайрӗ те хывӑнма пуҫларӗ. Хӗвелпи вара пушмакне алла тытса йӗпе хӑйӑр ҫине пуса-пуса тепӗр еннелле утрӗ. Ун пуҫне хурлӑхлӑ юрӑ ҫемми пырса кӗчӗ, чарӑнса тӑчӗ те Атӑл ҫине пӑхса шӑппӑн юрласа ячӗ:

Тӑхӑнтӑм, тумлантӑм, тухрӑм урама,
Чун юратнӑ савнӑ туспа курса калаҫма.
Ман аппа та тухрӗ, темшӗн васкаса,
Кайса килер терӗ Атӑл хӗррине.
Ҫитсе кӑна тӑтӑм Атӑл хӗррине,
Аппа тӗксе ячӗ Атӑл варрине.

– Ах, аппам, аппамҫӑм, кӑларсам мана,
Атте пехилленӗ тур лаши сана.
– Ах, йӑмӑкҫӑм, йӑмӑк, кӑлараймӑп ҫав,
Атте пехиллени кирлӗ мар мана.

– Ах, аппам, аппамҫӑм, пулӑшсам мана,
Анне пехилленӗ шур тутри сана.
– Ах, йӑмӑкҫӑм, йӑмӑк, пулӑшаймӑп ҫав,
Анне пехиллени кирлӗ мар мана.

– Ах, аппам, аппамҫӑм, эс ҫӑлсам мана,
Сар ҫурта пек сар савнине пехиллеп сана.
– Ах, йӑмӑкҫӑм, йӑмӑк, ма халь тин калан,
Сар ҫурта пек яштак пӗвӳ Атӑла путсан?..

Ҫапла тӗксе ячӗ аппӑш(ӗ) йӑмӑкне,
Ҫапла туртса илчӗ ун юратӑвне.
Сар ҫурта пек каччӑ – аппӑш(ӗ) ҫумӗнче.

– Мӗн ҫинчен юрлатӑн вара эсӗ? – ыйтрӗ юнашарах пырса тӑнӑ Сергей. Хӗвелпи вӑл ҫывхарнине асӑрхаман та иккен.

– Туртса илнӗ юрату ҫинчен, – терӗ тунсӑхлӑ туйӑм ытамне лекнӗ хӗрача. Юратнӑ тусӗн сӑнарӗ те куҫ умӗнчех.

Сергей шӑлавар пӗҫҫине тавӑрса шаларах кӗчӗ те витрине тултарчӗ. Вара вӗсем ним шарламасӑр урапасем патнелле уттарчӗҫ.

Лавҫӑ кӑштах ҫырткаласа илнӗ пулмалла, ӑсса килнӗ шыва витре хӗрринченех ӗҫрӗ, ҫур чӑкӑта яхӑн Хӗвелпие тыттарчӗ те шурӑ пиртен ҫӗленӗ хутаҫҫине ҫыхса лав айне хучӗ. Унтан лашасене шӑварса килчӗ те иккӗшне те тӑлларӗ. «Кӑкарнӑ лашана мӗншӗн тӑллать-ши вара ку?» – ӑнланса илеймерӗ Хӗвелпи.

– Эсир ҫывӑрма выртӑр, эпӗ хуралта пулам, – терӗ лавҫӑ.

Сергей урапа ҫине вырнаҫса выртрӗ. Хӗвелпи урапа айӗнчи шӑналӑкпа витнӗ михӗ ҫине тайӑнса ларчӗ те куҫне хупрӗ. Шухӑшсем канӑҫ паманнине пула час ҫывӑрса каяймарӗ. Лашасем курӑк ҫини те хӑлхарах. Пӗр сехет пек выртсан ыйха путрӗ...

Укӑлчари вӑйӑра пек. Ваня та аслашшӗ патне яла килнӗ. Акӑ пурте алӑран-алла тытса вӑйӑ картине тӑчӗҫ те юрлама пуҫларӗҫ. Ваня Хӗвелпи патне пычӗ те вӑйӑ варрине чӗнсе кӑларчӗ. Алӑран тытса ыттисене хирӗҫле май утма пуҫланӑччӗ кӑна, пӗр хӗп-хӗрлӗ кӗпе тӑхӑннӑ хӗрача пычӗ те Хӗвелпипе Ваня хушшине кӗрсе тӑчӗ. Хӗвелпи тем пек тимлӗн пӑхсан та ҫав хӗре палласа илеймерӗ...

Шӑп ҫав самантра такам хытӑ кӑшкӑрнине пула хӗрача вӑранса кайрӗ. Кӑштах ҫутӑлнӑ иккен. Ак тамаша, лавҫӑ ҫава ярса тытнӑ, купца аллинче пуртӑ, Сергей те патакпа. Инҫех мар икӗ арҫын айккинелле утса кайни курӑнчӗ. Лаша вӑррисем иккен. Шӑпах ире хирӗҫ хытӑ ҫывӑрса кайнӑ самантпа усӑ курма шутланӑ иккен вӗсем. Юрать-ха, хуралҫӑ вӑхӑтра кӑшкӑрса янӑ.

Текех ҫывӑрасси пулмарӗ. Хытӑ тарӑхнипе тӑвӑлланса ҫитнӗ арҫынсем кӑштах лӑпланнӑ тӗле тул та ҫутӑлчӗ. Кӗҫех Атӑл леш енне каҫаракан сулӑсем те ӗҫе тытӑнчӗҫ, вӑрӑм кӗсменӗсемпе авӑсакан вӑйлӑ арҫынсем хӑйсен вырӑнӗсене йышӑнчӗҫ.

Лавсене пысӑк сулӑ ҫине вырнаҫтарнӑ вӑхӑтра Хӗвелпи сӑрт хӗрринчен пӑхса тӑчӗ. Сасартӑк сулахай хӑлхи янраса кайрӗ. «Мӗн тӑватӑп-ха эпӗ? – шухӑшласа илчӗ Хӗвелпи. – Мӗншӗн савнӑ тусӑма пӑрахса хӑваратӑп-ха? Нивушлӗ пире малашне ҫак анлӑ Атӑл уйӑрса тӑрӗ? Ҫук, Ваньккасӑр каялла каҫмастӑп».

– Эсир кайӑр! Эпӗ кунтах юлатӑп! – кӑшкӑрчӗ вӑл аллипе сулса сулӑ ҫинчи арҫынсене. Кӗсменҫӗсем ӗҫе тытӑнсан ҫавӑрӑнса утрӗ...

* * *

Раççей! Сан вăрттăнлăхна никам та, нихăçан та пĕлсе пĕтерес çук. Тупмалли юмах евĕрлĕ çĕршыв. Кунта веçех пăтрашăнса кайнă: ыррипе усалли те, пуянлăхпа чухăнлăх та, ăслăлăхпа ухмахлăх та, влаçпа влаçсăрлăх та юнашарах. Çакна халăх та хăнăхса çитнĕ. Урăхла пурăнăç пирки пит шутламасть те. Тен, çавăнпах пурнăç йĕркине улшăнусем кĕртме çăмăл мар. Петербургран хушнисем, çĕнĕ пуçарусем кунталла çитнĕ çĕре сӳнсех пыраççĕ, кивĕ йăласемех хуçаланаççĕ. Халĕ те, ав, патшана ăсатса ячĕç те лăпланчĕç.

– Турра шĕкĕр, йĕркеллех ăсатрăмăр, – терĕ губернатор прокурора. – Кăкăра хĕсекен япала вĕçерĕнсе кайнă пекех туйăнчĕ. Сывлама та çăмăлрах. Халь кăна лайăхрах ăнланса илтĕм: «Хăна вăл пĕрремĕш кун – ылтăн, иккĕмĕш кун – кĕмĕл, виççĕмĕш кун – тутăхнă тимĕр», – тенине.

– Пĕтĕмпех эсир çине тăнипе, Иосиф Янович.

– Апла мар ĕнтĕ, пурте тăрăшрĕç. Çав шутрах эсир те. Бал та йĕркеллех иртрĕ, тĕп хуларинчен пĕртте кая мар. Костюмсемпе париксем тата...

– Цирюльник те питĕ тăрăшрĕ. Вăл пулмасан йывăр тиветчĕ. Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă парне тесен те юрать.

– Килĕшетĕп сирĕнпе. Çапах та ăшра темле иккĕленӳ пур. Леш хута тупар-ха. Ыттисене те пăхса тухар.

Прокурор канцлер валли лартнă сĕтел патне пычĕ те хутсене тыта-тыта пăхрĕ.

– Акă, тупрăм.

– Вула эппин.

– Губернатор пирĕн питĕ чее çын. Лайăххăн ĕçлени çук, анчах кунран-кун пуйса пырать, ыттисенчен сăтăрма юрататъ. Патша кăларнă указсене пурнăçламасть. Хулара та йĕрке çук. Эсир килнĕ тĕле хӳмесемпе хупласа лартнă вырăнсене курсанччĕ эсир. Чиновниксемпе салтаксем валли çĕнĕ тум çĕлес ĕçе те халĕ кăна пуçарса ячĕç. Губернатортан ыррине кĕтме çук. Иван Айдаров.

– Нивушлĕ çавах çырнă вара?

– Çук ĕнтĕ. Кунта темле вăрттăнлăх пур. Цирюльнике айăпа кĕртес тесе çырман-ши? Анчах çакă кама кирлĕ-ха? Кам çырнă? Мĕнле сăлтава пула-ши?

Губернатор чĕркенсе выртакан хут таткине илчĕ те асăнмалăх тесе çĕнĕ прокурора пачĕ.

– Халĕ ĕнтĕ пытармалли çук. Ещĕке виçĕ çын ятне ятăмăр: Востриков, Волков тата эсир. Шăпа сирĕн çине ӳкрĕ.

Хам туртса кăлартăм. Эсир прокурор пулнăшăн питĕ савăнтăм.

– Тавах сире, Иосиф Янович. Сирĕн шанăçа тӳрре кăларма тăрăшăп, – терĕ Сергей Лукич губернатор парнеленĕ хут çине пăхса илсе. – Чим-ха, кунта темскер...

Прокурор леш Айдаров ячĕпе çырнă хутпа шăпа хутне юнашар хурса танлаштарса пăхрĕ.

– Пăхăр-ха, пĕр алăпа çырнă хутсемех вĕт. Пĕр почерк.

– Чăнах та.

– Ку шăпа хутне кам çырчĕ вара?

– Канцлер.

– Ак тĕлĕнтермĕш, канцлер алли иккен. Волковпа Востриков ячĕсене çырнисем ăçта-ши?

– Çавăнтах ĕнтĕ.

Губернатор ещĕкрен тепĕр шăпа хутне туртса кăларчĕ те вуласа пăхрĕ. Тĕлĕннипе вăрçса илчĕ.

– Мĕн амакĕ ку? Каллех сан яту, Лукич. Виççĕмĕшне пăхар-ха.

Кунта та çав ятах пулнине курсан губернатор пĕр самантлăха шăп тăчĕ, шухăша кайрĕ. Мĕнле чăтса тăрăн-ха ун пек чухне, пуçа пăралакан шухăш чĕлхе çине ӳкетех:

– Мĕншĕн сан ятна кăна çырнă-ха вăл, çав нимĕç? Мĕне пула? Тен, сирĕн хушăра темле вăрттăнлăх пур?

– Çук, çук, турă ан хуштăр унпа çыхланма.

– Апла пулсан, мĕншĕн çапла тунă-ха вăл. Патшана улталасах сана прокурора лартма тăрăшнă? Пач пĕлмен çынна çакăн пек пулăшу... Çук, кунта темскер пурах.

Губернатор каллех Андронов ятне канцлер сĕннине аса илчĕ. Анчах ытлашши чăкăлташса калаçас темерĕ. Пĕрле ĕçлемелле вĕт. Канцлер йышшисем килеççĕ те каяççĕ. Кунти çынсемпе вара кашни кунах тĕл пулма тивет. «Мĕншĕн цирюльнике ура хума шутланă-ха вăл?» – каллех ыйту, ыйту...

– Ман ята эсирех сĕннĕ пуль тетĕп.

– Çапла, хамах сĕнтĕм ĕнтĕ. Мансăр пуçне кам тивĕçлĕ хак патăр-ха сана.

– Тавах сире çавăншăн.

– Ну юрĕ, ытти хутсене пăхкаласа илер-ха.

Прокурор тепĕр хуçлатнă хута сарса пăхрĕ те хăранипе сăнран та улшăнса кайрĕ.

– Мĕн çырнă кунта?! Юрать-ха, патша аллине лекмен. «Таçтан айккинчен тупăннă шакла пуç, каçăр сăмса, ахалех пĕртанлăх пирки пуплешетĕн. Вăл нихăçан та пулас çук. Барщинăна мĕншĕн кĕскетрĕн тата? Хресченсене те çĕр парасшăн. Ылханатпăр сана, тăнран кайнă хресчен патшине...»

– Кам алă пуснă вара? – ыйтрĕ кĕпĕрне пуçлăхĕ.

– Çук, никам та пусман... Ăçтан хăйса пусăн-ха çакăн пек хут айне.

– Патшан тăшманĕсем кунта та пур иккен. Раççей çĕнĕ йĕркесене йышăнасшăн мар.

Губернатор сĕтел çинчен пĕр хутне илчĕ те вулама пуçласанах кулса ячĕ:

– Итле. Сана та манман курăнать. «Пирĕн полицмейстер Лукич ялан çурхи автан пек, хитре хĕрарăма курсан ĕç пирки мансах каять. Вăрăсемпе ӳсĕрсене Лукич питĕ килĕшет. Çакă автан пуçлăх чух хулара йĕрке пулас çук». Вăт сана кĕпĕрне прокурорĕ. Çак çĕр çинче пурте çылăхлă иккен.

– Парăр-ха, пăхса илем. Кам çырма хăйнă вара çапла.

– Алă та пусман, хăй сăнне те ӳкерсе паман.

– Пурпĕрех шыраса тупатăп. Кăтартăп-ха вĕсене раксем ăçта хĕл каçнине, – хĕрсе кайрĕ прокурор.

– Лăплан ĕнтĕ. Вут хумасăр тĕтĕм тухмасть теççĕ вĕт. Çынсем куççăр мар, кураççĕ. Вообщем, эпĕ çапла шухăш тытрăм: çакă ещĕк малашне те урамрах çакăнса тăтăр. Çырусене вуласах тăрăпăр, хамăр çинчен мĕн шутланине лайăхрах пĕлĕпĕр. Вăл çеç те мар-ха, çил хăш енчен вĕрнине те чухлама пулĕ. Мĕн çырни хамăр хушăрах юлĕ. Çырччăр. Авторсене шыраса хăратса пĕтерер мар. Хут чăтать вăл.

– Пултăр эппин çапла. Çырса йăпанччăр.

Шăп çак самантра Скворцов купца пырса кĕчĕ. Юлашки хыпарсене илтсен чăтса тăраймарĕ курăнать, вĕçтерсе те çитрĕ.

– Ырă кун пултăр сире. Сергей Лукич, уйрăмах сире саламлатăп. Кун пеккине кĕтменччĕ. Пурнăçу ăнать сан... Пыл та çу.

– Тавах ыр сăмахшăн. Патша хушнипе ĕнтĕ. Иосиф Янович та хирĕç пулмарĕ.

– Вăл сирĕн ĕç-ха. Ман пирки вара? Хут çинех çырса панăччĕ вĕт-ха.

– Вуларăмăр ăна,– терĕ губернатор.– Санран илнĕ укçана тавăрса паратăп терĕ вăл. Патша умĕнчех.

– Ĕненме çук ăна. Икĕ çул улталаса пурăнчĕ. Халĕ вара урăлма пĕлмесĕр ĕçсе выртать. Никама та йышăнмасть тет.

– Сергей Лукич, ку веçех сан ĕç. Патша умĕнче панă сăмаха пурнăçлатех ĕнтĕ. Канцлерĕ тата пĕтĕмпех çырса пычĕ. Тĕрĕслеме шут тытсан... Ку патшаран темĕн те кĕтме пулать, хăш еннелле ярса пусассине пĕлме çук. Дворянсене те Çĕпĕре ăсатать, çичĕ фельдмаршала отставкăна ячĕ, Суворова та

пысăка хумасть. Виççĕр генерала тивĕçлĕ канăва ăсатнă вĕтха вăл! Унчченхи ирĕклĕ вăхăт иртсе кайрĕ пулмалла. Текех хамăр утăмсене те шухăшларах пусма тивет.

Кĕпĕрне пуçлăхĕ çапла калаçнине Скворцов пĕрремĕш хут илтрĕ. Вăл кăштах улшăннă пек те туйăнса кайрĕ. Темле çĕнĕлле шухăшсем пур пек.

– Тен, патша çакăн пек пулни вăл япăх та мар. Раççейре йĕрке çуккă вĕт. Пĕлесчĕ сирĕн купцасене мĕнле йывăррине. Пурте укçа сăптăрса илесшĕн: жандармĕ те, полицмейстерĕ те, судйи те, прокурорĕ те... Çак харампырсене париччен хула хыснине ытларах хунă пулăттăм, – терĕ тарăхса çитнĕ купца.

– Кун пек вăлтса каланине мĕнлерех ăнланмалла вара. Мана та çавсен шутĕнчех тесшĕн мар пуль те? – ыйтрĕ прокурор кăмăлĕ хуçăлнине пытараймасăр.

– Мĕнле шутлатăр, çапла ăнланăр. Тутлă çиес текен темĕн чухлех, ĕçлесе пурлăх тăвакан сахал. Çакă вăл мана çеç мар, ахаль çынсене те самаях тарăхтарать, хресченсене пăлхава çĕкленме хистет.

– Ав мĕнле шухăшсемпе пурăнатăн эсĕ. Тĕрĕслĕх шыратăн эппин. Адвоката кăна каймалла сан, – кулса илем пекки турĕ Сергей Лукич.

– Эпĕ адвокат пулсан, эсĕ вара, Сергей Лукич, пĕр ĕç те выляса илеймĕн. Сан шăпрах тăрсан та юрĕ.

– Мĕскер эсир уçăмлăн калаçмастăр çак. Каллех темле шахвăртса та пытарса. Ĕç пирки калаçăр-ха эсир, – терĕ Иосиф Янович.

– Çĕнĕ лавккасем ретпех лартса тухас тенĕччĕ. Пулмарĕ ĕнтĕ. Укçам çунса кайрĕ. Илесси те паллă мар.

– Парать ĕнтĕ, чысне пĕтĕмпех çухатман пуль. Сергей Лукич, ыранах чĕнсе калаç-ха унпала, Çĕпĕр çулне аса илтерме те ан ман.

– Калаçма пулĕ-ха. Анчах мĕнле тĕллевпе çавăн чухлĕ укçа тыттарнă-ха вăл прокурора? Панă пулсан мĕншĕн кăшкăрашса çӳремелле. Хăв та айăплă эсĕ. Прокурор хӳттипе пурăнас килнĕ ĕнтĕ сан. Халĕ вара манăн татса пама тивет.

– Тăрăш, Сергей Лукич. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ вĕт. Мĕнле майпа прокурор пулса тăнине сиссе те юлаймарăн курăнать. Кунта пирĕн тӳпе те çук мар.

– Ну, çитет сире вăлтса калаççа! – тарăхса кайрĕ губернатор. – Кам умĕнче тăнине манса кайрăр-им. Веçех каласа парăр. Мĕн пулса иртнĕ унта сирĕн? Канцлер та сире майлă тăрăшрĕ.

Скворцов пит иккĕленсех тăмарĕ. Мĕн пĕлнине, канцлер

аллине ларас тесе Сергей Лукич мӗн тунине веҫех каласа пачӗ.

– Ҫак ӗҫре ман хӗрӗмӗн ту́пи те пур. Сире лайӑх пултӑр тесе ӗнтӗ чармарӑм. Халӗ вара тав сӑмахӗ вырӑнне ҫак кӑмӑлсӑр калаҫӑва итлесе тӑма тивет, – вӗҫлерӗ прокуроршӑн меллех мар сӑмахне купца.

– Темле вӑрттӑнлӑх пуррине сисрӗм ҫав. Анчах кун пеккине кӗтменччӗ. Сергей Лукич, ҫакна мӗншӗн пытарма шутланӑ-ха эсӗ? Ҫӗнӗ ӗҫе таса кӑмӑлпа тытӑнасшӑн пулмарӑр.

– Каҫарӑр мана, Иосиф Янович. Сирӗн умӑрта айӑплӑ эпӗ. Каласа пама хӑюлӑх ҫитерейммерӗм. Халӗ вара хама самай ҫӑмӑлрах туйма пуҫларӑм. Урӑх ман нимле вӑрттӑнлӑх та ҫук. Каҫарӑр мана, – йӑвашшӑн пӑхса илчӗ Андронов губернатор ҫине.

Пур япалан та вӑхӑчӗ пур. Сӑмахӑн та ҫавах. Уйрӑмах ҫакна мӗн те пулин ыйтнӑ чухне асра тытмалла. Кун пек меле Скворцов аван пӗлет.

– Иосиф Янович, кӑштах хута кӗреймӗр-ши? Ҫӗнӗ лавккасем лартма ҫӗр ыйтса хула думине заявлени тӑратрӑм. Меллӗрех вырӑнта илесчӗ. Хула пуҫлӑхне ман пирки тимлӗрех пулма хушса калаймӑр-ши? Ахаль тумӑп.

– Юрать. Купцасене пулӑшмалла. Вӗсем тӑрӑшмасан хысна та пушанса юлать.

– Пурте ун пек ӑнланмаҫҫӗ ҫав. Пирӗн ӗҫ хисепрех мар. Кӗвӗҫ чунсем те тупӑнсах тӑраҫҫӗ. Ну юрӗ. Тавах сире, Иосиф Янович. Сергей Лукич, сана та шанатӑп. Пит ют ҫынах мар вӗт, – тесе Скворцов тухса кайрӗ.

Ун хыҫҫӑн губернаторпа прокурор чылайччен канашласа ларчӗҫ. Анчах Иосиф Янович унччченхипе танлаштарсан кӑшт сивӗреххӗн калаҫма пуҫларӗ. Скворцов килсе кайни ун кӑмӑлне самаях улӑштарчӗ курӑнать. Юлашкинчен вара ҫапла каларӗ:

– Хӑвӑра ӗҫпе кӑтартӑр. Ытти ман кӑмӑла ҫав териех хумхантармасть. Пулса иртни кая юлтӑр. Малалла пӑхмалла. Акӑ сире икӗ ҫыру, иккӗшне те хресченсен ячӗпе ҫырнӑ. Пӗринче, ав, улпут майри хӑй патӗнче ӗҫлекен хӗрарӑмсен ҫӳҫне тӑпӑлтара-тӑпӑлтара илни ҫинчен, тепринче – сунарҫӑсем тырӑ пуссине таптаса пӗтернине ҫырса кӑтартнӑ. Пурне те явап тыттармалла. Патша ҫапла хушса хӑварчӗ. Кӑтартӑр хӑвӑра. Судьясем те ҫывӑрса лараҫҫӗ. Ҫӗнӗ шӑпӑрӑн ҫӗнӗлле шӑлмалла ӗнтӗ.

– Юрать. Ҫитес кунсенчех уесрисене чӗнсе илсе пуху ирттерем-ха, кунтисемпе паллашам. Эсир асӑрхаттарнине пӗтӗмпех шута илӗп, кӗпӗрнере мӗн пулса иртнине пӗлтерсех

тăрăп, – терĕ те Сергей Лукич сывпуллашса тухса кайрĕ.

Губернатора çаплипех сĕтел çинче выртакан хутсем канăç памаççĕ. Вĕсене тыта-тыта пăхрĕ те шăнкравларĕ, секретарьне аслă цирюльнике шыраса тупма хушрĕ.

Айдаров ăсталăхне кĕпĕрне пуçлăхĕпе пĕрлех ыттисем те асăрхарĕç ĕнтĕ. Кĕске вăхăтрах çав тери усăллă ĕç туса ирттерчĕ вĕт. Кĕпĕрне чысне хӳтĕлерĕ тесен те ытлашши мар. Çакă вăл уйрăмах балра лайăх палăрчĕ. Çынсем патша умĕнче пачах урăхла курăнчĕç. Петербургрисенех çитес çук та, çапах та сумлă хăнасем умĕнче намăс пулмарĕ. Пулăшакансем лешсен хушшинче те тупăнчĕç. Бала патша свитти пыриччен пĕри кĕпĕрнери чиновниксемпе майрисене ретĕн-ретĕн тăратса тĕрлĕрен ташă вĕрентрĕ, пĕр сехете яхăнах. Кĕввине вара тĕп хуларан килнĕ музыкантсем каларĕç.

Бала чĕннисем хушшинче аслă цирюльник та пурччĕ, анчах ташша тухма хăяймарĕ, нихăçан курман япала мар-иха. Ытларах айккинчен пăхса тăчĕ, кам мĕнле тумланнине курса киленчĕ, хăй ĕçне те асăрхарĕ ĕнтĕ. Катерина Беловодова патне пымарĕ, унталла чун туртмасть. Çывхарсан та калаçмалли сăмах тупăнас çук. Лешĕ вара, чăнах та, хăйне патша хĕрĕ пекех тыткалать. Амăшĕ ăна пĕчĕкренех çапла вĕрентсе ӳстерни сисĕнетех çав. Ахальтен мар ĕнтĕ ун çине канцлер та куç хыврĕ, ташша та чĕнчĕ. Маня Скворцова та кĕтрĕ пуль те, лешĕ ун çине пăхмарĕ, Сергей Лукич та юнашар мар, патшана çывăхрах пулма тăрăшрĕ. Йĕрки çапла ĕнтĕ. Губернатор та çавăнтах. Патши вара пĕр ташă хыççăн чаплă пукан патне пырса тăчĕ, анчах лармарĕ, кĕпĕрне ертӳçисемпе калаçса илес терĕ пулас. Тутлă эрех сĕнсе çӳрекенсенчен пĕри Павел патша патне çывхарчĕ те подносне ун умне тытрĕ. Императортан кăшт хыçаларах тăракан тĕреклĕ арçын хăвăрт çывхарчĕ те официанта айккинелле çавăтса кайрĕ. Патшан хăйпе пĕрле çӳрекен ятарлă официант пур иккен. Савăчĕ те урăхласкер. Кăмăл туса ыттисемпе пĕрлех ĕçсе пачĕ...

Ĕнерхи бал нихăçан та асран тухас çук, хула пурнăçне самаях урăхлатса хăварчĕ. «Пултаруллисем те, илемлисем те çителĕклех вĕт-ха пирĕн,– кайрĕ шухăша кĕпĕрне пуçлăхĕ.– Пурăнма пĕлменни пĕтерет. Ниепле те Европа шайне лараймастпăр. Тен, Павел патша хушнисене пурнăçласа пырсан ăна та хăваласа çитĕпĕр. Раççейĕн пуласлăхĕ пурах ĕнтĕ».

– Ваше благороди, эсир чĕннипе килтĕм, – илтĕнчĕ Айдаров сасси. Кантăкран пăхса тăракан губернатор çаврăнса тăчĕ те аслă цирюльнике иртсе ларма сĕнчĕ, кăмăлĕ мĕнлереххине ыйтса пĕлме тăрăшрĕ.

– Нимĕн калама та аптратăп. Çак кунсем маншăн тĕлĕкри пекех туйăнчĕç. Чылай япалана тавçăрса та илеймерĕм, патша умĕнче хирĕç калама хăяймарăм, – терĕ Айдаров.

– Мĕн пирки эсĕ?

– Ман чăнах та авланма тивет-и вара? Е ку вылявлă япала кăна.

– Мĕскер эсĕ, иккĕленсе тăратăн-им тата? Çураçнă вĕт. Ыйтăва патша хăй татса пачĕ. Ун сăмахĕ пуриншĕн те саккун.

Чăваш каччи ним калама аптраса тăчĕ. Никампа калаçса пăхма та çуккă вĕт-ха, ашшĕ те аякра. Каччă чĕри туять-ха, çак ĕçре ашшĕ чăрмав кӳрес çуккине. Вăл хăйне: «Мĕншĕн чăваш пулса çуралнă-ши?» – тесе ятлаçнине Ванькка пĕрре çеç илтмен. Ывăлĕ урăхларах ӳстĕр тесех унпала вырăсла калаçма тăрăшатчĕ.

– Нивушлĕ курман-пĕлмен çынна качча илмелле вара манăн? Юратнă хĕр пур çĕртенех, – хушса хучĕ Айдаров.

– Çамрăк-ха эсĕ, ялти хĕрпе пĕрлешсен çулу пӳлĕнессе чухламастăн курăнать. Пуласлăх пирки шутламалла. Питĕ кирлĕ ĕçе тытăнатăн вĕт. Православи тĕнне сарассинчен пахи мĕн пултăр-ха. Хăв, ав, чăвашсем пирки калаçатăн, пулăшасшăн мар.

– Атте калани те хăратать.

– Мĕн пирки вара?

– Çав тери хитре хĕрарăм пурнăçра пит шанчăклах мар, тетчĕ вăл. Çак кунсенче хам та куртăм ĕнтĕ, хăй илемĕпе киленме юратакан хĕрарăм ĕç пирки шутламасть. Унăн тумланмалла, якалмалла та ыттисен умĕнче пăркаланса çӳремелле. Хитре арăма тумлантарма енчĕк çӳхе çав. Чухăн эпĕ.

– Мĕскер эсĕ? Патша пани шутра мар-им тата?

– Ун уссине курма пуçласси часах мар-ха. Пирĕн таврара ялĕсем те чухăнскерсем кăна.

– Чиркӳ çумĕнчисем пĕри те япăх пурăнмаççĕ-ха вĕсем. Хам та пулăшса пырăп. Халĕ вара леш хут пирки. Мĕнле пăтăрмах сиксе тухрĕ-ха?

– Эпĕ тӳрех тавçăрса илтĕм, анчах калама хăяймарăм. Пĕтĕмпех канцлер ĕçĕ вăл. Çĕр хута пычĕ те ман тусăма курсан вăйпах хăй патне илсе тухса кайрĕ. Эпĕ хирĕç тăни килĕшмен ĕнтĕ ăна. Юрать-ха, Хĕвелпи тарса ĕлкĕрнĕ.

– Канцлерпа Сергей Лукич хушшинче вара мĕн пулса иртнĕ?

Айдаров сасартăк тутине çыртрĕ те губернатор çине хăравçăн пăхса илчĕ. «Мĕн тăватăп-ха эпĕ. Патша прокурора

лартнă Сергей Лукич пĕлсен? – çиççе илчĕ пуçра. – Тен, шарламасан та юрать».

– Вĕсем пирки калама пултараймастăп çав. Мана çывăх çынсем мар вĕт.

– Ну, юрĕ эппин. Темле вăрттăнлăх пурах-ха вĕсен хушшинче. Канцлер ахальтен тăрăшас çук.

– Ваше благороди, Беловодовăпа хĕрĕ килчĕç. Сирĕнпе калаçасшăн, – пĕлтерчĕ секретарь.

– Юрать. Тепĕр минутран кĕччĕр. Иван, эсĕ юнашар пӳлĕме кĕрсе лар-ха. Кайран хамах чĕнсе илĕп.

Беловодова кĕнĕ-кĕменех ятлаçма тытăнчĕ. Пуринчен ытла Айдаров чăваш пулни кӳрентерет иккен ăна.

– Çакăн пек упăшкапа вĕсене выçлă-тутлă пурнăç кăна кĕтет. Ман хĕре тивĕç мар вăл çав цирюльник.

– Шутласа калаçăр-ха эсир, – пикенчĕ лăплантарма кĕпĕрне пуçлăхĕ. – Патшапа архиепископ пил панă хыççăн урăхла юрать-и вара. Ăçтан пырать-ха çакă хăвăра çав тери пысăка хурасси? Сирĕн пурĕ миçе хресчен вара?

– Тарçă таврашĕ... Улатăрта эпир унсăрах паллă çынсем.

– Айдарова вара патша çĕр çын парнелерĕ. Аллисем те ылтăн. Çак кунсенче хăйне лайăх кăтартрĕ, ĕçĕпе тĕлĕнтерчĕ.

– Çук ĕнтĕ, ĕмĕтленни пурнăçланмарĕ. Çӳç кăтралатакан кĕрӳ? Кулăшла.

– Анне, кунта хамăр патăрти мар иккен. Çӳç касакана та хисеплеççĕ. Ĕнерхи балра та сисĕнчĕ. Улпут майрисем те ун ятне асăнаççĕ.

– Кирлĕ мара перкелешсе ан тăр-ха, – вăрçса илчĕ хĕрне Беловодова. – Эсĕ луччĕ канцлер мĕн каланине пĕлтер-ха. Ман хĕрĕм ăна та питĕ килĕшнĕ.

– Петербурга пыма хушрĕ вăл мана.

– Ак тамаша, мĕн тума тет вара?

– Хула курма, унти пурнăçпа паллашма тет.

Иосиф Янович, канцлер мĕнлерех çын иккенне чухлаканскер, ним пытармасăр каласа хучĕ:

– Унне пĕр сăмахне те ан ĕненĕр. Хăрушă çын вăл. Тата мĕн каларĕ вăл сана?

– Патша хĕрĕ тесех пурăн терĕ.

– Ав мĕнле иккен? – пытараймарĕ тĕлĕннине губернатор. – Катерина ячĕпе усă курасшăн мар-и-ха вăл. Унтан темĕн те кĕтме пулать. Патшана хирĕçле ĕçе те хатĕр вăл. Пăркаланма пăрахăр эсир. Урăхла шутласа çылăха ан кĕрĕр. Пĕрлешмелле те пурăнмалла.

– Нивушлĕ ман хĕрĕн çав начаркка Цивильскине каймалла вара?

– Çук ĕнтĕ. Патша хушнипе Ивана авланнă хыççăнах архиепископ патне куçаратпăр. Вăхăт çитсен Варсонофий атте ăна пачăшкăна лартĕ. Çавăн пек çын мана хама та питĕ кирлĕ, чăвашсемпе ĕçленĕ чух канашласа илме. Тĕрĕссипе каласан, Айдаров вăл тепĕр вырăсран та ирттерет. Пуласлăхĕ пысăк унăн.

– Темшĕн нимĕн те шарламасть-çке, пăрăнса кăна çӳрет. Халĕ те, ав, вăл ĕçленĕ çĕре кĕрсе тухрăмăр, çуккă. Темле хĕрпе тухса кайрĕ терĕç. Ăçта çӳрет-ха вăл пулас кĕрӳ.

– Кунтах вăл, – терĕ губернатор юнашар пӳлĕм алăкне уçса. – Ваня, тух-ха. Сана шыраса килчĕç, тунсăхласа çитнĕ теççĕ. Эсĕ мĕскер, тарса çӳреместĕн пуль те?

– Ав ăçта иккен вăл! – кăшкăрса ячĕ Беловодова Айдарова курсан. – Эпир вара ăна хула тăрăх шыраса çӳретпĕр. Ну, ырă кун пултăр, кĕрӳ.

– Ырă кун пултăр хăвăра та. Мĕнле чĕнес? Ятăра та пĕлместĕп вĕт.

– Анне тесен те юрать, патша парнеленĕ кĕрĕвĕм. Кил кунтарах, туй пирки калаçма та вăхăт ĕнтĕ.

– Çав тери тĕрĕс шухăш. Калаçса татăлăр та ĕçе тытăнăр. Хам та пулăшăп, – терĕ губернатор.

– Туйне чаплă ирттерер. Алатырь çыннисем курччăр Екатерина Петровна Беловодова мĕнле качча тухнине! Хĕрĕмшĕн нимĕн те хĕрхенместĕп.

– Вара вăл Екатерина Айдарова пулса тăрĕ, – хавхалантарса каларĕ Иосиф Янович.

– Екатерина Айдарова... Аптрамасть, кун пек те аван янăрать.

Хĕр чунĕ паллă ĕнтĕ, уншăн туй сăмахран пахи çук. Амăшĕн кăмăлĕ улшăннине сиссен Ваня та илемлĕреххĕн курăна пуçларĕ. Катерина ун çине ăшшăн пăхнине каччă асăрхарĕ ĕнтĕ. Çапах та ăшри вăя пухса:

– Килĕшместĕп эпĕ, – тесе татса хучĕ.

– Мĕн терĕн эсĕ? – ыйтрĕ губернатор каччă çине шăтарас пек пăхса.

– Катеринăпа мăшăрланма килĕшместĕп эпĕ,– çĕнсе илчĕ хăйне Айдаров. Хирĕçле сăмаха каласси çăмăл мар иккен, уйрăмах çакăн пек çынсем умĕнче. Шухăшĕ пуçа тем пек хĕссессĕн те чĕлхе хăюллăх çитерейместь. Çавна пулах вара кайран кулянса çӳреме тивет. Ма вăхăтра калаймарăм-ши тесе ӳпкелешсе илнĕ самант кашниннех пур.

– Мĕскер эсĕ, ман хĕрĕме тиркетĕн-им тата? – сиксе ӳкрĕ Беловодова. – Ун пирки мар, хăв пирки ытларах шутла эсĕ!

– Урăххине юрататăп эпĕ, – терĕ Ваня.

– Ах, ăна юрату кирлĕ! Пурăнма тытăнсан юрату та, ытти те пулĕ.

– Анне, тен, çине тăма кирлех те мар, – чарма пикенчĕ Катерина амăшне.

– Эсĕ шăп тăр, тăм писмен. Калаçу кунта хамăр чыс пирки пырать. Патша хĕрĕ пек ӳстертĕм те, халĕ вара тиркекен те тупăнчĕ. Кам тетĕр?

– Чимĕр-ха, чĕлхе вăл шăмăсăр, – хутшăнчĕ Иосиф Янович калаçу чĕрре кĕрсе каясса сиссе. Хăйĕн те сасси улшăнчĕ, татсах каласа хучĕ. – Каялла çул çук. Патша мĕнле хушнă, çапла тумалла.

– Ман юратупа патша хуçа мар.

– Ав мĕнле калаçать вăл! – хĕрсе кайрĕ каллех Беловодова. – Чимĕр-ха, ун хĕрĕ çакăнта крыльца умĕнче кĕтсе тăраканни мар-и-ха?

– Апла вăл кунтах иккен. Пăхса илесчĕ ун çине. Мĕнлерехскер вара вăл? – ыйтрĕ губернатор.

Çак сăмахсене илтсен Айдаров чĕри лăштах пулчĕ. Вара вăл Хĕвелпие чĕнме чупсах тухса кайрĕ.

– Кур-ха ăна, ашак пекех чăхăмçă, хăйĕннех перет, ютйăх çынни темерĕн. Патша хушнинчен, тархасшăн, ан пăрăнăр-ха, Иосиф Янович, – çине тăчĕ пулас хуняма кӳреннине пытараймасăр.

– Анне, пĕр-пĕрне юратаççĕ пулсан чăрмантарма кирлех-ши? Мана вара юратакан та çук.

– Катерина, тĕрĕссине кала-ха, Ваня сана килĕшет-и? Е чуну пачах та туртмасть? – ыйтрĕ кăштах кулса илсе кĕпĕрне пуçлăхĕ.

Катерина хĕрелсе кайрĕ. Кун пирки амăшĕ те ыйтманччĕ вĕт-ха. Беловодова та урăхларах пăхса илчĕ. Яланах хăй шухăшне кăна шута илекенскершĕн çак ыйту уншăн та кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕ. Катерина мĕн калĕ-ши?

– Вăтанса ан тăр, кала, –васкатрĕ Беловодова.

– Килĕшет вăл мана, – илтĕнчĕ лăпкă сасă.

Çав самантра лешсем кĕрсе тăчĕç. Хĕвелпи тĕрлесе капăрлатнă шурă кĕпепе, вăрăм çӳçне çивĕтленĕ. Кĕнĕ-кĕменех чĕркуçленсе ларчĕ.

– Хĕрĕм, тăр, – хушрĕ губернатор, – кунтарах ирт. Айдаров Иван, кала-ха, малашлăх пирки шухăшларăн-и?

Патша хушнине хирӗҫ кайсан хӑвна мӗнле пурнӑҫ кӗтнине чухлатӑн-и?

– Шухӑша улӑштармастӑп. Юратнӑ ҫын умӗнче чысӑма варалас теместӗп, – терӗ Ванькка Хӗвелпие хӑй патнерех туртса илсе.

Губернатор та аптраса ӳкрӗ. Мӗн тумалла-ха? Патша хушса хӑварнине пурнӑҫламаллах вӗт.

– Кун пек пулсан эпӗ ыранах патшана пӗлтеретӗп, – персе ячӗ Беловодова тарӑхнӑ сасӑпа.

– Анне! – кӑшкӑрса ячӗ Катерина. – Пӑх-ха вӗсем ҫине. Юратаҫҫӗ вӗсем. Манӑн та юратас килет. Анчах ӑҫта-ши вӑл ман юрату?! Чӑрмантармалла мар вӗсене, телей кӑна сунмалла.

– Эсир те ҫав, – сиввӗн пӑхса илчӗ губернатор ҫине Беловодова. – Пачӑшка тухать, советнике лартатӑп... Цивильскинчи цирюльникрен ыррине кӗтме ҫук ӗнтӗ. Катерина! Кайрӑмӑр кунтан. Текех кунта пирӗн нимӗнле ӗҫ те ҫук. Ыранах – Петербурга!..

– Лӑпланӑр! Кӑшкӑрашма пӑрахӑр! Кам умӗнче тӑнине мантӑр-им? – аса илтерчӗ кӗпӗрне пуҫлӑхӗ. Хут ҫине хӑвӑрттӑн темӗскер ҫырчӗ те секретаре чӗнчӗ. Хутне ӑна тыттарсан Хӗвелпие ӑсатса яма хушрӗ.

– Ванькка, кӗтетӗп сана, – терӗ тухса каяс умӗн Хӗвелпи.

* * *

Губернатор патӗнчен тухсан Хӗвелпие кӑштах ларма хушса секретарь куҫран ҫухалчӗ. Йывӑр самант. Лере мӗнле калаҫу пыни хулӑн алӑк витӗр сӑрхӑнса тухакан сасӑсенченех паллӑ. Вырӑсла лайӑх пӗлнӗ пулсан, тен, сӑмаххисене те уйӑрса илетчӗ Хӗвелпи. Губернатор «нет!» тенине ҫапах та ӑнланчӗ. Тепӗр алӑкӗнчен иккӗн кӗчӗҫ. Секретарь теприне: «Вот она. Проводите её», – терӗ. Лешӗ «пошли» тесе аллипе сулчӗ.

Ҫуртран тухсан арҫын Хӗвелпие крыльца умӗнче тӑракан ҫӑмӑл тӑрантас ҫине ларма хушрӗ. «Ӑҫта илсе каяҫҫӗ вара вӗсем мана? Мӗншӗн лашапах? Мӗн калам-ши?» Ҫапах та кирлӗ сӑмах тупӑнчӗ:

– Куда?

– Домой! – терӗ вӑтам ҫулхи тӗреклӗ арҫын.

Кучер тилхепене карт! туртрӗ те вӑрӑм уралла рысак малалла тапса сикрӗ.

Кун пек хытӑ чупакан лашана Хӗвелпи пӗрремӗш хут

курать. Акă, хула та хыçала тăрса юлчĕ. Халĕ паллă ĕнтĕ, çул Çĕрпӳ еннелле выртать. Мĕн тумаллине вара хĕрача ниепле те тавçăрса илеймест. Тăрантас çинчен сиксе юлĕччĕ, май тухас çук, çаксенчен епле тарса ĕлкĕрĕн-ха. Юнашар лараканни тата пĕрмаях Хĕвелпи çине пăха-пăха илет. «Тарасран хăрать пуль ĕнтĕ, – шутларĕ хĕрача. – Нивушлĕ çапла уйăрса ячĕç пире. Вăйпах авлантараççĕ-ши вара Ванькkана?» Губернатор «нет!» тесе кăшкăрни ниепле те хăлхаран тухмасть. Каччă халĕ хăйпе хăй те хуçа мар, губернатор аллинче. «Ăçтан сиксе тухрĕ-ха çак пăтăрмах. Мĕншĕн патша куçне тĕл пулчĕ-ши вăл? Мĕншĕн камит кăтартакансемпе явăçса кайнă-ши? Тен, эпĕ чăнах та ун мăшăрĕ пулма тивĕç те мар? Халĕ вăл патшалăх çынни вĕт. Хулара тухса çӳремеллисем те пулĕç. Ман пек вырăсла пĕлмен арăм уншăн чăрмав кăна. Мĕнле чаплă майрасемпе начальниксем пыраççĕ ун патне. Пĕри çӳçне капăрлаттарасшăн, тепри тумтир çĕлеттересшĕн. Аслă цирюльник вĕт-ха вăл».

Çапла ăшра хăйпе хăй калаçса пынăçемĕн Хĕвелпи çул вăрманалла кĕрсе кайнине асăрхаман та. Ку вырăна пĕлет-ха вăл, Атăл та инçех мар.

– Тпру! – терĕ те кучер лашине чарчĕ. – Лошадь устала.

– Подождём, – тесе тепри урапа çинчен анчĕ те карăнса илчĕ. Унтан çул хĕрринче ӳсекен кĕрен чечеке татса Хĕвелпие тыттарчĕ, ăна хулĕнчен тытса анма сĕнчĕ. Лаша айккинерех пăрăнса курăк çиме пуçларĕ. Леш арçын тата тепĕр чечек татрĕ те аллине хĕрача патнелле тăсрĕ. Илмесĕр тăма май çук. Чечек вĕт-ха. Çынни те ăшă куçпа кулаpаххăн пăхать. Акă вăл сасартăк хĕре ыталаса илчĕ те чуптума пикенчĕ. Хĕвелпи пăрăнма ĕлкĕрнĕччĕ, анчах лешĕ вăйлă аллисемпе пуçран ярса тытрĕ те тутаранах чуп турĕ. Хĕрача арçынна тĕксе яма хăтланчĕ, капкăна çакланнă кайăк пекех пăркаланчĕ, лешĕн тутине çыртрĕ, аллипе питне чăрмалама тытăнчĕ. Арçын Хĕвелпие айккинерех йăтса пынă чухне таврана: «Пулăшăр-ха! Ванькка! Ăçта эсĕ?!» – тесе кăшкăрни сарăлчĕ. Лешĕ хĕрачана тĕм хыçне туртса ӳкерчĕ те тукмак пек чышкипе пуçран çапа-çапа илчĕ. Хĕвелпи куçĕнче хура ункăсем выляма тытăнчĕç, пуç та вăйлă çил вăхăтĕнчи вăрман пек кашлама пуçларĕ, алăсем те итлеми пулчĕç...

Тăнсăр выртакан Хĕвелпи куçĕсем çур сехетрен уçăлчĕç. Шăмшак темле усал чир силлесе кайнă пек ыратать. Акă вăл чавсипе тĕртĕнсе тăрса ларчĕ. Мĕн пулса иртнине тинех тавçăрса илчĕ. Кĕпе арки те юнланса пĕтнĕ, курăк çинче çапăçнине пула çанăсем симĕсленнĕ. Лешсем вара çуккă, пă-

рахса кайнӑ ӗнтӗ. Хӗвелпи чӗркуҫленсе ларчӗ те кӑшкӑрсах макӑрса ячӗ. Текех вӑл хӗрача мар, ун чысне ют ҫын таптарӗ. Ура ҫине тӑрсан чутах тӳнсе каятчӗ, пуҫ ҫаплипех кашлать, ӑш пӑтранать, хӑсас та килет пек. Вара вӑл ҫи-пуҫне кӑштах майларӗ те хуллен ҫул ҫине тухрӗ, Атӑл хӗрнелле уттарчӗ. Кайсан-кайсан ларса та канчӗ. Тӑнӑччӗ кӑна, хула енчен лав курӑнса кайрӗ. Акӑ хӑваласа та ҫитрӗҫ. Тутарсем иккен, тумӗнчен те, калаҫнинчен те паллӑ.

– Кая барасан? – ыйтрӗ ватӑраххи.

Хӗвелпи «кая» сӑмахранах тавҫӑрса илсе:

– Ҫӗрпӳ, Цивильски, – терӗ.

– Син чуваш кызы мы? – сас пачӗ ҫамрӑкки.

– Чӑваш, чӑваш.

– Утыр... Лар кунды, – аллипе урапана ҫапса кӑтартрӗ ватти.

Мӗн тумалла-ха ӗнтӗ. Каллех тапӑнсан ӑҫта кайса кӗмелле?

– Ҫук, лармастӑп. Эпӗ ҫурранах, – терӗ те ирттерсе ячӗ. Лешсем лашине васкатрӗҫ. Хӗвелпи вӗсенчен юлас марччӗ тесе пӗтӗм вӑйне пухса утрӗ, анчах лаша лашах ҫав, унӑн утти ӳсӗмлӗрех, пӗр ҫӗрте ҫул кукӑрӑлсан лав куҫран ҫухалчӗ. Каллех пӗр-пӗччен. Юрать-ха, тата тепӗртак кайсан умра ҫутӑ курӑнса кайрӗ; вӑрмантан тухсан Атӑл та юнашарах. Акӑ улӑхлӑ вырӑн пуҫланчӗ. Хӗвелпи ҫитнӗ ҫӗре каҫмалли вырӑнта виҫӗ лав кӗтсе тӑрать, леш тутарсем те кунтах, пысӑк сулӑ кунталла ҫывхарни те курӑнать, инҫех те мар. Хӗвелпи васкасах шыв хӗррине пычӗ те кӗрсе тӑрсах питне ҫуса илчӗ, ывӑҫласа илсе тӑраниччен ӗҫрӗ, унтан юнланнӑ кӗпе аркине чӳхесе илчӗ, анчах хӗрлӗ тӗс тасалсах пӗтмерӗ. Сулӑ та ҫитсе чарӑнчӗ, лавсене те майлаштарса тӑратрӗҫ; ҫыннисемпе пӗрле Хӗвелпи те вырнаҫса тӑчӗ. Ҫав самантра пӗри укҫа пуҫтарма пуҫларӗ; лешсем пурте тӳлерӗҫ. Хӗвелпин укҫа ҫуккине курсан арҫын ӑна ятлаҫа-ятлаҫа сулӑ ҫинчен тӗксе антарма тытӑнчӗ, макӑрса тархасланине те пӑхмарӗ. Юрать-ха, Хӗвелпишӗн ватӑ тутар тӳлерӗ, ҫурӑмран шӑлса илсе: «Ан макӑр, ләплан», – терӗ. Сулӑ вырӑнтан хускалчӗ. Сарлака ҫурӑмлӑ арҫынсем урапа тапса авӑсма тытӑнсан хӑвӑртлӑх та ӳссе пычӗ. Атӑл варринелле ҫитнӗччӗ кӑна, сасартӑк Хӗвелпи пуҫӗнче юрӑ янраса кайрӗ, хӑй сисмесӗрех юрласа ячӗ:

Тӑхӑнтӑм, тумлантӑм, тухрӑм урама... Капланса килнӗ куҫҫуле ниепле те чарма ҫук. Тӑварлӑскер ҫӑвара лексен те юрӑ чарӑнмарӗ. Ҫак тунсӑхлӑ юрӑ ыттисен чунне те пырса ҫапрӗ, пурте калаҫма пӑрахсах итлерӗҫ. Юрӑҫи вара пӗрмаях юлса пыракан ҫыран ҫинелле пӑхать.

– Ах, Ванькка, Ваньккаҫăм, каҫарсам мана.

Сар ҫурта пек пĕвĕм пулас ҫук сана, – терĕ те шыва сикрĕ.

– Ах, юратнă тусăм, ма халь тин калан,

Сар ҫурта пек яштак пĕвў Атăла путсан, – илтĕнсе кайрĕ Ванькка сасси ишме пĕлменнине пула тўрех Атăл тĕпнелле анса каякан Хĕвелпие.

Ҫакна курсан ыттисем чупса пычĕҫ, тăварса кăкарнă лашасем те хускалса илчĕҫ, кĕсменпе ĕҫлекенсем те иккĕшĕ сиксе тăчĕҫ, анчах асли кăшкăрса чарчĕ, сулă хĕррине пыма хушмарĕ. Атăл ҫынни йĕркине пĕлет ĕнтĕ, сулă тайăлса каяс хăрушлăх та пур. Ку вырăнта шыв юххи те питĕ вăйлă, сыхланусăр пулмалла.

* * *

Ҫĕрпў тăрăхĕнче Айдар Ваҫлейне пĕлмен ҫын та ҫук пуль. Малтан вăл ҫĕвĕҫ шучĕпе ялсем тăрăх ҫўретчĕ, такама та кĕпе-тумтир ҫĕлесе паратчĕ, ҫўҫ касма та ăстаччĕ. Халĕ вара хулара ҫурт лартса пурăнма тытăнсан ытларах укҫаллăраххисене килĕштерет. Хăйпе пĕрле килтисене те ĕҫлеттерет. Хула пуҫлăхĕсемшĕн вара нимĕнле черет те ҫук. Шăпах ҫакăнта туптанă та ĕнтĕ ăсталăхне ун ывăлĕ Ванькка. Улми йывăҫҫинчен инҫе ўкмест тенĕ пек пĕчĕклех ĕҫе хăнăхса ўсрĕ. Халĕ вара ашшĕнчен те ирттерет.

Паян Ваҫлейшĕн питĕ савăнăҫлă кун, камит кăтартакансемпе тухса кайнă ывăлĕнчен ҫыру илчĕ. Пĕрре вуласа тухнипех Ванькка мĕн пирки ҫырнине лайăххăн ăнланса та илеймерĕ. Ҫўҫ касакана та цирюльник теҫҫĕ иккен унта. Те тĕрĕссинех ҫырать, те кăштах вăлтса. Патшапа калаҫнă тенине Ҫĕрпўре никам та ĕненес ҫук. Губернатор та хăй патне чĕнсе илсех калаҫнă иккен унпала. Чи тĕлĕнмелли вара пачах урăххи – Айдаров Ваньккан пуласлăхне патша хăй татса пани.

– Килĕр-ха кунта, – чĕнсе илчĕ Ваҫлей малти пўртре ҫĕлесе ларакан арăмĕпе кĕҫĕн хĕрне Аннана. – Ванькка мĕн ҫырнине вуласа парам-ха сире.

Ку хутĕнче вара васкамарĕ, шухăша кайса, чарăна-чарăна тăрса вуларĕ. Сăнĕнченех паллă, ывăлĕн шăпи мĕнле майлашăнса пынипе кăмăллă вăл. Аслă цирюльник тенинчен ытла пупа тухма май пурри килĕшрĕ ăна. Хисепĕ те пачах урăхла, ашшĕ пек ҫўҫ касса, тумтир ҫĕлесе пурăнни мар.

Аннана вара ҫак ҫырура пачах урăххи шухăша ячĕ:

– Апла эппин ман инке пуласси пачах урăх çын, Хĕвелпи мар. Миçе çул пĕрне-пĕри юратса пурăнчĕç, халĕ вара кунта вырăс майрипе килсе кĕрсен...

Васлей хĕрне пӳлсех хăй сăмахне пусларĕ:

– Çав хĕртен кăштах сивĕнтĕр тесе кăларса ятăм та ĕнтĕ килтен. Çук вĕт, Ванькканa шыраса тупнă вăл. Пĕрлешме пурпĕрех ирĕк памастăмччĕ вĕсене. Ял хĕрĕпе мăшăрланни пуласлăха пĕтерет, чăрмав кăна кӳрет.

– Ак тамаша, – чăтса тăраймарĕ арăмĕ, – мĕн калаçатăн эсĕ, Васлей. Кун пеккине илтменччĕ санран. Хăв ял хĕрне качча илнишĕн пăшăрханни те пур пек. Эсĕ манпа кăмăл-сăррине сискеленĕ-ха эпĕ, мĕншĕннине вара халĕ тин пĕлтĕм. Чăваша илнишĕн пăшăрханатăн иккен.

– Хамшăн мар, ывăлăмшăн çапла калатăп. Арăмĕ вырăс пулни пур енчен те меллĕ. Хăнара та çавах. Куртăм ĕнтĕ санпа тухкаласа çӳресе, – пăхса илчĕ Васлей арăмĕ çине. – Хăюл-лăрах, савăнăçлăрах пул тесе пайтах каланă сана. Эсĕ вара...

– Ах, сана савăнăçлă арăм кирлĕ эппин, – тарăхса кайрĕ лешĕ. – Ялсем тăрăх ытти хĕрарăмсемпе савăнса çӳрени çите-лĕксĕр-им, еркĕнсенчен тăранаймарăн-им? Мана нимĕн те пĕлмест тетĕн пуль. Пайтах илтнĕ, анчах шарламан, чăтнă. Вырăс майри ун пек иртĕхме паратчĕ тетĕн-и? Сăмах та чĕн-терместчĕ.

– Чарăнăр-ха эсир, кун пек вăрçнипе мĕн усси? – пыта-раймарĕ тĕлĕннине кĕçĕн хĕрĕ. – Пĕрремĕш хут куратăп çапла хаярланнине. Текех çамрăк мар вĕт-ха эсир, иртнине пăлхатма кирлех-ши?

– Аçунтан ыйт, çавă пуçласа ячĕ вĕт. Хĕвелпие тиркет. Мĕнле сăпайлă та ĕçченскер, ашшĕ-амăшĕ те сумсăр мар. Çук, вырăс хĕрне илнишĕн хĕпĕртет.

– Каларăм-çке акă кунта, – силлесе кăтартрĕ Васлей Ванькка çырăвне, – вĕсене Павел патшапа Варсонофий архиепископ пилленĕ тесе. Туя хатĕрленмелли кăна юлнă пирĕн. Ванькка хăй патне пыма ыйтать, тен, губернатор патне лекме те май килĕ тет. Мĕн сирĕнпе калаçса тăмалли пур çак, пурпĕрех ăнланас çук, çӳçĕр кăна вăрăм, ăсăр вара чĕрне хури чухлĕ те çук. Вайпутпа кайса калаçам-ха, тен, пĕрле кайăпăр, – тесе Васлей тухса утрĕ.

Амăшĕпе хĕрĕ тепĕр пӳлĕме кĕчĕç те ĕçе пикенчĕç. Пĕрре тапранса кайнă калаçăва ăçтан тытса чарăн-ха, çитменнине тата Аннан ыйтса пĕлмелли те темĕн чухлех, Ванькка çырăвне курах. Ашшĕ калани те кăмăла хуçрĕ.

– Апла эппин ман инке пире пулăшаканскер пулас çук.

Каллех ниçта тухмасăр ĕçлеме тивет. Тантăшсем ав урамра та, улăхра та выляççĕ. Эпĕ кунта укçа тесе пуç çĕклемесĕр çĕлесе ларатăп. Ванькка çукки те сисĕнет. Вăл пур чухне кăштах çăмăлрахчĕ. Хĕвелпи те килес çук.

– Ванькка тухса кайни ырăпа вĕçленес çуккине чĕрем сисрĕ çав. Ярас килместчĕ, анчах аçу итлемерĕ, курса çӳретĕр, чĕлхине якаттăр терĕ. Патша унпа калаçнă тенине вара ĕненес те килмест. Варсонофий атте вара хăй патне илсе пачăшкăна вĕрентесшĕн тет. Çавăнтах юлма тивет ĕнтĕ унăн. Çук, чĕремпе туятăп, Ванькка таврăнас çук.

Калаçу вăл таçта та илсе çитерет. Анна та ӳссе çитнĕ, килĕштерекен каччăсем пурри те сисĕнет. Ятсăр çын хĕрĕ мар вĕт, сăнран та, çи-пуçран та аптрамасть, кăштах шкула та çӳрерĕ. Амăшĕ каччă пирки сăмах хускатсан тăруках хĕрелсе кайрĕ, качча тухмастăп терĕ. «Малтан пурте çапла калаççĕ-ха, вăхăт çитсен упăшка шыраççĕ», – йăл кулса илчĕ Ваçлей арăмĕ...

Вайпут çурчĕ патне çитесси нумаях та юлманччĕ, Ваçлей хăйне чĕннине илтрĕ. Урамăн тепĕр енĕпе Шăрт Михали вĕçтерсе пырать.

– Ыр та сана тĕл пултăм, – терĕ Михаля йывăррăн сывласа çывхарса, – Хĕвелпие çухатрăмăр вĕт. Сирĕн Ванькка та килте çуккă терĕç пулас. Нимĕн калама та аптратăп, пуçа темле шухăш та пырса кĕрет. Пĕрле мар-ши вĕсем?

– Ăçтан тĕл пулччăр-ха вĕсем? Ванькка тахçанах камит кăтартса çӳрекенсемпе тухса кайнă. Халĕ ăçтине те пĕлместĕп.

– Кĕпĕрне хулинче мар-ши? Ярмăрккана кайнăччĕ. Çĕр каçма тесе пĕр килте чарăнса тăнăччĕ, полицейскисем пычĕç те Павел патша çыннисем валли парик тума çӳçне касса илетпĕр тесе Хĕвелпие вăйпах тытса кайрĕç. Çавăнтанпа таçта кайса кĕчĕ. Ярмăрккара та шырарăм. Çук, курмарăм. Килте те кĕтсе илеймерĕмĕр. Мĕн тумалла-ши, Ваçлей, кала-ха. Эсĕ ăс çитерекенччĕ. Туслăччĕ вĕт-ха вĕсем ачаранах.

«Ăçтан муртан сиксе тухрĕ çак Михаля. Ахаль те вăхăт сахал. Ку вара ыйтать те ыйтать. Мĕн калам-ши?»

– Сан хĕрӳ пирки ăçтан пĕлĕп-ха эпĕ. Ваньккана курманни те чылай. Таçта çӳрет. Каçар, ман каймалли пур-ха, – терĕ те Ваçлей пăрăнса утрĕ.

– Хыпарне илтсен пĕлтерме тăрăш-ха эсĕ, – илтĕнчĕ хыçалтан Михаля сасси.

Вайпут тесе ку тăрăхра уес пуçлăхне калаççĕ. Унтан асли çук. Пур ыйтăва та çавă татса парать. Вăл мĕн калать – çапла

пулать. Лекме вара ун патне ҫӑмӑлах мар. Акӑ халӗ те вайпут алӑкӗ умӗнче лараканни, Васлее паллаканскерех, мӗн ӗҫпе килнине ыйтрӗ, кӗпӗрнерен хаклӑ хут ҫитнине пӗлтерсен лешне кӗрсе каларӗ. Вара тин вайпут алӑкӗ уҫӑлчӗ.

– Мӗнле хут вара унта сан? – ыйтрӗ тӳрех хӗрлӗ сӑмсаллӑ мӑнтӑркка вырӑс хулӑм сасӑпа, ялан тарӑхса ҫӳрекенскер, кулма та пӗлмест пуль.

– Хусанта пурӑнакан Ваньӑран ҫыру илтӗм.

– Вара мӗскер? Вулаймастӑн-им?

– Патшапа губернатор пирки ҫырни те пур та.

– Мӗн ҫырать вара вӑл, вуласа пар-ха.

Васлей вулама тытӑнчӗ, ак чӗмере, пачах та килти пек мар, те вырӑсла ҫырнӑран, те вӑйпутран именнӗрен чӗлхе такӑнма пуҫларӗ, саспаллисем те сикеҫҫӗ.

– Кӳр-ха кунта! Тулккӑсӑр чӑваш! – терӗ уес пуҫлӑхӗ. – Ывӑлу ҫырнине те вулаймастӑн.

Куҫлӑх тӑхӑнсах вуларӗ, тутине те пӑркаласа илчӗ.

– Ав мӗнлескер иккен вӑл Иван Айдаров, телейлӗ ҫул ҫине ӳкнӗ тесен те юрать. Саламлатӑп сана, – терӗ те ҫырӑва тавӑрса пачӗ. – Малалла вара мӗскер?

– Хусана каясшӑн эпӗ, пӗрле пыраймӑр-ши? Хамшӑн мар, ывӑлшӑн ыйтатӑп. Укҫа-тенкӗ енчен пӗтӗмпех хам ҫине илӗп. Патша хушнипе ҫапла сиксе тухрӗ ӗнтӗ, – аса илтерчӗ Васлей ывӑлӗ ҫамрӑклах мӗнле шая ҫӗкленнине кӑтартас тесе.

Вайпут хӑвӑрт тавҫӑрса илчӗ, ҫакӑнта хӑйшӗн те усӑллӑ самант пуррине курчӗ. Леш чаплӑ бала ӑна та чӗннӗччӗ, анчах каяймарӗ сывлӑхӗ йӗркеллех маррине пула. Чирӗ мӗнлине ҫӗрпӳсем пӗлсе ҫитнӗ ӗнтӗ, эрехне юратарах парать. Тепӗр чухне килӗнче хупӑнса ларсах ӗҫет. Эрнене яхӑн йӑваланса выртсан тин кӑштах тӑна кӗрет. Вара пӗр вӑхӑт хушши пач ӗҫмесӗр ҫӳрет. Ҫак усал йӑлана пӑрахӑҫлатӑп тесе миҫе хутчен сӑмах паман пуль вӑл килтисем умӗнче. Чӑтӑмлӑхӗ пӗр уйӑхран ытла пымасть, каллех ҫав ҫул ҫинех ӳкет. Ыттисем те ӗҫкелеҫҫӗ-ха, анчах тӑнне ҫухатмаҫҫӗ. Кун ӳсӗрӗ вара ухмахлантарсах ярать, пуҫ мими вырӑнне те эрех тейӗн. Паян вӑл ун пек ҫын мар, урӑ пуҫпах калаҫать.

– Хатӗрлен, пӗрле кайӑпӑр, – терӗ вайпут Васлее. – Ыран ирех ҫула тухӑпӑр.

Ҫакна илтсен Айдар Васлейӗ ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ те тав туса тухрӗ. Лешӗн вара пуҫ ватмалли чӑнах та пур. Акӑ паян кӑна пӗр хыпар ҫитрӗ, Хусана кайнӑ чухне император Шупашкарта чарӑнса тӑнӑччӗ. Хула пуҫлӑхӗсем, дворянсемпе купцасем тӑрӑшнӑ ӗнтӗ, лайӑх хӑналанӑ теҫҫӗ. Хыпарӗ, паллах,

губернатор патне те çитнĕ. Ахальтен мар вăл Шупашкар вайпутне чĕнсе илсех тав тунă. Çакă та самаях шухăшлаттарать. «Тен, çак кунсенче губернатор куçне курăнмасан та юрать. Патша килнĕ вăхăтра пĕрле пулманшăн вăрçса тăкĕ те. Çук, чĕнсе илессе кĕтсе лармалла мар, каймаллах. Саманчĕ те меллĕскер. Ах, çав эрехе ăна! Кам шутласа тупнă-ши?» ятлаçса илчĕ Çĕрпӳ вайпучĕ кĕпĕрнешĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ кунсенче ӳсĕр выртнишĕн кулянса. Паянхи пек хăйне хăй вăрçни унччен пулманччĕ-ха.

* * *

Хĕвелпие лартса ярсанах секретарь кĕчĕ те губернатора хăлхаран пĕлтерчĕ. Лешĕ питĕ тĕлĕннĕ пек туса куçне вылятса илчĕ те:

– Хĕрӳ пăрахса кайрĕ сана,– терĕ Айдаров çине пăхса.– Лашапах леçсе яма ыйтрĕ тет. Халĕ ĕнтĕ чупсан та хăваласа çитеймĕн.

Ванькка алăк патнелле вăркăнчĕ, анчах çулне секретарь пӳлчĕ, кĕпĕрне пуçлăхĕ те хаяррăн кăшкăрса пăрахрĕ:

– Чарăн! Айдаров! Эсĕ мĕнлерех çын иккенне пĕлтĕм ĕнтĕ. Тепĕр темиçе çултан çак калаçăва аса илĕн-ха. Халĕ вара пĕрле утса тухса кайăр та венчете хатĕрленĕр. Улатăр е Çĕрпӳ пирки манăр. Тăвансене чĕнсе илĕр те, малтан – венчете, унтан – хăналанасси. Варсонофий атте мĕн хушать çавна тăвăр.

– Хальхи ĕç пирки вара мĕнле? – ыйтрĕ лăпкăн Айдаров парăннине пĕлтерсе.

– Тумтир çĕлекенсем сансăрах тупăнĕç. Патша та кашни çулах килсе çӳрес çук. Урăх ĕçе куçăн. Халĕ вара сывă пулăр, туя чĕнме ан манăр, – терĕ Иосиф Янович, Айдарова пĕр самантлăха кунтах юлма ыйтрĕ. Лешсем тухсанах сĕтел ещĕкĕнчен укçа илчĕ те Ваньккана сĕнчĕ. Каччă именсе тăнине курсан алранах тыттарчĕ, пулас кĕрĕвĕн укçасăр çӳремелле мар, хуняма карчăкпа хăюллăрах калаç тесе асăрхаттарчĕ.

Айдаров секретарь патне тухсан унта капăр тумлă улпут-хуçасем виççĕн ларнине асăрхарĕ. Губернатор йышăнасса кĕтнĕ ĕнтĕ вĕсем. Лешĕ вара Ваньккашăн вăхăтне шеллемерĕ. «Уншăн никам та мар вĕт-ха. Мĕне пула çавăн пек чыса тивĕç-ха эпĕ?» – тĕлĕнсе илчĕ Çĕрпӳ каччи хăй губернатор умĕнче мĕнле пысăк парăмрине ăнланса.

Катерина амăшĕ трактире кайма сĕнчĕ, анчах Ваня манăн çĕвĕççсем патне кĕрсе тухмалла терĕ. Лешсем те пĕрлех пычĕç. Кĕрсе кăна тăнăччĕ, хĕрарăм сасси илтĕнсе кайрĕ:

– Иван Васильевич, Сире кӗтсе ларатпӑр.

Маня Скворцовӑпа тепӗр хӗрача лараҫҫӗ, ҫӳҫне кӑтралатма килнӗ ӗнтӗ. Тӗкӗр умӗнче ҫӗнӗ сюртук тӑхӑннӑ арҫынпа ҫӗвӗҫӗ калаҫса тӑраҫҫӗ.

– Иван Васильевич, килсе пӑхӑр-ха, – терӗ ҫӗвӗҫӗ.

Айдаров арҫын ҫинчи сюртука унтан-кунтан турткаласа пӑхрӗ те лӑпкӑ сасӑпа темле кӑтартусем пачӗ. Вара лешсем тепӗр пӳлӗме кӗрсе кайрӗҫ. Хӗрсем Ваня патне ҫывхарчӗҫ те:

– Паллашӑр, ку ман юлташӑм Анфиса, – терӗ Маня йӑл кулса илсе. – Ҫӳҫне капӑрлаттарасшӑн вӑл.

– Маҫтӑрсем пурччӗ-ҫке.

– Ҫук, ҫук, пире урӑххи кирлӗ мар, – ҫине тӑчӗ Скворцова.

– Эсир кӑштах кӗтсе ларӑр-ха, ҫаксене вырнаҫтарам, – тесе лешсене тепӗр пӳлӗме илсе кӗчӗ.

Чӗлхе вӗҫне килнӗ сӑмаха каламасӑр епле чӑтӑн-ха? Шӑмӑсӑр япалан чӑтӑмлӑхӗ те сахал.

– Ҫук, кунта хӑвармалла мар ӑна, пӗрлех илсе каймалла. Кур-ха кусене, мӗнле йӑпӑлтатаҫҫӗ. Иван Васильевич теҫҫӗ тата.

Ванькка нумай тӑмарӗ, лешсене урӑх маҫтӑр патне лартса хӑварчӗ те тухрӗ. Вара вӗсем Беловодовасем чарӑнса тӑнӑ трактире кайрӗҫ. Ваня валли те вырӑн тупӑнчӗ, паллах, хӗрарӑмсенчен уйрӑм ӗнтӗ. Апатланма пӗрлех кайса килчӗҫ. Укҫине вара ҫине тӑрсах каччӑ тӳлерӗ. Каҫпала Ванькка патне ҫӗвӗ ҫурчӗн хуҫи пычӗ, ярасшӑн мар ӑна вӑл, хушса тӳлеме те сӑмах парать. Ҫак кунсенче чылай пысӑк тупӑш илни хавхалантарать ӗнтӗ ӑна. Ванькка хӑй шӑпи пирки тӗплӗн пӗлтерсен тин лӑпланчӗ. Ҫапах та туйчченех ӗҫлеме тархасларӗ. Айдаров килӗшрӗ. Лешӗ вара укҫа пирки пӑшӑрханмалла тумӑп тесе хӑварчӗ. Чӑнах та, кайран хӑй сӑмахне тытрӗ, аванах тӳлерӗ.

Ашшӗпе вайпут килсен Ванькка хӑйне урӑхларах тытма пуҫларӗ. Пач пӗччен мар вӗт. Вайпут пурри те питӗ вырӑнлӑ, уйрӑмах хуняма умӗнче. Вӑл та унченхи пек мар, сӑмсине каҫӑртма пӑрахрӗ, хутран-ситрен йӑпӑлтатса та илет, кашни утӑмрах хӗрне ырлассине те пӑрахӑҫларӗ.

Акӑ вӗсем паян пурте пӗрле хулари чи чаплӑ чиркӗве Варсонофий владыка патне кайрӗҫ, икӗ тӑрантаспах. Лешӗ вырӑнтах, кӑмӑлпах кӗтсе илчӗ, паян венчет тумалли кун мар тесе ыран килме хушрӗ. Унтан тухсан ҫул юпленчӗ, ҫамрӑксем – ҫӗвӗҫсем патне, ыттисем – трактир еннелле.

Беловодова сӗннипе ыранхи каҫхи апата, ӑна туй тесен те юрать ӗнтӗ, ресторанта ирттерме палӑртрӗҫ, калаҫса татӑлнӑ

хыççăн хăйсем те апатланчĕç. Айдаровпа Беловодова хĕрлĕ эрех те тутанса пăхрĕç пĕрер черкке, вайпут ĕçмерĕ. Ун пуçĕнче пачах та урăх шухăш.

– Ыран кунта губернатор килетех-ши?

– Килмесĕр вара. Килетĕп тесе сăмах пачĕ вăл мана, – мухтанарах каларĕ Беловодова. – Пирĕн çине тимлĕрех пăхма ăна патша хăй хушса хăварчĕ. Хам умрах каларĕ.

– Нивушлĕ патшапа та тĕл пулнă вара эсир? – тĕлĕнсе пăхса илчĕ вайпут.

– Акă, куратăр-и, мĕнле çывăх ларатпăр, императорпа та çавăн пекех калаçрăм, куçран пăхсах.

«Мĕнле чаплă çемьерен иккен пирĕн кин», – шутласа илчĕ Ваçлей. Çапах та Беловодова каллех хĕрне мухтама тытăнсан сăмах хушма хăюлăх çитерчĕ:

– Ман ывăл вара императорпа икĕ хутчен те калаçнă, – терĕ.

Çав самантра сĕтел патне вĕр-çĕнĕ хура сюртук тăхăннă Иван Айдаров пырса тăчĕ те Катерина патне хăпарма ыйтрĕ. Лешĕ кусене питĕ капăр туй кĕпипе кĕтсе илчĕ. Мĕн калăн ĕнтĕ, илем çумне илем хушсан темле вăй та парăнĕ, никам та чăтса тăраймĕ. Катеринăна курсан арçынсем ним шарламасăр аптраса тăчĕç. Кун пек чухне сăмах кирлех те мар, курса савăнни те тем пекех паха.

– Анне, сана çак кĕпе килĕшет-и? – ыйтрĕ Катерина.

– Калама сăмахăм та çитес çук, хĕрĕм.

– Ваня тăрăшнипе ĕнтĕ. Сюртукне те хăех çĕлерĕ.

– Маттур Ваня, пултаратăн иккен, – пĕрремĕш хут ырласа илчĕ Беловодова. Çак сăмахсем Ваçлее те килĕшрĕç ĕнтĕ. Атту пĕрмаях хĕрĕ çинчен кăна каппайланса калаçатчĕ. Кăштах пуплешсе ларсан саланчĕç. Ыран калама çук яваплă кун. Ăна лайăх канса кĕтсе илмелле.

Айдаровсем час çывăрса каяймарĕç, чылайччен калаçса выртрĕç. Ванькка Хĕвелпи пирки те сăмах хускатрĕ, анчах ашшĕ нимех те калаймарĕ, Шăрт Михали хĕрне шырани çинчен те шарламарĕ.

Кăнтăрла курни е калаçни пуçра йĕр хăвааратех çав, тĕлĕкре те аса илтерет. Акă, Ваньккапа Хĕвелпи чечеке ларнă улăхра çӳреççĕ пек. Утсан-утсан Атăл хĕрне тухрĕç, хывăнчĕç те шыва кĕрсе кайрĕç, пĕрне-пĕри сирпĕтмелле вылярĕç, ишсе те, чăмса та пăхрĕç. Акă Ванькка тарăннăн сывласа илчĕ те чăмрĕ, аялта ăна Хĕвелпи кĕтсе тăрать, анчах урăхласкер, урисем вырăнне пулă хӳри, каччăна аллинчен тытрĕ те: «Атя, хам пурăнакан çĕршыва кăтартса çӳрем», – терĕ. Юнашарах

шултра пулăсем ишсе çӳреççĕ. Хĕвелпи вĕсен чĕлхине те пĕлет иккен, темĕнле хушусем тăвать. Лешсем васкасах малалла ишсе каяççĕ. Пĕри каялла таврăнчĕ те Хĕвелпи ĕçĕпе Атăл патши кăмăлсăрри çинчен пĕлтерчĕ. Шăп çав самантра Ванькка хăлхине кĕрленĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Вăранчĕ. Урамра вăйлă çил алхасать иккен, çурт тăррисене те силлет. Ванькка сиксе тăчĕ те кантăкран пăхрĕ, хулана темле хура пĕлĕт хупласа илнĕ, пур çĕрте те тусан вĕçет, акă çавра çил темиçе хутчен тулли йĕке пек пĕтĕрĕнсе илчĕ те çĕрпе пĕлĕт хушшинчи хура юпа пулса тăчĕ...

Ирхи апат хыççăн пуçтарăнса тепĕр хут канашласа илчĕç. Мĕн кирли хатĕр, ылтăн çĕрĕсем те туяннă. Çанталăк япăххине кура карета тытас терĕç: пысăкраххине, пурте вырнаçмаллине. Вара кăнтăрла тĕлнелле чиркĕве тухса кайрĕç. Венчет тăваканĕ владыка хăй пулчĕ. Çакă вăл çамрăк мăшăршăн калама çук пысăк чыс, паллă çын ачисемех те мар вĕт-ха вĕсем. Туй пирки те çавнах каламалла, губернатор та пычĕ. Туйри чăн-чăн генерал. Анчах вăл нумай лармарĕ, малтан çамрăк мăшăра саламларĕ, юрату, телей сунчĕ, унтан çĕнĕ çемье пуçлăхне темле хут тыттарчĕ. Патша алă пусса çирĕплетнĕскер иккен. Атăлăн сылтăм енчи пĕр ял Иван Айдаров аллине куçать, текех унта вăл хуçа. Кун пек чаплă туй парни пĕр чăваш та илсе курман пуль, патшаран хăйĕнчен вĕт-ха. Ваçлей çĕрпӳсене каласа парсан лешсем ĕненес те çук. Юрать-ха, вайпут пĕрле. Ун ĕмĕчĕ те пурнăçланчĕ, губернаторпа калаçса илме май тупăнчĕ. Иосиф Янович ăна ыран хăй патне кĕрсе тухма ирĕк пачĕ.

Çĕрпӳ каччипе туслашма ĕлкĕрнĕ парикмахерсемпе çĕвĕçсем çурçĕрчченех савăнчĕç, «горько!» тесе кăшкăрнă самантсем те чылай пулчĕç. Катерина Айдарова та хăюлланса çитрĕ, упăшкине ыталаса илсех чуптума тытăнчĕ...

Туй иртсен Айдаровсен пурнăçĕ тĕппренех улшăнчĕ, вĕсем кĕпĕрнери чи чаплă чиркĕве куçрĕç, Варсонофий архиепископ Ивана чиркӳ тумĕ çĕлекенсене тĕрĕслесе тăма хушрĕ, çав хушăрах псаломщик ĕçне вĕренме сĕнчĕ, ăна пулăшма ятарлă çынна çирĕплетрĕ. Лешĕ вара чăн-чăн учитель пекех уроксем иртерме тытăнчĕ, Ивана чиркӳсене илсе çӳрерĕ, кĕлĕ йĕркипе паллаштарчĕ.

Çын вăл çапларах, мĕнле ушкăна лекет, çавăнти йăласене хăнăхса пырать, калаçу та, пурнăç йĕрки те, шухăшлав та, сисĕм-туйăм та улшăнать. Кашни кунах тĕн кĕнеки вулани Айдаровсене иккĕшне те самаях урăхлатса пычĕ, лăпкăлăх, сăпайлăх парнелерĕ, ĕненĕве вăйлатрĕ.

Пĕррехинче леш çын, дьяконра ĕçлекенскер, Ивана хула хĕрринерех вырнаçнă чиркĕве илсе кайрĕ те хăйпе пĕрле пупа пулăшнă çĕре хутшăнтарчĕ, псалом вулаттарчĕ. Тĕрĕслев ăнăçлах иртрĕ. Сасси те самай янăравлă иккен çамрăк псаломщикĕн, лайăх дьякон пуласси куçкĕретех.

Чăвашла кĕлĕ тăвас шухăш вара аса илтерсех тăчĕ. Мĕнрен пуçăнмалла-ха? Малтанлăха Айдаров псаломсене куçарса пăхрĕ. Çăмăл мар иккен, темиçе хут тӳрлетсе çырсан тин ăнланмалла пулса çитрĕç. Халĕ владыкăна кăтартма та вăхăт ĕнтĕ. Лешĕ çак ĕçе ырларĕ, чиркӳре чăваш чĕлхипе усă курма ирĕк пачĕ, паллах, чăвашсем йышлăн пурăннă çĕрте ĕнтĕ. Павел патшапа калаçнă хыççăн Варсонофий кĕпĕрнери лару-тăрăва тепĕр хут тишкерсе тухрĕ. Ĕçсем чаплах мар, пупсене ялтан хăваласа янă тĕслĕхсем те пур, унччен Христос тĕнне йышăннă çынсемех халĕ чиркĕве темшĕн çӳресшĕн мар. Питĕ пăтрашуллă тапхăр, ялĕ-ялĕпе куçса каякансем те, ислам тĕнне йышăнса тутара тухакансем те пур. Тен, çавăнпах Иоанн атте патне Сĕвери архимандрит хăй килчĕ, чăвашсем патне пĕрле тухса çӳреме сĕнчĕ, чăвашла кĕлĕ ирттернине курччăр тет. Чăнах та, владыка ирĕк панă хыççăн çамрăк пупăн кĕпĕрне хулинче лармалла мар ĕнтĕ.

Паян вăл Çĕрпӳре, ашшĕ килĕнче. Арăмĕпе пĕчĕк Илюша та пĕрле илсе килнĕ. Васлей пек телейлĕ çын хулара урăх çук та пулĕ. Сумлă хăнасене курма ялти тăванĕсем те çитнĕ. Хĕвелпи çинчен çавсем каласа пачĕç те ĕнтĕ. Темле сăмах та çӳрет тет. Пĕрисем вăл таçта инçетре тарçăра пурăнмасть-ши тесе калаçаççĕ тет, сарăмсăр вилĕм аллине лекмен-ши текенсем те пур иккен. Хĕвелпи ашшĕ вара пĕр вĕçĕмсĕр хăйне ятлать тет, куляннипе чире каяс хăрушлăх та пур тет.

Ăçта кайса кĕнĕ-ши вара вăл? Çак ыйту пуçран тухма пĕлмерĕ. Çĕрпӳ чиркĕвĕнчи благочиннăй патне çитсен тин шухăш урăх çĕрелле куçрĕ. Лешĕ Иоанн аттене питĕ ырă кăмăлпа кĕтсе илчĕ, хăйне пулăшма килнĕшĕн хĕпĕртерĕ. Малалла калаçнăçемĕн хавхалану сӳнсе пычĕ. Чăвашсем Çĕрпӳре питĕ сахалăн пурăнаççĕ иккен, хĕссе кăларса янă вĕсене кунтан. Чăвашла вулама пĕлекен псаломщик те çук.

Благочинный вара икĕ чиркĕве сĕнсе пăхрĕ, пĕри Кавалта, тепри Шăхасанта. Айдаров Кавалтан пуçлас терĕ, нумай калаçса тăмарĕ, килне васкарĕ, ашшĕне вайпут патĕнчен хыçлă урапа кӳлсе килме хушрĕ. Лешĕ, паллах, хирĕç пулас çук. Ашшĕпе ывăлĕ кĕçех çула тухрĕç, каçчен çитсе ĕлкĕресчĕ тесе лашине хăваласах пычĕç. Калаçмалли те темĕн чухлех, кĕçех туй пулмалла, Анна текех çураçнă хĕр ĕнтĕ. Васлей çине

тӑнипех пулас кӗрӳ вырӑс ҫынни. Чӑвашсем те хӑтана пынӑччӗ-ха, анчах ашшӗ килӗшмерӗ. Паллӑ ӗнтӗ, Ваҫлей шучӗпе вырӑссемпе пӗрлешни чӑваша хӳтлӗх парать. Ывӑлӗн ҫемйишӗн те савӑнать, калаҫма пӗлеймен Илюша алла тытсан та вырӑсла кӑна пакӑлтатать. Кин умӗнче арӑмӗпе хӗрӗ чӑвашла калаҫнине асӑрхасан ятлаҫса та илчӗ.

Икӗ чӑваш – ашшӗпе ывӑлӗ, пӗрин пусӗнче тӑван чӗлхепе кӗлӗ ирттерес тӗллев, шкул пирки ӗмӗтленни, теприн ӗмӗчӗ йӑха йӑлтах вырӑслатса ярасси. Чӑваш нушине пӗри те ан куртӑр. Ывӑлӗ тӗн кӗнекисене чӑвашла куҫарас ӗҫе пуҫӑннине те пит тӗлӗнсех йышӑнмарӗ.

Акӑ Кавал ялӗ. Ку тӑрӑхра чи малтан лартнӑ чиркӳсенчен пӗри. Айдаровсем ҫитнӗ ҫӗре ҫынсем касхи кӗлӗрен тухаҫҫӗ. Алтарьте дьяконпа псаломщик кӑна, пупӗ ҫук, чирлӗ иккен. Кусем вара иккӗшӗ те чӑвашсемех, Иоанн атте (Ванькка ӗнтӗ) мӗнле тӗллевпе килнине пӗлсен хаваспах йышӑнчӗҫ. Вара вӗсем ыранхи ирхи кӗлле мӗнле ирттересси пирки калаҫса татӑлчӗҫ те хатӗрленме тытӑнчӗҫ. Иоанн вӗсене хӑйӗн куҫарӑвӗсене тыттарчӗ. Шултӑра саспаллисемпе ҫырнӑран вулама та меллӗ. Хор пирки кӑна кӑлтӑк пур, ыранччен вӗренсе ӗлкӗреес ҫук. Ҫитменнине тата ҫыннисем те саланса пӗтнӗ. «Вырӑслах юрлаччӑр эппин», – терӗ псаломщик. Ҫӗр касма вара хӑнасене хӑй патне дьякон илсе кайрӗ.

Лаша тӑварса кӗнӗ хыҫҫӑн сӗтел хушшине ларнӑччӗ кӑна, чирлӗ пуп вӗҫтерсе те ҫитрӗ.

– Камсем килнӗ вара кунта? – ыйтрӗ вырӑсла кӗнӗкӗменех. Ҫӑварне уҫсанах пӳрте эрех шӑрши сарӑлчӗ.Иоанн атте хӑйпе тата ашшӗпе паллаштарчӗ, мӗнле тӗллевпе килнине те пытармарӗ.

– Чӑвашла ирттерме ирӗк памастӑп,– татса хучӗ Кавал пупӗ.

– Мӗншӗн ҫапла калатӑр вара? Христос вӗрентӗвне тӑван чӗлхепе ӑнлантарнинче ним япӑххи те ҫуккӑ вӗт-ха, – хирӗҫлеме пикенчӗ Иоанн атте, – чиркӳ еннелле туртӑнма кӑна пулӑшать.

– Ҫакӑн пирки эпӗ хам та тахҫантанпах ӗмӗтленсе пурӑнатӑп, – хутшӑнчӗ дьякон, – анчах чӑвашла куҫарнӑ кӗнекесем ҫукки пӗтерет. Ыран итлесе пӑхчӑр ӗнтӗ, савӑнччӑр.

– Кусем килеҫҫӗ те каяҫҫӗ, манӑн вара... Чӑвашла пӗлекен пуп шырама тытӑнсан? – персе ячӗ мухмӑрпа асапланакан-скер. – Ирхи кӗлле хамах ирттеретӗп. Эсир вара кунтан кӑвак ҫутлах ҫӗмӗрттерӗр.

Ним шарламасӑр ларакан Ваҫлей чӑтса тӑраймарӗ, сиксе

тăчĕ те вырăс пуп умне çывхарса ывăлĕ хутне кĕме тăрăшрĕ.

– Эсир ăна хăй ирĕкĕпе çӳрет тетĕр-им, владыка хушнипе вăл. Каçхи кĕлле мĕншĕн хăвăрирттерменни те паллă. Ĕçсе-кӳпсе выртни çинчен çӳлтисене пĕлтерсен ачашласах тăмĕç.

– Çӳретĕр кунта, владыкăна курман та пуль.

– Иоанн атте камне пĕлес килсен, калатăп. Ăна çак ĕçе туса пыма император хăй хушнă.

– Ха-ха-ха... Вăт тĕлĕнтермĕш, ăçтан тупăннă вара эсир, камит кăтартма хатĕрскерсем. Суйма пĕлесчĕ. Император ăçта ларать вăл?

– Иоанн атте, леш хута парăр-ха, – терĕ Васлей ывăлне. Лешĕ сăран сумкăран илсе ашшĕне тыттарчĕ.

– Акă, пăх мухмăр куçупа, кам алă пуснă унта? – тĕллесе кăтартрĕ Васлей.

– Ĕненес те килмест. Кун пекех-тĕк ирттерĕр эппин... Сан кăштах тупăнмасть пуль, – терĕ дьякон çине пăхса илсе. Кил хуçи кăмака хыçĕнчен эрех кĕленчи кăларчĕ те ярса пачĕ. Лешĕ чĕтрекен алăпа тытса сирĕн сывлăхшăн тесе ĕçрĕ те тухса утрĕ.

Паллă ĕнтĕ, чăваш нумай çывăрмасть, çуллахи вăхăтра пушшех. Ирех тăрать те ĕçе васкать. Тен, çавăнпах чиркĕве çӳрекенсен шучĕ хĕллехи пек мар, чылай сахалрах. Паян вара апла мар, чиркӳ тулли халăх. Ырă хыпар хăвăрт сарăлнă иккен. Чан сасси те савăнăçлăрах янăрать пек.

Акă, псаломщик тухрĕ те чăвашла вулама тытăнчĕ, аллă çула яхăн ларакан чиркӳре пĕрремĕш хут. Çынсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Дьяконпа пуп та чăвашла калаçнине илтсен вара чĕрене услам çупа сĕрнĕ пекех туйăнчĕ, чылайăшĕ сăнран та улшăнчĕç. Çакă вăл куçранах паллă. Вилнисене асăннă хыççăн чылайăшĕ Иоанн атте патне çывхарса çĕнĕ тĕн çинчен ыйтса пĕлме тăрăшрĕç, пил илчĕç, тав сăмахĕ каларĕç.

Иоанн атте алтаре кĕнĕ çĕре леш пуп çитсе те тăнă, каçхи кĕлле хăех ирттерессине пĕлтерчĕ, урăлса çитнĕ иккен. Сывпуллашнă хыççăн Айдаровсем Атăл хĕрнелле çул тытрĕç. Патша парнеленĕ пĕчĕкçĕ имени кунтан инçех те маррине пĕлсен кĕрсе тухас шухăш çуралчĕ. Пĕр вăтăр çухрăма яхăн каймалла терĕ псаломщик, çул кăтартма тесе кăштах ларса та пычĕ, чăвашла куçарнă псаломсене пурне те çырса илме ĕлкĕрейменшĕн пăшăрханса калаçрĕ.

Темиçе ял витĕр те тухма тиврĕ, пĕринче тутарсем, тепринче чăвашсем: юнашарах пурăнаççĕ. Вырăс ялĕ те тĕл пулчĕ, таçтан куçса килнĕскерсем ĕнтĕ.

– Кӗҫех ҫитетпӗр, ав, умра ҫӳллӗ йӑмрасем курӑнаҫҫӗ,– терӗ Ванькка. – Лашана кӑштах кантарса илер.

Урапа ҫинчен анса утса ҫӳрерӗҫ, тырӑ анисем мӗнлереххине пӑхрӗҫ. Текех хуҫасем ӗнтӗ.

– Кунталла ҫумӑр аванах ҫунӑ курӑнать, калчасем аптрамаҫҫӗ, – терӗ Ваҫлей. – Атӑл та туртать пулас.

Лаша ҫул хӗрринчи курӑка кӑмӑртаттарсах ҫинине кӑштах пӑхса тӑрсан малаллаваскарӗҫ, ҫитсенех староста патне кӗчӗҫ. Бурлакра ҫӳресе ватӑлнӑ чӑваш пуҫ тайрӗ те хуҫана шурӑ пӳрте кӗме сӗнчӗ. Ваҫлей паҫӑрах асӑрхарӗ, Ҫӗрпӳ тӑрӑхӗпе танлаштарсан кунта хура пӳртсем пӑч-пач кӑна курӑнаҫҫӗ. Ҫипуҫран та капӑртарах. Пурнӑҫ йӗрки паллӑ ӗнтӗ, ҫулла пӳрте питех кӗмеҫҫӗ, тултах вырткаласа тӑраҫҫӗ, апатне те лаҫра пӗҫереҫҫӗ. Хӑна килсен хӑвӑртрах сӗтел хушшине лартмалла, чи тутлӑ ҫимӗҫпе сӑйламалла.

Староста хуҫана кунти лару-тӑрупа паллаштарчӗ, пахчаҫимӗҫ, тырӑ лайӑх ҫитӗнессине шантарчӗ. Пӗлтӗр ав типӗ ҫанталӑка пула ҫӑкӑртан та, укҫаран та япӑхчӗ. Миҫе ҫын вилнине, миҫе ҫамрӑка рекрута илсе кайнине каласан ял пуҫлӑхӗ тата тепӗр хыпар пӗлтерчӗ. Юнашар ялти темиҫе ҫемье ислам тӗнне йышӑннӑ иккен. Тутарсем кунта та килсе ҫӳреҫҫӗ, хӑйсен Аллахне питӗ ырласа калаҫаҫҫӗ.

Тӗрӗссипе каласан Иван Васильевичӑн чӑн-чӑн хуҫа туйӑмӗ аталанса та ҫитеймен-ха. Пӗлтӗр ав хресченсене хӗрхенсе оброкне те ячӗшӗн кӑна илчӗ. Ҫак кунсенче вара хуҫа хӑй пурнӑҫӗ ҫине урӑхларах пӑхма пуҫларӗ. Тен, ялсем тӑрӑх ҫӳремелле те мар, ҫакӑнтах лӑпланса пурӑнмалла.

– Атте, кала-ха, енчен те эпӗ ҫакӑнта чиркӳ лартса, килҫурт ҫавӑрса пурӑнма тытӑнсан, эсӗ мӗн калӑттӑн?

– Мӗнле-ха капла, Хусанта та мар, Ҫӗрпӳре те мар, ҫакӑ инҫетри ялта-и?

– Хусанта пупсем мансӑрах нумай. Ҫак таврари чӑвашсене ҫӑлса хӑварас килет ман. Тутара тухса пыраҫҫӗ вӗт. Чи малтан чиркӳ лартмалла.

– Кун пирки хам та шутланӑччӗ, – хутшӑнчӗ калаҫӑва староста, – анчах калама хӑяймарӑм. Ку тӑрӑхра пӗр чиркӳ те ҫук. Хӑшӗ-пӗрисем вунӑ ҫухрӑмри вырӑс ялне ҫӳреҫҫӗ. Анчах нумайӑн мар.

– Атте, куртӑн пуль, Ҫӗрпӳре те хам шутланине тӑвайманӑм, Кавалта та тавлашуллӑ сиксе тухрӗ. Кала-ха, чиркӳ лартсан миҫе ялтан ҫӳрӗҫ-ши? – пӑхса илчӗ Иван Васильевич староста ҫине.

– Сахалтан та пилӗк ялтан.

– Çук, тутарланма памалла мар вĕсене. Кăçалах чиркӳ лартма тытăнмалла.

– Нимĕн калама та аптратăп, ывăлăм. Текех каччă мар ĕнтĕ, ача ашшĕ те пултăн. Хăвăнне хăв пĕл. Кинпе канашласа пăхни те ытлашши мар. Манран чару çук. Май килнĕ таран пулăшма та хатĕр. Вырăнĕ те япăх мар, хура çĕр, Атăл хĕрри, вăрман пирки вара пĕлместĕп.

– Вăрман та пур, – терĕ староста. – Кăçал пулă аван кĕрет, чылай тăварларăмăр, нӳхрепре каткапах. Аш-какайран та аптрамалла мар пек туйăнать, курăк та вăйлă ӳсет.

Староста хăйĕнчен чылай çамрăк арăмне мунча хутма хушса хăварнă хыççăн виççĕшĕ те урама тухрĕç. Калаçу чиркĕве хăш вырăна лартасси пирки пуçланчĕ.

– Çӳллĕрех вырăна лартасчĕ, пур енчен те курăнса тă-тăр, – терĕ Ваçлей йĕри-тавралла пăхса илсе. – Çавăнталла кайса пăхмалла мар-и? – кăтартрĕ Атăл еннелле.

– Чăнах та, унтан пăхсан юнашар ялсем те курăнаççĕ, – пĕр шухăшлă пулчĕ Ваçлейпе староста.

Çурхи ĕççене вĕçленĕ хыççăнхи лăпкă вăхăтран-ши, чылайăшĕ ялтах, хапха умĕнче калаçса тăракансем те, хирĕç иртсе каякансем те тĕл пулаççĕ, арçынсем калпакне хывса хул хушшине хĕстереççĕ те пуç тайса сывлăх сунаççĕ.

Чăнах та, питĕ меллĕ вырăн тупăнчĕ. Çакăнтан чан сасси те таçта çитиех сарăлассăн туйăнать. Çапла калаçса тăнă хыççăн Ваçлей сĕннипе Атăл хĕрне çитсе килес терĕç. Чун туртнипех ĕнтĕ. Кашни курмассерен куç илмесĕр пăхса тăрас килет. Çавал мар вĕт, сарлака та вăйлă Атăл-атте. Питĕ мăнаçлăн юхса выртать, Аçтăрхана çитичченех.

Чăнкă çыран хĕрне çитсе тăнăччĕ кăна, пĕр çамрăк арçын, каччă тесен те юрать пуль, кĕреçепе чакалашни курăнса кайрĕ.

– Мĕн тăвать вара вăл? – ыйтрĕ Ванькка.

– Ятсăр вилĕ тăприне тӳрлетет пулмалла. Путса вилнĕ хĕрачана пытарнă теççĕ, – пĕлтерчĕ староста.

Çакна илтсен темле сисĕм Ванькка чĕрине чĕпĕтсе илчĕ.

– Атьăр-ха кайса пăхар, – сĕнчĕ хуçа.

Юнашар ял çынни иккен, пулăçă. Вăл каласа панинчен çакă паллă пулчĕ. Чăнах та, икĕ çул каялла вĕсем пулă тытма кайсан çыран хĕрринче хĕр виллине асăрханă, çывăхри ялсенчен те килсе пăхнă иккен, анчах пĕри те палласа илеймен. «Ку тăрăхри ялсенчен мар вăл», – терĕ çамрăк пулăçă.

– Мĕншĕн çапла çирĕплетсех калатăн вара? – ыйтрĕ Ванькка.

– Кĕпи те, тĕрри те кунти пек мар. Çĕрпӳ енчисен тумĕ пек терĕç ватăрах хĕрарăмсем, – пĕлтерчĕ лешĕ.

– Хĕр тетĕн апла, – хăйпе калаçнă пекех сас пачĕ каллех Ванькка.

– Хĕрачах ĕнтĕ, çӳçне уйăрманччĕ унне.

– Мĕнле майпа кунта çити юхса килме пултарнă-ха вăл? – ыйтрĕ Васлей.

– Ман шутпа вăл Атăл урлă каçнă чухне сулăран ӳкнĕ пуль тетĕп. Ăнсăртран тупăннă вилĕм ĕнтĕ. Сулă тайăлсан карлăкĕнчен тытма ĕлкĕреймен ĕнтĕ вăл. Шел, сăнран та питĕ хитрескер пулнă курăнать, хуп-хура та хулăн çӳçлĕ, яштак пӳллĕ. Кĕçех çимĕк, тăприне кăштах тӳрлетес терĕм. Хам пытарнă çын вĕт.

«Хĕвелпи, çавă выртать, çавă,– шутласа илчĕ Ванькка.– Вăхăчĕ те, тумĕ те, сăнĕ те пĕр пек килет. Хĕвелпин вил тăпри вăл». Карланкăна темĕскер капланса килчĕ, питçăмарти те пĕçерсе кайрĕ. Ывăлĕ сăнран улшăннине Васлей те асăрхарĕ ĕнтĕ. Тен, хăй те тавçăрса илчĕ çакăнта кам выртнине, анчах шарламарĕ.

– Мĕн те пулин лартмалла мар-ши тетĕп, те юпа, те хĕрес, шалт аптратăп, – пĕлтерчĕ хăй шухăшне ырă чунлă пулăçă.

Иван Васильевич паянхи ĕçшĕн ăна тав турĕ, хăйпе паллаштарчĕ, хĕресне каярах пĕрле лартăпăр терĕ.

Вĕри мунча хыççăн Васлей часах çывăрса кайрĕ. Ывăлĕшĕн вара çак каç чи канăçсăрри тесен те юрать. Малтан Атăл енчен хумăн-хумăн килекен вăйă юрри хăлхаран тухма пĕлмерĕ. Каярах пуçа тĕрлĕрен шухăш хĕссе лартрĕ.

Халĕ ĕнтĕ уншăн пурнăç йăвине çакăнтах çавăрасси пирки нимле иккĕленӳ те çук. Хĕвелпи те кунтах. Владыкăран пил илсе чиркӳ лартасчĕ те çӳлти патшалăхра пултăр тесе Хĕвелпишĕн те кĕл тăвасчĕ...

Каярах вара Иоанн аттешĕн ялан асра тытмалли тата тепĕр ят тупăнчĕ. Павел патшана ун тăшманĕсем хăй пӳлĕмĕнчех пăвса вĕлерни çинчен пĕлсен çав тери кулянчĕ. Иккĕмĕш ашшĕ вырăннех шутланă вĕт-ха вăл ăна. Халĕ вара асăннă чухне кашнинчех куç умне леш чаплă ярмăркка тухса тăрать, патша ăна Цивильскри цирюльник тесе чĕнни тата япăх тумланнă арçын императора: «Пурнăçу сан ырăпа вĕçленес çук», – тесе кăшкăрни çак самантри пекех илтĕне-илтĕне каять, ниепле те хăлхаран тухма пĕлмест.

*1998–2000*